С(Ч98)
А 23
901-к.

ЛЕОНИД АГАКОВ





# ХАСТАРЛĂХ









Национальная библиотека ЧР
k-000901
901-к

ЛЕОНИД АГАКОВ

ВФ
С(Чув)
К
А23

# ХАСТАРЛĂХ



ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1958

ПРОВЕРЕНО
20 ю
03 НОЯ 2017

901-К

Республиканская
библиотека
им. М. Горького
Чувашской АССР



# Шупашкарта, Атăл хĕрринче

Эпир, Шупашкарта пурăнакансем, пурте питĕ лайăх астăватпăр: сакăр-тăхăр çул каялла пирĕн столицăн хĕвелтухăç енче, хуларан Сĕнтĕрвăрринелле тухса кайнă çĕрте, пуш-пушă та çап-çара хир сарăлса выртатчĕ. Унта пĕртен-пĕр кивĕ çил арманĕ хăлтăртатса ларатчĕ те пăч-пач уйрăм çынсем пырса лартнă ансăр кăна çĕрулми анисем курăнкалатчĕç. Хĕлле, пĕтĕм тавралăха шурă юр шăлса лартсан, нимĕн те çукчĕ вара, каç-каç хула хĕрринчи çынсен пахчисене улмуççисем кăшлама çӳрекен мулкачсен йĕрĕсем çеç палăратчĕç.

Çакăнти сăрт çине хăпарса хĕвеланăç еннелле пăхсан, питĕ те илемлĕ сăнсем курăнаççĕ. Юнашарах, чăнкă сăрт айĕнче, çут тĕкĕр пек анлă Атăл сарăлса выртать, йăлăм енче — вĕçĕ-хĕррисĕр ешĕл вăрман, вăл таçти инçетри тĕтреллĕ горизонт таранах тăсăлать; Атăл тăрăх мăнаçлă пăрахутсем çӳреççĕ, пĕчĕк катерсем калле-малле ыткăнаççĕ, ту енчен çуршар километр тăршшĕ сулăсем шăппăн юхса анаççĕ, — вĕсем коммунизмăн аслă стройкисене, Куйбышева, Сталинграда çитмелле.

Çакăнтанах тăван хуламăр Шупашкар та йăлтах курăнать...

Илемлĕ вăл, пирĕн юратнă столица, çамраклансах пыракан вăта Шупашкар! Аçталла çаврăнса ан пăх — пур çĕрте те шап-шурă та нумай хутла çуртсем, юлашки çулсенче халăх вăйĕпе туса лартнă çӳлĕ керменсем курăнаççĕ. Пур енче те тĕреклĕ башеннăй крансем çӳлелле кармашаççĕ,— вĕсем тăнă çĕрте татах та çĕнĕ çуртсем тăваççĕ ĕнтĕ; заводсемпе фабрикăсен трубисем кăвак пĕлĕте хура тĕтĕмпе тĕтĕреççĕ; урамсем тăрăх, Мускаври пекех, илемлĕ сарă-хĕрлĕ мăн автобуссем, тĕрлĕ йышши çап-çутă автомобильсем чупаççĕ, хула варринчи ешĕл парксенче ĕçрен пушаннă халăх канать.

Çаксем çине пăхса тăрсан çав тери чун савăнать, пĕтĕм кăмăл çĕкленет!

Епле савăнас мар-ха? Хуламăр кашни çул мар, кашни кун ӳссе, хитреленсе пырать вĕт-ха. Хуть те хăш урампа утса тухсан та курăнать вăл ӳсĕм. Акă çакăнта та, хула хĕрринчи пушă вырăнта, темиçе çул хушшинчех чаплăран та чаплă пир-авăр комбиначĕ ӳссе ларчĕ. Тĕрĕссипе, Шупашкар çумĕнче тепĕр хула пулса тăчĕ, çĕнĕ пысăк хула!

...1948 çулхи çуркунне, хĕвел ăшшипе çĕр-шыв типме пуçласанах, çак вырăна строительсен малтанхи ушкăнĕ пырса тухнă та, пир-авăр комбиначĕн никĕсне хывма тытăннă. Пĕрисем çĕр чавнă— комбинатăн пулас корпусĕсене купалама тарăн котловансем алтнă, теприсем çав вăхăтрах рабочисем валли общежитисем, стройка валли тĕрлĕ

мастерскойсем, складсем, вахăтлăх столовăй тата ытгисене тума пуçланă.

Питĕ меллĕ те лайăх вырăн пулнă çакăнга пысăк комбинат тума: чугун çул та çывăхра, Атăл та юнашарах. Икĕ тĕрлĕ транспорт пурри комбината тунă вăхăтра строительство материалĕсем турттарма, кайран, комбината ĕçе ярсан, чĕртавар илсе пыма, хатĕр продукцие кирлĕ çĕре хĕлĕнçăвĕн пĕр чăрмавсăр ăсатса тăма май панă.

Малтанхи вăхăтра кунта строительсен йышĕ пысăк пулман, пурĕ те 200—300 çын çеç ĕçленĕ, анчах рабочисен хисепĕ тăтăшах ӳссе пынă. Республикăри хуласемпе ялсенчен кашни кун тенĕ пекех вуншар та çĕршер çын — пуринчен ытла çамрăксем пырса тăнă. Рабочисем кунта чăнах та нумай кирлĕ пулнă çав: Шупашкарта тума тытăннă комбинат Совет Союзĕнчи пир-авăр промышленноçĕнчи предприятисем хушшинче чи пысăккисенчен пĕри пулмалла пулнă вĕт, чи хăватлисенчен пĕри!

Астуса юл-ха эсĕ, вулакан юлташăм, çак цифрăсене: комбината туса çитерме пурĕ вăтăр виçĕ миллион кирпĕч, çирĕм пилĕк пин тонна цемент, вунпĕр пин тонна алебастр, çĕр вăтăр пин кубометр хăйăр, утмăл пин кубометр чул кирлĕ пулнă. Комбинат мĕн тери пысăк пулассине проектри çак цифрăсем те питĕ лайăх кăтартнă: унăн пĕрремĕш черетри çип арлакан фабрикинче пĕр харăсах 113.642 йĕке, пир тĕртекен фабрикăра 2.376 станок ĕçлемелле пулнă. Çулталăкра комбинат вуникĕ

миллион çынна тăхăштартмалăх пусма-тавар туса кăларакан пулмалла!

Çакăн пек чаплă плансене хăвăртрах пурнăçа кĕртессипе хавхаланса ĕçленĕ те ĕнтĕ строительсем.

Малтанхи çулталăк — пысăк строительствăна пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитмелли çул пулнă. 1949 çулхи çуркунне вара производство корпусĕсене, чăн малтан çип арлакан фабрикăна тума тытăннă. Малтанхи çулĕнче нумай йывăр ĕçсене алă вăйĕпе тунă пулсан, халĕ ĕнтĕ стройкăра чи çĕнĕ йышши машинăсем кĕрлеме тытăннă, — çĕре хăватлă экскаваторсем чавнă, пур йывăр япаласене те çӳлĕ крансемпе çĕкленĕ.

Иртен пуçласа каçчен, çулталăкри хуть те хăш вăхăтра та, кирек епле çанталăкра та ĕç чарăнман кунта. Çип арлакан фабрикăпа пир тĕртекен фабрикăн корпусĕсене тунă вăхăтрах комбинатăн пурăнмалли çурчĕсем ӳссе пынă. Хулари Калинин урамĕн вĕçĕнче икĕ хутлă, илемлĕ, пĕр пек тăп-тăп çуртсен кварталĕ ӳссе ларнă, унтан кăшт аякkarахра — виç-тăват хутлă, нумай хваттерлĕ çуртсем, комбинатри рабочисемпе служащисен ачисем валли тата каçхине, ĕç хыççăн вĕренме кăмăл тăвакан рабочисем валли тăватă хутлă вăтам шкул, пир-авăр техникумĕ, магазинсем, ача сачĕсемпе яслисем тунă. Шупашкар хĕрринче вара халиччен пулман çĕнĕ урамсем пулса тăнă: Загороднăй урам, Текстильщиксен урамĕ, Комбинат урамĕ..

Васкасах чугун çул юппи туса, хастарлă строи-

тельсем пулас комбината Шупашкар станцийĕпе, тĕрĕсрех каласан — пĕтĕм Совет Союзĕпе çыхăнтарнă. Çав çул тăрăх, комбинатăн тĕп корпусĕсене купаласа çитернĕ вăхăталла, машинăсемпе станоксем тата ытти оборудовани вĕçĕ-хĕррисĕр килсе тăма пуçланă. Чăн та ĕнтĕ, Шупашкарти пир-авăр комбинатне тунă çĕре пĕтĕм çĕршыв хутшăннă, темелле. Чи кăткăс та паха машинăсене кунта Мускавран, Ленинградран, Ивановăран, Пензăран, Ташкентран, Шуяран тата ытти нумай хуласенчен ярса панă. Çакă вăл чăваш халăхне аслă вырăс халăхĕ тата ытти тăванла халăхсем ыра кăмăлпа пулăшни пулнă.

...1951 çулта, кĕр енне, комбинатăн çип арлакан фабрикине машинăсем вырнаçтарма тытăннă. Йывăр условисенче пулса пынă ку ĕç, мĕншĕн тесен фабрика корпусне ытла пур енчен те туса çитереймен пулнă-ха. Çапах та цехсенче машинăсем кунсерен йышланнă. Вырнаçтарса лартнă оборудование çийĕнчех вăраххăн та пулин ĕçлеттерме тытăннă. Вара 1951 çулăн юлашки кунĕсенче машинăсем çинчи йĕкесене çип чĕркенме пуçланă. Нумай пулман вăл çип, ун чухне ăна тоннăсемпе мар, килограмсемпе çеç шутланă-ха, анчах та ку пурĕпĕр пысăк çитĕнӳ пулнă: фабрика продукци туса кăларма тытăннă!

Çавăнтанпа кунти машинăсем чарăнман, йĕкесем вĕçĕмсĕр çаврăннă, вĕсем çине çип чĕркеннĕ, унăн пахалăхĕ ӳснĕ, пурăна-киле ăна ĕнтĕ килограмсемпе мар, нумай тоннăсемпе виçнĕ.

Пир тӗртекен фабрикӑри оборудование 1953 ҫулхи август уйӑхӗнче вырнаҫтарма тытӑннӑ та, часах унти станоксем ҫинчен пирвайхи катан пир тӑрӑхӗсем тухнӑ. Тепӗр ҫулталӑкран проектпа палӑртнӑ пӗтӗм оборудование вырнаҫтарса ҫитерсе ӗҫлеттерме пуҫланӑ.

Пӗтӗмӗшпе илсен, арлакан фабрикӑпа тӗртекен фабрикӑна 50 миллион тенкӗ тӑракан машинӑсем вырнаҫтарса лартнӑ. Ҫав машинӑсем халӗ пурте ӗҫлеҫҫӗ, вӗсем ҫӗршыв, халӑх валли продукци туса кӑлараҫҫӗ.

Анчах пуриншӗн те паллӑ ӗнтӗ — нимӗнле машина та хӑй тӗллӗн ӗҫлеме пултараймасть, ӑна пурпӗрех ҫын ӗҫлеттерет. Ҫитменнине, машинӑпа ӗҫлеме ӑна лайӑх пӗлекен, вӗреннӗ ҫынсем кирлӗ, унсӑрӑн нимӗн те тухмасть.

Комбинат валли ҫавӑн пек кадрсем пулман. Ҫавӑнпа та, комбината ӗҫе ярас вӑхӑт ҫывхарса пынӑ май, ӑна валли ӑста рабочисем хатӗрлес ыйту ҫивӗччӗн тухса тӑнӑ. Чӑнах та, малтанхи кивӗ фабрикӑра кадрсем пулнӑ ӗнтӗ, вӗсене комбината куҫарса пыма май килнӗ, анчах унта ӗҫлекенсем питӗ сахал, пачах та ҫителӗксӗр пулнӑ.

Комбината ертсе пыракансем ҫапла шут тунӑ:

— Пирӗн стройкӑра ҫамрӑк хӗрсем нумай. Вӗсем пурте тенӗ пекех ҫичӗ класс пӗтернӗ. Вӗсенчен питӗ лайӑх работницӑсем тума пулать, вӗрентмелле кӑна. Вӗрентекенӗсем — кивӗ фабрикӑри работницӑсем пулаҫҫӗ...

Ҫавӑн пек тунӑ та вара. Стройкӑри хӗрсем хуш-

шинче вĕренес текенсем ытлашшипех тупăннă. Гĕрĕссипе каласан, вĕсенчен нумайăшĕ кунта çав смĕтпе пынă: малтан стройкăра ĕçлетпĕр, унтан цеха куçатпăр, квалификациллĕ текстильщицăсем пулатпăр...

Çамрăксене ваттисем çумне çирĕплетсе вĕрентме тытăннă. Кунсăр пуçне производствăлла-техникăлла курссем йĕркеленĕ, часах ФЗУ шкулĕ уçнă. Кăшт тăхтарахпа комбинат çумĕнчех пир-авăр техникумĕ организацилесе техник-технологсем, мастерсемпе мастер помощникĕсем, урăхла каласан — производство валли ăста командирсем хатĕрлеме тытăннă. Вĕренсе тухнă май вĕсем комбинат цехĕсене ĕçлеме куçнă.

...Пĕр чарăнмасăр ĕçлет хальхи вăхăтра комбинат. Уйăхран уйăха, кварталтан квартала, çултан-çул продукци туса кăлармалли плансене ирттерсе тултарса пырать вăл, çавăн пирки яланах çĕршыври малта пыракан пир-авăр предприятийĕсен шутĕнче хисепленет, час та часах ăна СССР пир-авăр промышленность министерстви пысăк премисем парать, лайăх ĕçленине палăртать.

Комбинат халĕ кашни талăкрах 30 тоннăна яхăн çип арласа 150 пин метр пир-авăр тĕртсе кăларать. Питĕ нумай ку! Çак продукци Совет Союзĕнчи нумай фабрикăсене кайса тăрать. Арласа кăларнă çипрен комбинат хăй те тĕрлĕ йышши пусма-таварсем тĕртет, çав çиппех Çĕрпӳри тата Сĕнтĕрти пир тĕртекен фабрикăсем ĕçлеççĕ, кунсăр пуçне пирĕн комбинат çиппи Ленинградри,

Мускаври, Горькинчи, Киеври, Одессӑри, Николаеври, Черновицыри, Кременчугри, Харьковри, Кировоградри, Феодосири тата ытти чылай хуласенчи фабрикӑсене ӑсанать.

Комбинат ӗҫлет, ун ҫинчен ырӑ ят саралать, унӑн малашлӑхӗ пысӑк, вӑл ӳсӗм ҫулӗ ҫинче тӑрать, ӳсӗм ҫулӗпе пырать. Комбинат коллективӗ хальхи машинӑсемпе, оборудованипе лайӑхрах, туллинрех усӑ курассишӗн, производствӑна тата ытларах механизацилесе автоматизацилесшӗн, ҫапла майпа ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырассишӗн кӗрешет. Коллектив ӗмӗчӗ ҫакӑн пек: механизмсемпе пӗлсе усӑ курса, улттӑмӗш пилӗкҫуллӑх вӗҫӗнче—1960 ҫулта — ҫип хальхинчен 58.476 тонна ытларах арласа кӑлармалла, пусма-тавар ҫулталӑкра хальхинчен 5 миллион та 100 пин метр ытларах тӗртмелле.

Ҫав вӑхӑтрах комбинатра ҫӗнӗ строительство анлӑн пулса пымалла. Улттӑмӗш пилӗкҫуллӑхра кунта гобеленсем, покрывалӑсем, скатертьсем тата ытти ҫавӑн пек япаласем валли уйрӑм йышши ҫипсем арлакан тата вӗсене тӗртекен фабрикӑсем тума палӑртнӑ. Вӗсем Совет Союзӗнчи ҫавӑн йышши чи пысӑк предприятисенчен пӗрисем пулмалла, 1960 ҫулта продукци пама тытӑнмалла.

Хальхи вӑхӑтра комбинатӑн пӗрремӗш черетне туса ҫитереҫҫӗ ӗнтӗ. Ун хыҫҫӑн иккӗмӗш черетри строительство пуҫланать: чи ҫӳхе пусма-таварсем валли ҫип арлакан тата ҫӗвӗ ҫӗлемелли ҫипсемпе мулинэ (тӗрӗ ҫиппи) кӑларакан фабрикӑсем тӑ-

ваççĕ. Çав хушăрах комбинат территорийĕнче пуранмалли çуртсем, тĕрлĕрен культурăпа йăла учрежденийĕсем нумай тума палăртнă: культура дворецĕ, пысăк больница, стадион, ача яслисемпе садсем... Ун чухне вара кунта чăнах та çĕнĕ пысăк хула — пир-авăр тĕртекенсен социализмла хули пулса тăрать.

Комбинат ӳсет, хăватлансах пырать, унпа пĕрле çынсем те ӳсеççĕ, ăсталансах пыраççĕ.

Темиçе пин çын ĕçлет хальхи вăхăтра комбинатан сарлака та аслă, çӳлĕ те çутă цехĕсенче. Пуринчен ытларах — çамрăксем кунта. Çип арлакансем, кумакансем, пусма-тавар тĕртекенсем, бригадирсем, мастер помощникĕсемпе ыттисем хушшинче çак комбинатăн корпусĕсене хăйсен аллисемпе купалана, кăткăс машинăсене хăйсем илсе кĕртсе лартнă çынсем нумай. Темиçе çул каялла вĕсем кунта нимĕнле специальноçсăр килсе кĕнĕ, строй-кара тĕрлĕ ĕçре ĕçленĕ — çĕр те чавнă, кирпĕч те йăтнă, хăйăр та пушатнă, бетон та çăрнă, комбината туса çитерсен унăн цехĕсенче, станоксемпе ĕçлеме пуçлас ĕмĕтпе пуранна, кайран вĕсен ĕмĕчĕсем çитнĕ — вĕсем квалификациллĕ рабочисемпе работницăсем пулса тăнă. Халĕ вĕсем питĕ паха продукци туса кăлараççĕ, нормăсене ирттерсе тултараççĕ, производствăна пĕтĕм чĕререн юратса, ĕçе çăмăллатса лайăхлатмалли çĕнĕ меслетсем сĕнеççĕ. Комбинат вĕсемшĕн иккĕмĕш тăван кил пулса тăнă.

Хăшĕсем тата, строитель ĕçне юратса, халĕ те

стройкăрах ĕçлеççĕ — вĕсем ĕнтĕ ăста каменщиксем, штукатурсем, бетонщиксем, арматурщиксем пулнă. Пĕрисем цехсенче ĕçленĕ вăхăтра вĕсем комбинатăн çĕнĕ корпусĕсене купаласа ĕçе яраççĕ, рабочисем валли паха хваттерсем, ытти кирлĕ çуртсем тăваççĕ. Пĕр кунлăха та чарăнмасть вĕсен пархатарлă ĕçĕ...

Нумай, питĕ нумай кунта пултаруллă та хастарлă çынсем! Кашни цехрах, кашни сменăрах тĕл пулатăн вĕсене, стройкăра та куратăн. Пурне асăнса та çитерес çук. Эпир кунта вĕсенчен хăшĕпĕрисем çинчен кăна каласа парăпăр.



*МИХАИЛ СТЕПАНОВ, СТРОИТЕЛЬ*

Çуркунне. Уйсенче юр ирĕлсе пĕтнĕ ĕнтĕ, сăрт-ларах вырăнсенче çĕр типме те пуçланă, анчах çырма-çатрасенче, шырлансенче унта та кунта

шурă юр лаптăкĕсем курăнаççĕ-ха: Çанталăк ăшă, уяр, сенкер тӳпе çуса тасатнă пек таса, ниçта пĕр пĕлĕт татки те çук; кун пекех пулсан тепрер эрнерен çуракине те тухмалла пулĕ...

Вăхăт — шăп кăнтăрла. Сарлака уй урлă тăсăлса выртакан лаша çулĕ хĕррипе, такăрлатнă сукмак тăрăх, умлăн-хыçлăн икĕ çын пыраççĕ. Малта пĕр вуникĕ çулхи арçын ача утать; вăл саплăк çине саплăк хунă кĕске пиншак, хура сурăх тирĕнчен çĕленĕ çĕлĕк тăхăннă, уринче — кивĕ çăпата, çурăмĕ хыçне кушил çакнă. Ун хыççăн, сылтăм аллипе туя çине тайăнса, пусмассерен уксакласа, сайрарах сухаллă, шуранка сăнлă, пĕр хĕрĕхелле çитнĕ арçын пырать. Ку ĕнтĕ арçын ачан ашшĕ пулас. Вăл та çурăмĕ хыçне михĕ кутамккаласа çакса янă.

Инçетрен килеççĕ пулмалла вĕсем, питĕ ывăннă курăнать, урисенчен чул çыхса янă пекех аранаран ярса пусаççĕ...

— Шыв ĕçес килет манăн, пĕтĕм çăвар маччи типсе ларчĕ,— кушăрканă тутисене çуласа илет ача, ашшĕ çине салхуллăн пăхса.

— Тӳс ĕнтĕ пĕртак, Мишша, часах акă яла çитетпĕр. Унта ларса канăпăр, çырткалăпăр, шыв та тăраниччenex ĕçĕпĕр...

Татах ним чĕнмесĕр утаççĕ ашшĕпе ывăлĕ. Çухрăм, иккĕ, виççĕ. Тепрер сехетрен тин вĕсем пĕр яла пырса кĕреççĕ те, ик-виç кил тĕлĕпе иртсенех, япалисене хӳме çумĕнче выртакан пĕрене çине хывса хураççĕ. Ачи часрах килхушшине кĕр-

се шыв ыйтса ёҫет, — пӗр курка, иккӗ, унтан каллех урама тухса ашшӗпе юнашар ларать те, вӑл хуҫса панӑ тип ҫӑкӑра кӑшлама тытӑнать. Хырӑм выҫсан тип ҫӑкӑр та питӗ тутлӑ-ҫке вӑл!

Урамӑн тепӗр енче ачасем мечӗкле выляҫҫӗ. Пӗри мечӗке ывӑтса парать, тепри калак пек тунӑ хӑмапа ҫапса ярать, виҫҫӗмӗшӗ, ӑна ик аллипе тытса, тараканнисене перет... Шавлаҫҫӗ ачасем, кулаҫҫӗ, тавлашни те пулать. Мишша вӗсем ҫине сав тери ӑмсанса пӑхса ларать. Ывӑннӑ пулин те, вал халех сиксе пырӗччӗ ачасем патне, мечӗке никамран та хытӑрах перӗччӗ, пуринчен те ҫивӗчрех чупӗччӗ! Анчах вӑйӑ ҫинчен шухӑшламалли ҫук ҫав унӑн, кӗҫех ака ашшӗ ыратакан урисене кӑшт кантарать те, вӗсем каллех тӑрса малалла каяҫҫӗ. Утмалла-ҫке вӗсен, шав утмалла, ӑҫта та пулин ӗҫ тупӑнсан тин чарӑнма пултараҫҫӗ ашшӗпе ывӑлӗ...

Анат енчен вӗсем патне пӗр ватӑрах ҫын сывхарса пычӗ. Вӑл та, Мишша ашшӗ пекех, туяпа, уксаклать.

— Степан Ефимч, эсӗ тем ку! — аллине ҫӗклесе чылай аякранах саламларӗ вӑл. — Ай, курманни нумай пулать-ҫке сана... Ӑҫталла ҫул тытрӑн капла?

Вӑл ашшӗпе ывӑлне те алӑ пачӗ те, вӗсемпе юнашар ларса, чӗлӗм чӗртнӗ май тӗпчеме тытӑнчӗ:

— Ну, мӗнле пурӑнкалатӑн кутруҫӑн, тусӑм? Тавай, каласа кӑтарт... Килӳ-йышу мӗнле? Ку — санӑн ывӑлу пуль? Ачусем татах та пур-и?



6039
901-К
Республиканская
библиотека
им. М. ГОРЬКОГО
Чувашской АССР

— Мухтанмаллиех çук, тăванăм, — терĕ ăна хирĕç Мишша ашшĕ, ассăн сывласа илсе. — Сывлăхăм начартарах, аманнă ури пĕрмай ыраткалать, час-часах кăкăрсăр пулса ларатăп, сывлăш çитмест... Ачисем — ултă тан, пĕринчен тепри пĕчĕккĕ, ак çак чăн асли те вуниккĕ çине тин пусрĕ-ха. Кăшт та пулин укçа ĕçлесе тупас тесе, кăмакасем купаласа çӳретĕп мар-и... Хама пулăшма ывăла та шкула çӳреме пăрахтарсах илсе тухрăм ак, мĕн тăвас тетĕн? Анчах ĕçĕ те питех тупăнса каймасть-ха. Ĕнертенпе ултă ял витĕр тухрăмăр — кăмака тутаракансем тупăнмарĕç, пĕтĕм ĕçĕ те пĕр çынна мăръе юсаса пани çеç пулчĕ. Сирĕн ялта та илтĕнмест пуль кăмака купалаттарас текенсем?

Çын шухăша кайнă пек пулчĕ, унтан аллинчи туйипе çĕре так! чышса илчĕ.

— Пур, Степан Ефимчă! Ĕç тупатпăр! Халь кăна колхоз правленинче каласса ларчĕç: кĕнчелерти кăмакасене иккĕшне те юсас пулать, иртнĕ хĕлле те хĕлĕпех шăнса лартăмăр, теççĕ. Кирпĕчĕ пур вĕсен, тăмне-хăйăрне тупса параççĕ. Атя, халех председатель патне каятпăр, тусăм...

Пĕр эрне ĕçлерĕç вара ашшĕпе ывăлĕ çак ялти колхоз правленинче. Степан Ефимчă кăмакисене сӳтсе тăкрĕ, кив кирпĕчисене тасатрĕ, унтан çĕнĕрен купалама тытăнчĕ; Мишша килхушшинчен çĕнĕ кирпĕч çĕклерĕ, тăм çăрчĕ, ăна витре ăшне тултарса кĕртсе пачĕ. Хытă ĕçлерĕ вăл, ашшĕн ĕçне епле те пулсан çăмăллатма тăрăшрĕ. Правлени

таврашне хутран-ситрен пырса тухакан хĕрарăмсем, вăл ĕçленине курса, пĕр-пĕрин хушшинче хĕрхенсе калаçрĕç ун пирки:

— Ай-уй, мăнтарăн, шăмшаккине пĕчĕклех çĕмĕрет вĕт! Çавăн чухлĕ кирпĕч йăт-ха эсĕ!

— Тăмне çăрасси те çăмăл мар, мĕн каласси пур...

Анчах, темле йывăр пулсан та, Мишша хăй ывăннине кăтартасшăн пулмарĕ. Юратман вăл хăйне хĕрхеннине, кӳрентернĕ пекех туйăннă ку ăна, мĕскĕн вырăнне хунăн туйăннă.

Пурăнасса вĕсем хайхи леш уксак çын патĕнче, хăйсене ĕç тупса паракан килĕнче пурăнчĕç. Вăл — эпир ăна Иван пичче, тейĕпĕр, — пĕрремĕш тĕнче вăрçинче Мишша ашшĕпе пĕрле пулнă иккен, вунултăмĕш çулта вырăс çарĕсем Австрие çĕмĕрсе кĕрсе кайнă чух иккĕшĕ те пĕр снарядран аманнă, кайран госпитальре те пĕрле выртнă, киле те пĕрлех таврăннă. Фронтра çуралнă туслăх — çав тери çирĕп, ĕмĕре пыракан туслăх вăл. Çавăнпа та Иван пичче халĕ Степан Ефимчăпа унăн ывăлне чи çывăх тăвансене пăхнă пекех пăхса усрарĕ. Ерçнĕ хушăра вĕсем ĕçленĕ çĕре те чĕлĕм туртма пырса ларчĕ.

— Маттур санăн ывăлу, ĕçчен çын пулать,— терĕ вăл пĕррехинче Мишша ашшĕне, вĕсем ĕçрен таврăнса апат çиме ларсан. — Ӳссен хăвăнтан та ирттерет акă вăл, тупата! Паян пăхса тăтăм та, мăн çын пекех тĕрмешет вĕт, шĕпĕн...

— Ĕçлемесен çăкăр çиме çук-çке, — терĕ ăна

хирĕç Степан Ефимчă. — Анчах «çăкăр хурчĕсем» пирĕн — пӳрт тулли, çăварĕсене курак чĕпписем пекех караççĕ: «пар, пар, пар...»

— Вăл çавăн пек ĕнтĕ, — килĕшрĕ Иван пичче. — Анчах куна, Мишшине, эсĕ çак ĕçпе ĕçлеме çине тăрсах вĕрент, тулкки пулать унран. Кам пĕлет, тен кайран чăн-чăн каменщик пулса тăрĕ! Халĕ, ав, пур çĕрте те епле пысăк стройкăсем пуçланса кайрĕç. Пиншер, вуншар пин каменщик, бетонщик, штукатурщик кирлĕ вĕт унта, ĕç — мăй таран!

— Малтан ӳсес пулать-ха...

— Ничево, ӳсет! Пĕрре хăйĕн çулĕ çине тухсан — хăех каять малалла. Халь ĕлĕкхи пек мар вĕт — çулсем уçă вĕсемшĕн. Хуть те мĕне вĕрен, хуть те мĕнле ĕç суйласа ил хăвна валли, ан ӳркен кăна! Ĕлĕкхипе танлаштарсан, мĕн каламалли пур...

Вĕсем калаçнине пĕчĕк Мишша тимлесех итлерĕ, тавçăрса илчĕ: пур çĕрте те халĕ пысăк çуртсем, заводсемпе фабрикăсем тăваççĕ, вĕсене тунă çĕрте ĕçлекенсем нумай кирлĕ... Кун çинчен шкулта та вĕрентеççĕ вĕт. Днепрострой, Магнитострой, Автострой тата ытти «стройсем» çинчен учебниксенче те çырнă, журналсенче ӳкерчĕксем те нумай, сăвăсем те тухаççĕ.

Анчах вĕсене Мишша хăй куçĕпе курĕ-ши хăçан та пулин? Курасси пулмасть пулĕ çав... Акă, кунти кăмакасене туса пĕтереççĕ те — каллех ялсем тăрах каяççĕ вĕсем. Каллех кирпĕч йăтмалла, тăм

çăрмалла... Ашшĕ, чирлĕскер, ĕçлеме инçете каяс çук, пĕччен тухса кайма Мишша ытла пĕчĕккĕ-ха, ăна ĕçе те никам та илес çук. Тата, вăл кайсан, ашшĕне пулăшакан та пулмасть. Кампа ĕçлетĕр вăл? Ĕмĕрнех хальхи пек çӳремелле пулать пуль Мишшан...

— Хитекушкáнĕнчи Уксак Çтаппан тунă кăмака лайăх туртса çунать, пӳрте тĕтĕм тухнине ĕмĕрне кураймастăн, сахал вутăпах вĕри пулать, кукăльсем наччас пиçсе тухаççĕ, — тенĕ Степан Ефимч ĕçĕ пирки Элĕк тăрăхĕнче. — Ытарайми кăмакасем тăвать вăл!..

Анчах вăрçăра йывăр аманса килнĕ çын хытах ĕçлеймен, шав сывмарланнă. Çавăнпа та вăл çак ĕçе хăйĕн аслă ывăлне вĕрентме васканă: çемье сасартăк ашшĕсĕр тăрса юлас пулсан, кам тăрантарĕ ăна? Пĕгĕм йывăрлăх Мишша çине тиенет вĕт ун чух... Çав шутпа ĕнтĕ çуркуннехи шыв-шур вăхăтĕнчен пуçласа хура кĕркуннеччен хăйĕнпе пĕрле илсе çӳренĕ ывăлне ашшĕ.

Хăвăрт хăнăхса пынă Мишша кăмака тăвас ĕçе.

Иккĕшĕ пĕрле ĕçлесе, халĕ вĕсем тыткаламалăх укçа тупкаланă. Анчах çав вăхăтрах вĕсен çемйинче сасартăк пысăк хурлăх пулса тăнă: чирлекелесе пурăннă амăшĕ кĕтмен çĕртен вилсе кайнă. Унтан ашшĕ те хытăран хытă чирлеме пуçланă, ĕçлейми пулнă.

Степан Ефимч çемйи ун чухне колхозра ĕçлесе

тырă тăваймап — упăн чăн аслă ачи Мишша та вунтăваттăра çеç пулнă вĕт-ха! Питĕ йывăр вăхăтсем çитсе килнĕ вĕсемшĕн...

Пĕррехинче Степан Ефимч патне кӳршĕ ял çынни пырса кĕнĕ.

— Манăн малти пӳртри пĕчĕк кăмака — подтопкă йăтăнса анать, пăсса купаласа параймăнши? — тенĕ вăл кил хуçине.

— Тем пекех пырăттăм та, чирлетĕп-çке, халăм çук, — ассăн сывласа илнĕ Степан Ефимч. Хăй çавăнтах çĕтĕк кĕпине сапласа ларакан аслă ывăлĕ çине пăхса илнĕ.

— Мишша, тен эсĕ кайса туса парăн?

— Кайма пултаратăп, ма каяс мар? — тенĕ ывăлĕ, ним тытăнса тăмасăрах.

Кӳршĕ ял çынни ашшĕпе ывăлĕ шӳтлесе калаçаççĕ пулĕ, тесе шутланă та каяс шутпа ура çине тăнă.

— Урăх çĕрте шырас пулать эппин пĕр-пĕр маçтăр, — тенĕ вăл. — Санах тутарас тесеттĕм те — пулаймарĕ...

Вăл аллине тăсса сывпуллашма тăнă, анчах Степан Ефимч ăна чарнă:

— Эс тăхта-ха, тăхта! Эп сана кулса мар, чăнласах калатăп. Ман Мишша пултарать вăл...

— Çавăн пек пĕчĕкскер кăмака тума пултарать-и? — иккĕленсе илнĕ ют çын. — Ан çилен те эсĕ, анчах шанаймастăп эп ăна... Тем тесен те, кăмака вăл вăхăтлăх тăвакан япала мар-çке, ăна кашни çул тумастăн.

— А эсӗ ан хӑра, шанчӑклах пулать! — ӗнентерчӗ Степан Ефимч. — Ытах шанмастӑн пулсан, пӗр-икӗ хут хам пырса пӑхӑп, япӑх пулмӗ.

— Апла пулсан — татах хуть...

Тепӗр кунне, ашшӗн хатӗрӗсене илсе, Мишша ҫав ҫын патне кайса ӗҫе тытӑннӑ. Вӑл мӗнле ӗҫленине ашшӗ чӑнах та кая-кая сӑнанӑ, анчах хӑй пӗр кирпӗч те тытса хуман, сӑмахпа калакаланӑ ҫеҫ.

— Хӑй тӗллӗн ӗҫлесен, ҫын хӑвӑртрах вӗренет...

Мишшан пӗрремӗш кӑмаки ҫав тери лайӑх пулса тухнӑ, хутса ярсанах вӑл пӑравус пек кӗрлесе ҫунма тытӑннӑ.

— Чӑн та маттур иккен эсӗ, Мишша! — ҫурӑмӗнчен лӑпкаса илнӗ ӑна кил хуҫи тулли кӑмӑлпа...

Ҫавӑн хыҫҫӑн, кӗркуннеччен, Мишша тата темиҫе ҫынна кӑмакасем туса панӑ. Ун ҫинчен халӑх хушшинче ырӑ ят сарӑлнӑ:

— Пӗчӗклех маҫтӑр пулса тӑчӗ вӗт ҫав ача!

Анчах кӑмака тӑвасси — ялан тупӑнакан ӗҫ мар ҫав, пӗр ун ҫине ҫеҫ шанса пурӑнма йывӑр. Ҫавӑнпа та Мишша тимӗрҫе вӗренме шут тытнӑ, — тимӗрҫӗ валли ӗҫ ҫулла та, хӗлле те туллиех. Вӑл ялти ватӑ тимӗрҫӗ патне лаҫҫа ҫӳреме тытӑннӑ, ӑна пулӑшнӑ, мӗнле ӗҫленине сӑнанӑ.

...Пӗрре, кӗтмен ҫӗртен, ӑна колхоз правленине чӗнтернӗ. Хытӑ тӗлӗннӗ кун пирки Мишша: мӗн тума чӗнеҫҫӗ-ши? Пӗр-пӗр ӗҫ хушасшӑн-ши? Ятлама сӑлтавӗ ҫук пек... Хӑра-хӑрах кӗнӗ вӑл пред-

седатель патне. Анчах кăлăхах пăшăрханнă иккен вăл.

— Акă мĕн, Мишша, — тенĕ ăна председатель, — эсĕ тимĕрçĕ ĕçне юрататăть тенине илтрĕм эпĕ. Чăнах-и вăл?

— Тĕрĕс... Кăмăла каять мана ку ĕç.

— Чăн-чăн тимĕрçех пулас килет-и вара санăн?

— Килет.

— Апла пулсан, эпир сана вĕренме ярăпăр. МТС-ра тăхăр уйăхлăх курс уçăлать. Вĕренсе тухатăн та — хамăр патах таврăнатăн. Пире тимĕрçĕ ак çапла таранах кирлĕ! — Председатель хăйне шĕвĕр пӳрнипе мăйĕнчен сĕрсе илнĕ. — Мĕн калăн ĕнтĕ çакăн пирки?

— Ярăр! — хавасланса ответ панă Мишша. — Атте те чарас çук мана унта каймa!

— Аçупа калаçрăм ĕнтĕ эпĕ, вăл хирĕç мар, анчах санпа хăвăнпа калаçма хушрĕ, вăл халь хăйĕншĕн хăй хуçа, терĕ...— çемçен кулса илнĕ колхоз председателĕ.

— Пит аван апла пулсан!

— Çапла вара вунпиллĕкри Мишша тата тепĕр ĕçе вĕреннĕ. Курсран таврăнсан колхоз тимĕрçи пулса тăнă та вăл, пĕтĕм çамрăк хастарлăхпа ĕçе тытăннă. Ялхуçалăх машинисене юсанă, урапа кустăрмисене шиналанă, колхозри çĕнĕ çуртсем валли кирлĕ тимĕр япаласем тунă. Ырми-канми ĕçленĕ...

— Ылтăн аллăсем пирĕн Мишшан, — тенĕ ун

çинчен колхозниксем, — çамрăк пулин те, тем тума та пултарать!

... Унтан вăрçă пуçланнă. 1941 çулта Мишшан çара кайма çул çитмен пулнă-ха, вăл халлĕхе килтех пурăннă. Пĕр-икĕ уйăх хушшинчех ялта пĕр вăйпитти арçын та юлман, пурте фронта кайса пĕтнĕ, çавăнпа та колхозри пĕтĕм ĕç хĕрарăмсемпе ӳссе çитмен çамрăксем çине тиеннĕ. Пурне те тумалла пулнă вĕсен — кăçалхи тырпулне пуçтарса кĕртмелле, килес çул валли акса хăвармалла, выльăх апатне те хатĕрлемелле, вутти-шанкине те касмалла, çулĕсене те юсамалла, тем те... Пурте фронт валли, çĕнтерӳ валли! Тыл фронта мĕн кирлине çителĕклĕ парса тăмасан — ирсĕр тăшмана çĕнес çук. Комсомолец Михаил Степанов çакна питĕ лайăх пĕлнĕ, çавăнпа та вăл ырмиканми ĕçленĕ, ыттисене те ĕçлеме хавхалантарнă.

— Эпир фронт валли панă кашни ытлашши пĕр пăт тырă, кашни килограмм аш-какай çĕнтерӳ кунне çывхартать!..

1943 çул пуçламăшĕнче унăн хăйĕн те «ят тухнă». Тĕрĕссипе каласан, вăл çак кун çинчен тахçанах ĕмĕтленсе пурăннă, районри çар комиссариатне заявлени çырса та пăхнă, анчах лерисем ăна: «Вăхăт çитсен хамăрах чĕнетпĕр», тесе ответ панă. Халĕ вара чăн та чĕнсе илнĕ. Малтан Мишша пĕр хулари авто-мотополка лексе шофера вĕреннĕ, икĕ уйăхранах малти позицине боеприпассем — снарядсем, минăсем, патронсем турттарма тытăннă, çĕр тĕрлĕ хăрушлăх витĕр те тухнă...

Дивизи командире бронемашинине илсе çӳретекен шофера бомбежка вăхăтĕнче вĕлерсен, кĕçĕн сержант Степанова ун вырăнне лартнă, анчах нумай çӳреме тӳр килмен — машина каллех бомбежка айне лексе арканнă, шофера контузи пулнă, вал пĕр уйăх хушши ним илтмесĕр госпитальре выртнă...

Унтан тухсан — авиаполка яна. Михаил Степанов аэродромра самолетсем патне бомбăсем илсе пырса тăракан моторист ĕçне тума тытăннă. Çămăл ĕç пулман ку — фашист çăханĕсем пирĕн аэродромсене сăнасах тăнă, вĕсене аркатма тăрăшнă. Вилĕм ялан пуç çийĕнчех çакăнса тăнă... Пĕррехинче (ку ĕнтĕ Румынире пулнă) вĕсем питĕ йышлăн вĕçсе пырса калама çук нумай бомба тăкса хăварнă. Кашниех тĕл пырса лекнĕ пулсан, таврара нимĕн те юлман пулĕччĕ. Çавăн чух вара Степанова тепĕр хут контузи пулнă. Хирти госпитальрен ăна инçетри тыла ăсатма палăртнă, анчах Степанов, кун çинчен пĕлсен, сестра урлă аслă врача чĕнтернĕ те унпа ятлаçнă пекех калаçма тытăннă:

— Эпĕ нимĕнле тыла та каймастăп! Çĕнтерӳ çывхарса килнĕ вăхăтра таçта мур шăтăкне, фронтран аякка каятăп-и вара? Çук, çук, эсир мана халĕ çыхса пăрахса ăсатсан та, эпĕ пурĕпĕр тарса килетĕп. Пĕр кун та пурăнмастăп тылра!

Ăна вара чăнах та ниçта та ăсатман.

Вăрçă пĕтсен пĕр çулталăкран Михаил Степанов служить тунă авиачасть Румынирен хамăрăн

çĕршыва тавранă. Вăл чаранса тайă вырăнта варçă вăхăтĕнче пĕр хушă нимĕçсен аэродроме пулнă. Çак таврари халăха, тыткăна лекнĕ совет салтакĕсене ним хĕрхенмесĕр ĕçлеттерсе, аэродромăн темĕн пысăкăш лаптăкне пĕтĕмпех асфальт сарнă вĕсем. Совет Çарĕ хĕссе килнипе васкасах тухса тармалла пулсан, вĕсем ăна çĕмĕрме те ĕлкĕреймен. Пирĕн командовани халĕ çав чиппипер аэродрома сая ярас темен, унпа усă курма шут тунă.

Анчах çав аэродром тавра пĕр çурт тавраше те пулман — пур еннелле те çеçенхир кăна сарăлса выртнă...

— Палаткăсенчех пурăнатпăр-ши вара кунта? — шухăшланă боецсем. — Çулла аван та-ха вăл, анчах хĕл çитсен мĕн курмалла пулĕ?

Пĕр-ик кунтан, ирхи поверка вăхăтĕнче, Степановсен роти умне вĕсен командирĕпе пĕрле темле палламан çар инженерĕ тухса тăрать.

— Юлташсем, сирĕн хушăра строительсем пур-и? — тесе ыйтать вăл.

Салтаксем нихăшĕ те чĕнмеççĕ, пĕр-пĕрин çине пăхкаласа илеççĕ çеç.

— Строительсем пур-и, тетĕп! — каллех ыйтать инженер, строй умĕн утса пырса. — Каменщиксем, бетонщиксем, штукатурсем...

Каллех никам та чĕнмест.

— Неушлĕ сирĕнтен нихăшĕ те стройкăра ĕçлесе курман? — Халĕ ĕнтĕ рота командирĕ ый-

тать. — Ĕҫ, килте чухне кăмака та пулин купаланă?

Темиҫе самант хушши каллех шăп пулать, унтан сулахай флангра тăракан пĕр аслă сержант аллине ҫĕклет.

— Эп купаласа курнă. Пултаратăп...

Пурте карах ун еннелле ҫаврăнса пăхаҫҫĕ. Ку — пĕр взводри командир помощникĕ, боецсене яланах ҫирĕп тыткалакан Михаил Степанов иккен. Вăл, «вольно» команда пулнă пулин те «смирно» тăрса, ют командир ҫине шăтарас пек пăхнă.

— Мĕн тумалла пулать, инженер-майор юлташ?

— Пирĕн хамăр валли ҫуртсем тума тытăнмалла. Нумай ҫуртсем тумалла — штаб, казармăсем, столовăй, гараж тата тем те пĕр... Материалсене ыранах кӳрсе килме пуҫлаҫҫĕ, строительсем кăна ҫук.

— Эпĕ ҫуртсем тусах курман та ĕнтĕ... — иккĕленсе илет аслă сержант.

— Вĕрентетпĕр! Ну, тата кам ĕҫлес тет стройкăра? Хамăр валли тăватпăр вĕт, астăвăр.

... Килĕшекенсем чылай тупăннă. Тепĕр темиҫе кунтан вара ҫеҫенхирте строительство пуҫланса та кайнă. Ҫурт стенисене купалама тытăнсан, инженер стройкăра ĕҫлеме пуринчен малтан килĕшнĕ аслă сержант Степанов самаях ăста ĕҫленине курă, ăна начальник пекки туса хунă, хăй мĕн пĕлнĕ таран ыттисене вĕрентме хушнă, вара салтаксем, юлташла кулкаласа, ăна «пирĕн прораб»

тесе чĕнме пуçланă. Вăл ертсе пынипе строительсен команди кĕркуннеччен темиçе çурт купаласа лартнă. Ĕçсем ăннăçемĕн ăнса пынă.

— Атьсемĕр! Салтак тени вăл ишĕлтерме кăна мар, хăй те тем те пĕр туса хума пултарать иккен!.. — шӳтлекелесе илнĕ салтак-строительсем хăйсем хушшинче.

Хăрушă вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнă салтаксем, çĕнтерӳçĕ-воинсем час-часах хăйсем тăван килĕсене таврăнсан мĕн тăвасси, мĕн ĕçлесси çинчен калаçнă. Кашнин хăйĕн шухăшĕ, хăйĕн ĕмĕчĕ, хăйĕн планĕсем пулнă.

— Мĕн хуйхăрмалли пур ĕç пирки! — тенĕ пĕрисем, çурт стени çине кирпĕч хыççăн кирпĕч хурса. — Эпир рекорд лартакан каменщиксем пулса таврăнатпăр вĕт килсене!

— А мĕн? Япăх мар! Халĕ, вăрçă хыççăн, юсамалли те, çĕнĕрен тумали те темĕн чухлех...

— Эпир, тен, пулсах çитеймĕпĕр, анчах пирĕн Степанов каменщик пулатех ĕнтĕ, ун пирки иккĕленмелли çук!

Кун пирки Михаил Степанов хăй те çавăн пекрех шухăшланă-мĕн. Кăмăла кайнă ăна каменщик ĕçĕ. Питĕ ырă-çке вăл: ним çук çĕрте çĕр алтса çурт никĕсне хыватăн та купалама тытăнатăн. Кирпĕч хыççăн кирпĕч, кирпĕч хыççăн кирпĕч... Кĕçех стенасем çĕртен уйрăлса çӳлелле хăпарма тытăнаççĕ — метр хыççăн метр. Унтан акă пĕр этажĕ пулса çитет, иккĕмĕшĕ ӳсме тытăнать, виççĕмĕшĕ, тăваттăмĕшĕ... Куран — темиçе уйăхран

çурт кӳлепи пулса та çитет. Шалта урăххисем ĕç-леççĕ — штукатурсем, платниксем, столярсем, çав вăхăтрах çурт тăррине те витсе лартнă ĕнтĕ. Çурт пулчĕ те. Хамăр валли, пирĕн çынсем валли, хăйĕн телейĕшĕн кĕрешсе темĕн тĕрлĕ нуша витĕр тухнă, пур йывăрлăхсене те çĕнтернĕ халăх валли. Пĕр çуллăха мар, вуншар, çĕршер çуллăха пулаççĕ вĕсем, хамăрăн ачасем, ачасен ачисем валли пулаç-çĕ. Мĕн пултăр-ха ĕнтĕ çакăнтан пархатарли?..

... 1950 çулхи çуркунне, шыв-шур вăхăтĕнче, Михаил Степанов тăван Хитекушкăнне таврăнать. Вăл килнине пĕлсен, вĕсем патне кӳршĕ-маршă-сем пухăнаççĕ, колхоз председателĕ те пырать. Пурте саламлаççĕ ăна, киле чипер таврăннă ятпа ырă сунаççĕ. Унтан сăмах пулас пурнăç çинчен тапранса каять.

— Ну, Мишша, мĕн тума шутлатăн ĕнтĕ килте? Ялтах пурăнатăн-и е ăçта та пулин хуланалла çул тытатăн?

— Тен, каллех сунтал патне таврăнан?

— Шофер та кирлĕ пире, колхоза кĕçех иккĕ-мĕш машина килет.

— Шоферĕ тупăнĕ-ха вăл, бригадир тăвас ăна! Погонĕсене вĕçертсе хума та ĕлкĕреймен аслă сержант çак ыйтусене хирĕç нимех те калайман.

— Пĕлместĕп-ха, шухăшласа пăхас пулать...

Курма пынă çынсем салансан, каçхине, вăл ха-лĕ ĕнтĕ татах ватăлса кайнă ашшĕне хăйĕн шу-шăхне пĕлтернĕ:

— Санпа пĕрле кăмака туса çӳрени усăллă

пулчӗ лере... Çуртсем турӑм. Каменщик ӗçне самаях чухланӑ пек туйӑнать... Шупашкарта питӗ вӑйлӑ строительство пырать тенине илтрӗм эпӗ, пир-авӑр комбиначӗ гӑваççӗ тет-и çав? Кайса пӑхас тетӗп çавӑнта. Хам хулара пурӑнсан шӑллӑмсене вӗрентме те ансатрах пулӗ вара. Мӗнле шутлатӑн эсӗ, атте?

— Юрать те пулӗ, ывӑлӑм, чуну унталлах туртать пулсан, — тенӗ ашшӗ.

Пӗр-ик эрнерен Михаил Шупашкарти пир-авӑр комбинатне тунӑ çӗре пырса та çитнӗ.

— Çартан таврӑнтӑм, ӗçлес пулать. Çичӗ çул хысна çӑкрине çирӗм, çитет пулӗ. Каменщик пулма кӑмӑл пур, — тенӗ вӑл, кадрсен пайӗн начальникӗ умне документсене кӑларса хурса.

— Ку ӗçпе ӗçленӗ-и эсӗ хӑçан та пулин? — ыйтнӑ лешӗ.

— Ӗçлесех кайман та... пултарассӑн туйӑнать. Вӗренетӗп.

— Тен, пӗр-пӗр урӑх çӗре вырнаçтарас сана? Пирӗн ӗç нумай кунта, çынсем çитмеççӗ, — тесе пахнӑ начальник.

— Çук, мана стройка кӑна илӗртет. Ытти ӗçе эпӗ районра та вырнаçма пултарнӑ. Çуртсем тӑвас килет манӑн, — урӑх ним те мар.

Çамрӑк салтак çавӑн пек çине тӑрсах ыйтнине кура, начальник килӗшнӗ.

— Юрӗ эппин, стройкӑна-тӑк — стройкӑна пултӑр... Вӗренме эпир сана Парамонов бригадине ярӑпӑр. «Ваня пичче» теççӗ ӑна пирӗн пурте.

Хаяртарах ĕнтĕ вăл старик, анчах ĕçе пит лайăх пĕлет, опычĕ пысăк. Ну, лайăх вĕренесси, маçтăр пуласси вăл хăвăнтан килет, ху тăрăшнинчен.

— Эпĕ салтак, начальник юлташ, ăна-кăна чухлакалатăп, — çарти пек честь парса тухса кайнă Михаил Степанов ун патĕнчен.

Анчах пĕтĕм стройкипе чапа тухнă бригадăра ĕçлесе вĕренесси пулайман унăн.

— Сан пек ĕçе пĕлмен шĕвĕрсем ахаль те туллиех манăн, илместĕп! — тенĕ Ваня пичче, кадрсен пайĕнчен илсе пынă хута каялла тавăрса парса. — Ман бригада кунта университет мар пулĕ? Яраççĕ те яраççĕ — вĕрент тавай! Эпир вĕт лăпăр-лапăр çурт мар, промышленность корпусĕ тăватпăр, кунта лайăх маçтăрсем кирлĕ!..

— Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ манăн? Сирĕн пата килме хушрĕç те...

— Яччĕр ав пурăнмалли çуртсем тунă çĕре, унта тĕрлĕрен шăкăр-макăр ĕçсем туллиех. А кунта ĕçлесси çинчен — ан та шутла, — аллипе сулнă бригадир.

Çакăн пек калани Михаила хытах кӳрентернĕ, анчах, ватă бригадирпа калаçса татăлас çуккине кура, ирĕксĕрех тепĕр хут кадрсен пайнелле утма тивнĕ унăн.

— Йышăнмасть мана Ваня пичче. Тиркесе тăкрĕ. Пурăнмалли çуртсем тунă çĕре кайма хушать...

— Çавăн пек-çке вăл старик пирĕн, хăй мĕн шутланă — çавна тăвать, хăйĕн кăмăлĕ пулмасан — ниепле те итлеттерейместĕн ăна, — пуçне

пăркаласа илнĕ те кадрсен начальникĕ, Степанова çĕнĕ хут çырса панă.

Пурăнмалли çуртсем тăвакан участокра çамрăк техник-строитель Александр Иванович Никитин, хăй те салтак пулнăскер, Степанова ăшшăн йышăннă.

— Тин çеç демобилизаципе таврăнтăн пулать? Ĕçлес, тетĕн? Питĕ аван. Каменщиксем кирлĕ пире. Малтанлăха çак çуртсем тавра тимĕр карта тума чул юпасем купаласа пăх-ха. Çарта çуртсем тунă пулсан, тен, сана вĕрентме те кирлĕ мар? Ну, кайран курăнĕ-ха унта...

Пулас каменщика техник ĕç вырăнне илсе кайнă, чертёжсемпе паллаштарнă, юпасене мĕнлерех купаласси çинчен ахаль те каласа ăнлантарнă.

— Çирĕп кăна мар, хитре те пулччăр вăл юпасем, — тенĕ юлашкинчен, — рабочисем пурăнмалли поселока илем парса тăччăр...

Степанова пулăшма прораб пĕр çын уйăрса панă. Тепĕр кунне вăл ĕçе тытăннă...

Хытă тăрăшнă Михаил. Вырăнтан хусканмасăр, йĕри-тавралла пĕрре çаврăнса пăхмасăр тенĕ пек ĕçленĕ. Унăн сылтăм аллинчи кельма* выляса кăна тăнă, сулахайĕпе вăл кирпĕч хыççăн кирпĕч хунă, кирпĕч çине кирпĕч!

— Тавай, тавай, хăвăртрах çаврăнкала, — васкатнă Михаил хăйне пулăшакана, лешĕ пĕр минут та ĕçсĕр тăман пулин те. — Эпир, как калас, паян санпа иксĕмĕр экзамен тытатпăр вĕт-ха!

* Кирпĕчсем хушшине раствор ăсса хумалли калак.

Акă, пĕр юпи пулса çитнĕ. Унтан тепри те çĕр ăшĕнчен кăмпа пек шăтса тухса çÿлелле хăпарма пуçланă... Çынсем кăнтăрлахи апат тунă, — хăшĕ столовăйне кайнă, хăшĕ ĕç патĕнчех ларса çинĕ,— Степанов çаплах ĕçленĕ, хырăм выçнине те сисмен вăл — виççĕмĕш, тăваттăмĕш юпасене купаланă. Хĕвел йăлăмри вăрмансем еннелле сулăннă, ĕç кунĕ пĕтнĕ, Степанов ăна та асăрхаман. Тахăшĕ, хăй патнех пырса тăрса, кăмăллăн:

— Ну, ĕçсем мĕнле пыраççĕ, маçтăр? — тесе ыйтсан тин вăл кельмăна хурса, йĕп-йĕпе çамкине çанни вĕçĕпе шăлса илнĕ.

— Ĕçлетпĕр-ха...

— Паянлăха çитет те пулĕ, юлташ.

Ун патне прорабпа тепĕр çын пырса тăнă иккен. Вĕсем Степанов кун каçа тунă ĕçе шутлама тытăннă. Çамрăк каменщик иккĕленсе, пăшăрханса тăнă:

— Норма тулман пуль ĕнтĕ, намăс куратăп...

Кăлăхах пулнă ку! Прораб, хăйĕн блокночĕ çине темскер çырса хурса, малтан ассăн сывласа илнĕ пек тунă, унтан çемçен кулса каланă:

— Виççĕр процент пулнă санăн паян, шăллăм!

— Кулатăр эсир, — тенĕ Михаил, ун çине шанмасăртарах пăхса. — Пулма пултараймасть...

— Пултарнă çав!

— Ак сана... ученик! — тенĕ тепри. — Кун пеккисене курманччĕ-ха эпир кунта. Маттур! Тулкки пулать санран.

Вёсем пурте чĕлĕм туртма ларнă. Халь тин вара Михаил хăй питĕ ывăннине, аллисем чĕтренине туйнă. Анчах чĕри çав тери савăнăçлăн тапнă унăн: вăл намăс курман паян, хăйĕн пултарулăхне кăтартнă!

Тепĕр кунне те çавăн пекех ĕçленĕ Михаил, виç-çĕмĕшĕнче те, эрнипех. Карта юписене купаласа пĕтерсен ăна водопровод колонкисем валли «çăл-сем» тума хушнă. Ку ĕç малтанхинчен чылай кăт-кăсрах пулнă, Михаила пулăшса пыма тăхăр çын пана. Уйăх иртсен вара унăн пĕтĕм ĕçне хисеплесе пăхнă та, нормăна вăл 350 процент тултарни палăрнă.

— Тĕрĕслев срокĕ иртсе кайрĕ санăн, — тенĕ ăна участок начальникĕ хăй патне чĕнсе илсе. — Тин ĕнтĕ эсĕ ученик мар, чăн-чăн каменщик пулса тăтăн, Степанов юлташ!

Квалификаци комиссийĕ ăна пиллĕкмĕш разряд панă. Анчах вăл стройкăра пĕтĕмпе те пĕр уйăх кана ĕçленĕ пулнă вĕт-ха! Стройкăра малалла çа-вăн пек хăвăрт «сикни» чăн та сайра пулать.

Виçĕ уйăхран, Михаил Степанов ĕçре хăйне тата лайăхрах палăртсан, унăн ятне стройкăри хисеп хăми çине те кĕртсен, ăна, çамрăк та хастарлă коммуниста, комсомолецсемпе çамрăксен брига-дин бригадирĕ туса хунă. Ытлашши савăнмаллиех пулман куншăн: бригадăна пуринчен ытларах стройкăна нумаях та пулмасть ялсенчен килнĕ е разнорабочисем (çĕр чавакансем, грузчиксем...) пулнă çамрăксем пуханнă. Вĕсене пурне те вĕрент-

ме тӳр килнӗ. Анчах шанса панӑ ӗҫрен Михаил хӑраса ӳкмен, хӑйӗн юлташӗсене вӑл ҫине тӑрсах вӗрентнӗ...

Шупашкар варринче, Карл Маркс урамӗнче, госбанкпа тӗлме-тӗл, ялхуҫалӑх институчӗн ҫӗнӗ общежитийӗ пур. Питӗ илемлӗ, тӑватӑ хутлӑ ҫурт. Степанов бригади чӑн малтан ҫав ҫурта купаланӑ. (Ӑна пир-авӑр комбиначӗ ялхуҫалӑх институчӗн пӗр ҫуртне йышӑннӑ пирки туса памалла пулнӑ). Унтан бригадӑна комбинатри ТЭЦ-а (теплоэлектроцентраль) тунӑ ҫӗре куҫарнӑ. Анчах бригада членӗсем халь чылайӑшӗ улшӑннӑ, ҫӗнӗ ҫынсем хутшӑннӑ, ҫавӑнпа та вӗсене каллех вӗрентме тивнӗ.

— Асӑнмалӑх шута илсе пытӑм эпӗ, — терӗ пире Михаил Степанович, эпир унпа стройкӑра тӗл пулса калаҫнӑ чух, — хама чӑн малтан бригадир тунӑранпа эпӗ пурӗ ҫӗр те ултӑ ҫынна каменщика вӗрентнӗ. Ултӑ-ҫичӗ ҫул хушшинче вара вӗсемпе пӗрле чылай ҫуртсем купаларӑм...

Эпир вӑл кунта хӑш-хӑш ҫуртсене туни ҫинчен ыйтрӑмӑр. Иккӗмӗш этажа ҫити хӑпартнӑ пӗр ҫӗнӗ ҫурт тӑрринче тӑрса, Михаил Степанович пире унталла та кунталла кӑтартма пуҫларӗ.

— Ҫак поселокри тӑватӑ хутлӑ ҫуртсенчен эпир 22, 24, 25, 30-мӗш ҫуртсене тунӑ ҫӗрте ӗҫленӗ... Авӑ вӗсем. Декабристсен урамӗнче тӑватӑ ҫурт тунӑ. Общежити, больница. Ятарласа пир-авӑр комбиначӗ валли уҫнӑ вунпӗрмӗш номерлӗ вӑтам шкула, ҫӑкӑр заводне, ТЭЦ-ӑн тӗп мастерскойӗсе-

не купалана. Комбинатăн пир-авăра шуратса сарлакан фабрикине тунă. Халĕ ак ФЗО шкулĕн çуртне тума тытăнтăмăр...

— «Чылай» мар, питĕ нумай çуртсем тунă эсир, Михаил Степанович! — терĕмĕр эпир. — Ăçталла пăхсан та — эсир тунă корпуссем курăнаççĕ вĕт-ха. Мĕн чухлĕ вăй хунă эсир кунта!..

— Эп пĕччен-им? — кулса илет Михаил Степанович. — Халăхпа пĕрле. Анчах халăх тени вăл — хăвăрах пĕлетĕр — тем тума та пултаракан вăй!

* * *

Мĕн каламалли пур ĕнтĕ — кашни ĕçрех ăсталăх кирлĕ. Анчах ăста пулма — вĕренес пулать, унсăрăн малалла каяймастăн. Куллен вĕренес пулать, çине тăрса, тăрăшса.

Михаил Степанов вĕреннĕ. Стройкăри техминимум кружокне çӳренисĕр пуçне, вăл çурт-йĕр тăвасси çинчен, уйрăмах малта пыракан каменщик-новаторсен опычĕ çинчен çырнă кĕнекесене ытларах тупса вулама тăрăшнă. Ун пек кĕнекесем халĕ унăн тем териех пухăннă.

Пĕррехинче Степанов Мускаври паллă каменщик Шавлюгин кĕнекине вуласа тухнă. Вăл каменщиксене пилĕкшер çынлă звеносем туса ĕçлеме сĕннĕ. Звенори кашни çыннăн — хăйĕн уйрăм ĕç пулмалла, çав вăхăтрах вĕсем пĕр-пĕрине тăтăшах пулăшса, ĕçе ăнăçлăрах, хăвăртрах туса пыма май памалла.

Ку таранччен Степанов бригадинче икшерĕн

ĕçленĕ — пĕри кирпĕч хурать, тепри ăна пулăшса пырать. Çак майпа темле тăрăшса ĕçлесен те, сменăра 3—4 пин кирпĕчрен ытла хурăнман.

— Шавлюгин пек «пиллĕкĕн» ĕçлесе пăхсан мĕнле пулĕ-ши? — пĕр-икĕ кун шухăшласа çӳренĕ Михаил Степанович. Унтан прорабпа калаçса пăхнă. Лешĕ ку шухăша ырланă:

— Санăн кун пек ĕç ăнсан, ыттисене те çапла ĕçлеме хăнăхтаратпăр вара...

— Вăл паллах. Анчах материалсем пирки чăрмавсем ан пулччăр, кирпĕчпе раствор çителĕклĕ парса тăрăр.

— Ун пирки ан пăшăрхан.

Тепĕр ирхине Степанов çĕнĕлле, «пиллĕкĕн» ĕçлеме тытăннă. Қашни — хăй вырăнĕнче, хăçан мĕн тумаллине тата мĕнле тумаллине пĕлет.

Стройкăра чăн малтан ĕçлеме пуçланă кун пăлханнă пекех пăлханнă бригадир. Мĕнле пулĕ-ши ĕнтĕ? Лайăх пример кăтартас вырăнне — намăс курас марччĕ!

Ĕç ăннă. Рет хыççăн рет хушăннă, çурт стенисем хăпарсах пынă. Смена вăхăчĕ иртсен шутласа пăхнă та — «пятерка» 7 пин кирпĕч хуни палăрнă. Анчах ку вăл — пуçламăш кăна пулнă-ха. Тепĕр кунне вĕсем 11 пин кирпĕч хунă, виççĕмĕшĕнче — 12, унтан 14, 15!

Қу рекорд пурне те тĕлĕнтерсе янă. Кун пекки унччен малтан çак стройкăра пĕрре те пулман. Пилĕк çын пĕр сменăра 15 пин кирпĕч купаланă... Хăшĕсем ĕненмен, иккĕленнĕ:

— Пахалăхĕ мĕнле-ха вĕсен? Лăп та лап, чалăш та тĕлĕш купаласа кайни — кама кирлĕ вăл?!

Ятарласа туна комисси «пятерка» ĕçне тĕплĕн тĕрĕслесе пăхнă. Чиперех пулнă иккен! Стенасем тип-тикĕс, яка, штукатурка тума та аван — нимĕнле шăйрăксем те çук.

Çакăн хыççăн ытти бригадăсенче те чылайăшĕ çавăн пек «пиллĕкпе» ĕçлеме пуçланă, хăшĕсем тата Мускаври тепĕр паллă каменщик — Максименко меслечĕпе — «улттăпа», виçĕ мăшăрăн ĕçлеме тытăннă. Михаил Степанов пуçарăвĕ стройкăра ĕçри чи тухăçлă, çĕнĕ йышши меслетсемпе усă курас юхăма вăйлатнă.

— Ĕçе хăвăрт туни — çителĕклĕ мар-ха вăл, ĕçĕн пахалăхĕ те лайăх пулмалла! — тет Михаил Степанович.

Çав шутпа вăл хăйĕн бригадинчи çынсен ĕçне пĕрмай сăнаса, тĕрĕслесе тăрать, никама та технологи йĕркисене пăсма памасть. Кирпĕч те тикĕс вырттăр, вĕсем хушшинчи раствор хулăмăшĕ те виçеллĕ пултăр, материал та перекетленсе пытăр. Кам кирлĕ пек тĕрĕс ĕçлемест, технологие пăсать, бригадир ăна çийĕнчех тӳрлетет...

Стройкăри каменщиксен бригадисем хушшинче социализмла ăмăрту сарăлса пынă. Степанов бригади хайхи Парамонов — Мишшана стройкăна пырсанах тиркесе тăкса ĕçе илмен Ваня пичче бригадипе ăмăртнă. Ăмăртма пуçласан пирвайхи кунсенчех Степанов бригади нумай маларах кай-

нă. Эрне вĕçĕнче, результатсене тĕрĕслене чух, Михаил Степанович шӳтлесе илнĕ:

— Ну, мĕнле, Ваня пичче, ученика йышанатăн-и халь мана?

Старик именнĕ пек пулнă:

— Кам шутланă ун чух эсĕ кун пек çивĕч пуласса... Тепĕр тесен, эсир, çамрăксем, малаллах каятăр ĕнтĕ, эпир, стариксем, тин сире хуса çитес çук! Халĕ ав техники те епле хăватлă та...—Вăл таврари башеннăй крансем, шахтоподъемниксем çине кăтартнă.— Эпир çамрăк чух кашни кирпĕче хамăр çурăм çине хурса йăтнă, халĕ пĕрре кнопка çине пусаççĕ те — темиçе çĕр кирпĕч пĕр самантранах тăваттăмĕш этажа хăпарса выртать...

1952 çулта Михаил Степанов Иваново хулине кайса виçĕ уйăх хушши каменщик-маçтăрсен курсĕнче вĕреннĕ. Кунта пысăк опытлă çынсем, стройкăсенче нумайранпа ĕçленĕ квалификациллĕ маçтăрсем пухăннă. Степанов маçтăр выранче шутланман, вăл бригадир, çитменнине çамрăк бригадир çеç пулнă, çапах та вĕренӳре ыттисенчен кая юлман, лайăх вĕренсе тухнă. Киле таврăнсан ăна çĕнĕ каменщиксем вĕрентекен инструктор тунă.

— Пуринчен ытла мана Мускавра ялан ĕçлекен строительство выставкине кайса килни пысăк усă пачĕ, — тет Михаил Степанович. — Унта мана 1956 çулта ячĕç. Мĕн кăна курмарăм пулĕ эпĕ, çав выставкăра! Темĕн тĕрлĕ строительство техники, темĕн тĕслĕ материал... Çĕнĕ йышши ĕç меслечĕ-

семпе паллашрăм. Чăп-чăп университет пулчĕ ку маншăн!

Çавăн чух Мускавра Михаил Степанович çĕршыври чи ăста каменщик Ф. Д. Шавлюгинпа тĕл пулса калаçнă. Унччен темиçе çул малтан вăл çав маçтăрăн кĕнекине вуласа унăн меслечĕпе («пиллĕкпе») ĕçлеме пуçланă-çке. Халĕ ĕнтĕ вăл унпа хăйĕнпе паллашса, вăл мĕнле ĕçленине курнă. Питĕ кăмăллă йышăннă Мускав маçтăрĕ инçетри Чăваш çĕршывĕнчен пынă çамрăк каменщике, хăйĕн ĕç меслечĕсем çинчен каласа панă ăна, ырă канашсем панă.

— Еç вырăнне малтанах тĕплĕ хатĕрлесе янтăла, санăн пурте ал айĕнче пултăр, хăвна пулăшакансем те хăйсен ĕçне хăвăн пекех ăста пĕлччĕр!

Çак сăмахсене Михаил Степанов яланах асра тытнă, лайăхран лайăх ĕçлесе пыма тăрăшнă...

Ку çеç те мар. Вăл, строительствăна пĕтĕм чунĕпе парăннăскер, ăна хăй хастарлă ĕçленипе кăна мар, ытти енпе те пулăшасшăн çуннă, ăçта та пулин йĕркесĕрлĕх курсан — тӳссе тăрайман.

Ĕçленĕ чух вал час-часах çакна асăрханă: шоферсем стройкăна кирпĕч тиесе пыраççĕ те, самосвалсен кузовĕсене хăвăрт кăна çĕклесе, кĕмсĕр-р! тăкса хăвараççĕ. Вĕсене калле-малле ытларах хутлани пултăр! Анчах çавăн пек ним хĕрхенмесĕр тăкнă кирпĕчĕн виçĕ пайĕнчен пĕри юрăхсăра тухать, ванса пĕтет.

— Кирпĕчĕ ахаль те çитмест пирĕн, эпир пур — ăна перекетлес вырăнне — ним шеллемесĕр ватат-

пăр, — тенĕ Михаил Степанович, кӳренсе. Кун пирки вăл прорабпа та, участок инженерĕпе те сăмахласа пăхнă, производствăлла канашлусенче те калаçнă.

— Пирĕн куç умĕнчех вуншар пин тенкĕлĕх стройматериал пĕтет, эпир çавна курмиш пулатпăр!

— Мĕн тума сĕнетĕн эсĕ? — ыйтнă унран.

— Мускавра кирпĕче контейнерсемпе турттарaççĕ. Ун пек кирпĕчĕ те ванмасть, çĕр çинчен çӳле хăпартма та ансатрах.

Ку — питĕ вырăнлă сĕнӳ пулнă, ăна йышăннă, контейнерсемпе турттарма тытăнсан кирпĕчсем ванса сая кайми пулнă.

Производствăна усă кӳрекен сĕнӳсем татах та панă Михаил Степанович. Çавăн пек паха сĕнӳсенчен пĕри вăл — стройкăра комплекслă бригадăсем тăвасси пулнă. Унăн хăйĕн бригадинче халь каменщиксем кăна мар, разнорабочисем (çĕр чавакансем, грузчиксем) те пур. Штукатуркăсăр пуçне, çавăн пек бригада пур ĕçсене те хăех, никам пулăшмасăрах тума пултарать, унăн ĕçĕ нихçан та чарăнса лармасть.

— Иртнĕ вăхăтра, бригадăра каменщиксем кăна пулнă чух, ĕçсĕр те тăркаланă эпир, — каласа парать Михаил Степанович. — Кирпĕч пĕтет — тăратпăр, раствор пулмасть — чарăнатпăр, хамăр тăрса ĕçлекен хăмасене çӳлерех хăпартмалла пулать — каллех ĕçлейместпĕр. Халĕ ун пекки çук. Пĕр ĕçне тума май çук пулсан — теприне тытăнатпăр. Тепĕр чух чăрмавсем пулсан та, бригада

сменӑри нормӑна 130—150 процентран кая нихҫан та тултарман.

...Стройкӑра пӗтӗм вӑя парса ӗҫленӗ вӑхӑтрах Михаил Степановичӑн обществӑлла ӗҫсем те сахал мар. Вӑл — хула Совечӗн депутачӗ, унта ӑна умлӑн-хыҫлӑн виҫӗ хут суйланӑ ӗнтӗ. Хула Совечӗн исполкомӗ хушнипе тата суйлавҫӑсем ыйтнипе те вӑл нумай ӗҫсем тӑвать. Пуринчен ытла, ӗҫҫыннисен хваттер условийӗсене лайӑхлатас тӗлӗшпе ӗҫлеме тивет унӑн.

Парти енӗпе те ӗҫлет Михаил Степанович. Вӑл 891-мӗш УНР ҫумӗнчи пуҫламӑш парторганизацин бюро членӗ, 1956 ҫулта ӑна партин облаҫри конференцинче КПСС Чӑваш Обкомӗн членне суйланӑ. Кӑҫалхи конференцинче ӑна ҫӗнӗрен, иккӗмӗш хут Обком членне суйланӑ.

Лайӑх ӗҫленӗшӗн, ӗҫре пуҫараллӑ пулнӑшӑн, хӑйӗнпе пӗрле юлташӗсене те малалла илсе пынӑшӑн Михаил Степанович Степанова Хисеп грамотисем те, премисем те нумай хутчен панӑ. Пӗлтӗр, строительсен кунӗнче, ӑна калама та ҫук пысӑк чыс тунӑ вара — СССР строительство министерствин приказӗ тӑрӑх «Хисеплӗ строитель» ятне панӑ...

Хисеплӗ строитель! Мӗн тери ырӑ ят ку!

Чухӑн чӑваш ачи, мӗн пӗчӗкренпех ӗҫре пиҫсе, нумай хура-шур курса ӳснӗ ҫамрӑк, салтак — хисеплӗ строитель. Мирлӗ, телейлӗ пурнӑҫ строителӗ..



## *ОЛЬТИКАССИ ХЁРЁСЕМ*

Ентĕ тул та çутăлма пуçларĕ, унтан ял хĕррин-чи ватă йăмра тураттисем хушшипе пĕлĕт хĕрри хĕрелме пуçлани курăнчĕ, шкул умĕнчи пахчара ирхи кайăксем, çĕнĕ кун пуçланнăшăн савăнса ха-васланнă пек, турат çинчен турат çине сиксе чĕвĕлтетме тытăнчĕç, анчах паян вуннăмĕш клас-ран вĕренсе тухса аттестатсем илнĕ çамрăк йĕкĕт-семпе хĕрсем çаплах ташларĕç-ха. Малтан чăваш ташшисене ташларĕç вĕсем, унтан вальс, ун хыç-çăн полька, кроковяк... Ташлаççĕ-ташлаççĕ те ларса канаççĕ, тула тухса уçăлса кĕреççĕ, унтан каллех мăшăрăн-мăшăрăн тăрса çаврăнма тытă-наççĕ... Ĕмĕрне те кун чухлĕ ташламан вĕсем!

Акă, йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ, пиçнĕ хăмла çырли тĕслĕ пулса кайнă купăссă — ыттисем пекех паян вĕренсе тухнă сарлака хулпуççиллĕ йĕкĕт — куçĕсем çине анса кайнă сарă çӳçне аллипе пĕрре шăлсах каялла çавăрса хучĕ те купăсне каллех пĕтĕм вăйпа туртса ячĕ.

— Прощальный вальс! — кăшкăрчĕ хăй вырăсла.

Самантранах класс пӳлĕмĕ авалхи «Над волнами» вальс кĕввипе тулса ларчĕ, купăс сасси уçă чӳречесем витĕр ирĕкелле ярăнса тухса ирхи лăпкă сывлăшра янрама тытăнчĕ. Мăшăрсем каллех çăмăллăн çаврăнма пуçларĕç...

Нумайччен туртрĕ хăйĕн кивĕрех купăсне кăвак куçлă йĕкĕт, пӳрнисем те ывăнчĕç унăн, тăнлавĕсем тăрăх шултра шăрçа пек тар юхрĕ, анчах ташлакансем хĕрхенме шутламарĕç те ăна, пĕр чарăнмасăр, пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл калаçса çаврăнчĕç. Юлашкинчен музыкантăн тӳсĕмĕ пĕтрĕ. Вăл купăсне вăрăммăн çухăртса илчĕ те:

— Çитет! — терĕ. — Эсир нумаййăн, эп — пĕччен. Тек пултараймастăп.

— Куншăн та тавтапуç, тусăм! — ун умне сиксе пырса шӳтле пуç тайрĕ ташланисенчен пĕри.

— Чăнах та, çитет пулĕ!

— Киле кайма та вăхăт ĕнтĕ... — илтĕнчĕç сасăсем.

— Атьăр, кайрăмăр!

Тепĕр темиçе минутран çамрăксем шавласа, кулкаласа, тĕркĕлтипех урама тухрĕç. Анчах тăрукăх саланса каймарĕç, каллех пурте пĕрле пухăнса

тăчĕç. Уйрăлас килмест пулмалла вĕсен пĕр-пĕринчен, ним тусан та уйрăлас килмест курăнать... Виçĕмкун çеç вĕсем пурте шкул ачисем пулнă, анчах ĕнер çитĕнсе çитни çинчен пĕлтерекен аттестатсем илнĕ те — кĕçĕр уйрăлу каçĕ туса ирттерчĕç. Юлашки каç... Тек ĕнтĕ вĕсем нихçан та çакăн пек пурĕ пĕрле пулас çук. Ĕненмелле те мар...

— Сывă пул, тăван шкул! — кăшкăрчĕ тахăшĕ, шкул çурчĕ еннелле аллипе сулса.

— Сывă пул, ан ман пире!

Йĕкĕтсенчен пĕри уçă та янравлă сасăпа хыттăн юрласа ячĕ:

> — Широка страна моя родная,
> Много в ней лесов, полей и рек..

Кĕçех унпа пĕрле ыттисем те юрлама тытăнчĕç:

> — Я другой такой страны не знаю,
> Где так вольно дышит человек...

Алла ярăн çамрăк пĕр çын пек хавассăн юрлани ыйхăран вăранма ĕлкĕреймен ял урамĕсем тăрăх çав тери илемлĕн те вăйлăн янраса кайрĕ. Унтан, юрлама чарăнмасăрах, çамрăксем пĕр-пĕрин аллисенчен тытса, урамăн пĕр енчен тепĕр енне çити сарăлса, ахах пек çутă сывлăмпа витĕннĕ ешĕл çемçе курăка чăштăртаттарса, майĕпе хăпарсах пыракан хĕвеле хирĕç утрĕç.

> — Молодым везде у нас дорога...

Пĕр юррине юрласа пĕтерсен теприне юрларĕç вĕсем, пĕрре вырăсла, тепре чăвашла. Унтан татах, татах... Вĕсен ниепле те уйрăлас килмерĕ... Чăнах та ара, епле уйрăлас килтĕр-ха? Вĕсем вунă çул

хушши пěрле вěреннě-çке, вунă çул пěр пурнăçпа, пěрешкел интерессемпе пуранна, пěр-пěрине пулăшна, хăш чухне, чăн та, тавлашнисем те, кăштах хирěçсе илнисем те пулна, анчах ун пеккисене часах манна, çав хушăрах вара, хăйсем сисмесěрех, ӳссе, пысăкланса пынă. Ак халě вěсен ачалăхě иртсе кайнă, паянран пуçласа вěсем ӳссе çитнисен шутне кěреççě. Вěсен уйрăлмалла. Малашне ěнтě кашнин хăйěн расна çул пулать, расна шăпа. Пурнăç çулěпе ăнăçлă утма, Тăван çěршывшăн усăллă çын пулма пур майсем те, пур условисем те пур, ху ан ӳркен кăна, ху лайăххрах тăрăш, вара хуть те мěнле ěмěт те тулать. Çамрăксем умěнче пирěн пур çулсем те уççине вěсем пурте пěлеççě.

...Шкула çывăхри урăх ялсенчен çӳренě туссемпе тантăшсене униче хыçне çити ăсатса ярсан, ку ялтисем те килěсене саланма пуçларěç. Акă, пěр майлăрах тумланнă виçě хěрача анат енчи ансăртарах урама кěрсе кайрěç. Вěсем — пěр-пěринчен нихçан уйрăлман хěр-тантăшсем: Лиза Иванова, Клава Васильева тата Валя Ершова. Пěр урамра çуралса ӳснěскерсем, вěсем пěчěк чухне пěрле выляна, çунашкасемпе ярăнна, унтан, çиччě тултарсан, ялти шкулăн пěрремěш класне виççěшě те пěрле кěнě, кайран вара вунă çул хушши пěрле вěреннě, ялан тенě пекех пěр партă хушшинче ларнă.

Шкулта вěреннě чух Лиза, Клава тата Валя пěр вăхăтрах комсомола кěнě, обществăлла ěçсене активлăн хутшăннă, драмкружок лартакан спек-

такльсенче вылянă, шкулти хорта юрланă, праçниксем вăхăтĕнче иртттерекен вечерсенче чăвашла та, вырăсла та сăвăсем вуланă. Çак уйрăлми туссене учительсем чунтан юратнă, ма тесессĕн вĕсем яланах йĕркеллĕ пулнă, лайăх вĕреннĕ; юлташĕсем те хисепленĕ вĕсене, мĕншĕн тесен вĕсем вĕренӳре кăштах кая юлакансене яланах пулăшма хатĕр пулнă...

Çуллахи каникул вăхăтĕнче çак хĕрачасем тăрăшсах колхозра ĕçленĕ — çум çумланă, утта кайнă, тырă вырнă, хире тислĕк турттарнă, кĕскен каласан — пур ĕçсене те хутшăннă. Хăш чухне тата кĕрешсе те ĕçлеме кайнă. Сăмахран, мана вĕсем пĕррехинче колхозри ытти хĕрсемпе пĕрле лесхоза çамрăк хырсемпе чăрăшсем лартма кайса чылай ĕçлени çинчен каласа кăтартрĕç.

— Учебниксемпе тетрадьсем илме укçа кирлĕччĕ пире, тата хамăра валли пĕрер лайăх платье çĕлетес килетчĕ,— терĕ Клава Васильева,— çавăнпа кайса ĕçлерĕмĕр...

— Анчах вăхăт питĕ лайăх иртрĕ унта пирĕн,— хушса хучĕ Валя Ершова. — Юрла-юрла ĕçлеттĕмĕр! Кун каçа пĕрмай пĕшкĕнсе ĕçлесе ывăнса çитеттĕмĕр ĕнтĕ, анчах пурĕ пĕр харăс, вăрмана янратмалла пĕр-пĕр юрă юрласа яраттăмăр та — ывăнни таçта кайса кĕретчĕ çав! Йышпа ĕçлеме пит аван вĕт...

Вĕсен ĕçлемесĕр пурăнма юраман çав, епле пулсан та ĕçлемелле пулнă. Виççĕшĕ те тăлăх пулна вĕсем. Лиза Ивановăн ашшĕ аслă Ленин хули-

не тискер Гитлерăн хурахла çарĕсенчен хӳтĕлесе паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ, Клава Васильевăн ашшĕ те фронтра хĕрĕх пĕрремĕш çултах ним сассӑр хурасăр çухалнă, Валя Ершова та ашшĕсĕр, тăлăххăн ӳснĕ. Анчах килĕсенче вĕсен пурин те çемйисем пысăк пулнă — шăлнĕсемпе йăмăкĕсем пĕринчен тепри пĕчĕкрех. Амăшĕсем кăна ĕçлесен, вĕсене тутă усрама, тумлантарма ăçтан пултарччăр-ха ĕнтĕ? Кусем, шкулта вĕренекеннисем, чăн асписем пулнă, çавăнпа та вĕсем пĕтĕм вăйранах амăшĕсене пулăшма тăрăшнă. Пур чухне те, пур çĕрте те ĕçчен пулнăшăн вĕсене ял çыннисем ялан ырланă, мухтанă.

— Вăхăчĕ-вăхăчĕпе пурнăç питĕ йывăрланса çитетчĕ, — теççĕ хĕр-тантăшсем, — тепĕр чух аннесем пире шкула çӳреме пăрахтарасси çинчен те калаçкалатчĕç. Килте ытларах ĕçлемелле, тетчĕç. Анчах эпир епле пулсан та вăтам шкултан вĕренсе тухас, теттĕмĕр. Вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн çул уçă пулать-çке... Вĕренес тетĕн-и, ĕçлеме кĕрес е колхозрах юлас кăмăл пулать-и — хăвăн ирĕк! Çавăн пиркиех эпир вĕренме пăрахас мар, тесе çирĕп шут турăмăр...

Чăнах та вара, вĕсем хăйсен ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕ: 1954 çулхи çуркунне виççĕшĕ те вуннăмĕш класран вĕренсе тухса, ӳссе çитнине пĕлтерекен аттестатсем илнĕ.

Хăйсен малашнехи пурнăç çулĕ çинчен, шкултан вĕренсе тухсан мĕн тăвасси çинчен вĕсем малта-

нах, вуннăмĕш класа куçичченех шухăшласа хунă-мĕн. Çирĕп план пулнă вĕсен...

Пĕррехинче, пушă вăхăтра, класс руководителĕ Валентина Антоновна Антонова, пур ачасем те хисеплекен ватăрах учительница, хăйĕн воспитанникĕсене пĕр çĕре пухнă та вĕсем шкултан тухсан мĕн тума шутлани çинчен сăмах хускатса янă. Ачасен шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсем питех те тĕрлĕ тĕслĕ пулнă. Арçын ачасенчен хăшĕсем çар шкулне лекесси çинчен ĕмĕтленнĕ — пĕрисем авиацине, теприсем артиллерине кăмăлланă, хăшĕсем механизаторсем—трактористсем, комбайнерсем пулатпăр, тенĕ, тата ытти те. Хĕрачасем те тĕрлĕрен шутланă: пĕрисем учительница пуласшăн, теприсем фельдшер е акушерка, хăшĕсем колхозрах юлатпăр, тенĕ. Калаçмалли черет Лиза Иванова, Клава Васильева тата Валя Ершовăна çитсен, вĕсем учительницăна тӳрех çапла калана:

— Эпир, Валентина Антоновна, работницăсем пулас, тетпĕр. Шупашкарти пир-авăр комбинатне ĕçе кĕрес кăмăл пур пирĕн. Анчах иккĕленетпĕрха: йышăнĕç-ши пире унта? Пирĕн нимĕнле специальность те çук вĕт-ха. Машинăсем унта питĕ кăткăс, теççĕ... Хаçатсенче ӳкерчĕксем куратпăр та — чăнах та иккĕленмелле. Çапах та кайса пăхас, тетпĕр.

Класс руководителĕ хĕрсен çакăн пек ĕмĕтне тӳрех ырланă.

— Тĕрĕс шут тунă эсир, хĕрачасем,—тенĕ вăл.— Пирĕн промышленность çултан-çул ӳссе пырать,

пур çёрте те рабочисем çав тери нумай кирлё. Çамрăксене вёрентсе хатёрлемесен, камсенчен хатёрлемелле-ха ёнтё вёсене? Хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха эсир...

Унтан, кăштах шухăша кайса ларнă хыççăн, учительница çапла хушса хунă:

— Йывăрлăхсенчен ан хăрăр. Эсир халь ёнтё самаях вёреннё çынсем, сирён нимёнле кăткăс машинăсенчен те хăрама кирлё мар. Сире вёрентеççё унта, хăнăхтараççё. Хăвăр лайăхрах тăрăшсан, кёске вăхăтрах вёренсе ситсе квалификациллё работницăсем пулма пултаратăр, ним иккёленмелли те çук...

Учительница çакăн пек кăмăллăн, ăшшăн калаçни хёрачасене хавхалантарнă, пир-авăр комбинатне ёçлеме кайса кёрес кăмăла тата ытларах çёкленё. Çавăнтан вара вёсем уп çинчен час-часах калаçнă:

— Акă вёренсе пётеретпёр, аттестатсем илетпёр те тÿрех Шупашкара каятпăр...

...Июнь уйăхён вёçёнчи лăпкă ирхине, шкултан вёренсе тухнă ятпа тунă вечертан тулли кăмăлпа таврăннă чух, вёсем каллех çавăн çинчен сăмах хускатса ячёç.

— Ну, тусăмсем, хăçан тапранса тухăпăр ёнтё Шупашкаралла? — ыйтрё варринче утса пыракан Лиза, тантăшёсене куçёсенчен пăхса.

— Вăраха ямастпăр пулё, хăвăртрах каяс пулать, — терё Валя ним тытăнса тăмасăрах.

Анчах Клава темшён ытла тăруках чёнмерё.

— Эс ма нимĕн те шарламастăн? — тĕлĕнерех ыйтрĕ Лиза. — Урăхла шут тытмарăн пулĕ-çке?

— Çук, — терĕ Клава, — урăхла шут тытман, анчах та пирĕн кĕркуннеччен тăхтамалла пулĕ. Çу каçа колхозра тăрăшăпăр, килтисем валли ĕçкунĕсем тăвăпăр, унтан вара кайма та пулать. Йăмăксемпе шăллăмăрсем валли çăкăр-тăвар кирлĕ вĕт-ха. Çавăн çинчен шухăшланă-и эсир? Комбината пырса кĕнĕ-кĕменех эпир килтисене пулăшмалăх ĕçлесе илес çуккине хăвăрах ăнланмалла...

Клава сĕннипе хĕрсем килĕшрĕç:

— Чăнах та çапла тăвăпăр эппин...

Вĕсем çăвĕпех колхозра пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕç, кĕр енне вара, сентябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче, яланхи пекех виççĕшĕ пĕрле, Шупашкара кайрĕç.

Пир-авăр комбинатĕнчи кадрсен пайĕ умне вăл кун ĕçе кĕрес шутпа пынă çынсем нумай пухăннă. Кунта ун чух шăпăх çамрăксене вĕренме йышăннă-мĕн. Хулари хĕрачасем те пулнă черетре, ялсенчен пынисем те. Виçĕ тус иккĕленме пуçларĕç, пĕр-пĕринпе пăшăрханарах калаçса илчĕç:

— Кун чухлĕ халăх хушшинче кĕме май килмест пулĕ...

— Килни ахалех пулчĕ курăнать!

Анчах кадрсен пайĕнчен пĕри тухрĕ те чăн малтан вăтам шкул пĕтернисене йышăнасси çинчен пĕлтерчĕ.

— Аттестат илнисем маларах тухăр! — терĕ вăл.

Вара Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ольтикассинчен

килнĕ виçĕ çамрăк хĕр — Лиза Иванова, Клава Васильева тата Валя Ершова черетрен пăрăнсах çав çын патне пычĕç те, лешĕ вĕсене пӳлĕме илсе кĕрсе кайрĕ.

— Телейлĕ пулчĕç кусем, вĕсене илеççех ĕнтĕ, — тесе юлчĕç черетрисем.

Хĕрсен докуменчĕсемпе паллашсанах, начальник вĕсене вĕренме илетĕп, терĕ, анчах илни çинчен приказ çырма малтан хулара хваттер тупма, милицие кайса çырăнма хушрĕ. Каçченех çӳрерĕç вара хĕрсем хваттер шыраса, каçалапа çапах та пĕр карчăк патне вырнаçса, тепĕр ирхине каллех комбината çитрĕç.

— Халь ĕнтĕ пĕтĕмпех йĕркеллĕ, — терĕç вĕсене кунта. — Виçĕ кунтан килетĕр... Анчах халĕ сире хăвăр ĕçлемелли цеха илсе каяççĕ, унти хăшпĕр йĕркесемпе паллаштараççĕ. Хăнăхма тытăнас пулать сирĕн...

— Çав тери пăлхантăмăр эпир ун чух, — кула-кула каласа параççĕ хĕрсем, — йышăнмаççĕ пулĕ тесе чун юлмарĕ... Хамăра пирвайхи хут цеха илсе кĕртсен вара хăрамаллипех хăраса кайрăмăр! Çĕршер машин ĕçлет те-ха унта... Питĕ шавлă, хăлхасем хуплансах ларчĕç. Нимĕн те илтĕнмест. Алăк патĕнче чарăнтăмар та юпасем пекех хытса тăтăмăр — ни малалла, ни каялла, тенĕ пек. Пире илсе пынă çынни пирĕн çине пăхса кулать, хăлхаран кăшкăрать: ан шикленĕр, малтанлăха кăна çавăн пек вăл, кайран хăнăхатăр акă, çак шава

пачах илтми пулатар, тет. Тĕрĕс калана-мĕн вал, кайран чăнах та хăнăхрăмăр...

Çав кунах, каçхине, вĕсем хăйсен ялне çав терн тулли кăмăлпа, савăнăçлă таврăннă, хăйсем комбинатра вĕренме вырнаçни çинчен тăванĕсемпе тантăшĕсене каласа хĕпĕртеттернĕ, икĕ кунтан вара, килте тунă пĕчĕк чемодансем çĕклесе, каллех Шупашкаралла утнă. Вĕсем умĕнче ĕнтĕ çул уçă пулнă, ыранхи кун пирки вĕсен ним чухлĕ те иккĕленмелли пулман. Малашнехи пĕтĕмпех вĕсем хăйсем тăрăшнинчен килнĕ!

...Лиза Ивановăна мотальнăй (çип кумакан) цеха вырнаçтарнă, Клава Васильевăпа Валя Ершовăна — пир тĕртекен цеха янă. Вĕсене пурне те опытлă работницăсем çумне тăратнă, лешсем вара пирвайхи кунран пуçласах вĕсене вĕрентме тытăннă, хăйсем мĕн пĕлнипе, ĕçри опычĕпе паллаштарнă. Чунтан тăрăшса вĕрентнĕ! Клавăпа Валя, сăмахран каласан, комбината пырса кĕрсен хăйсене вĕрентнĕ Полина Доматьевăпа Елена Александровăна паян кун та ырăпа асăнса тав тăваççĕ. Вĕсем, çав икĕ хĕрарăм, Ольтикасси хĕрĕсем пекех, чăваш ялĕсенчен кунта нимĕнле специальноçсăр пырса кĕнĕ пулнă, комбината тунă çĕрте ĕçленĕ, каçсерен вĕреннĕ, унтан цеха куçнă та квалификациллĕ ткачихăсем пулса çитнĕ, цеха çĕнĕрен пырса кĕрекен çамрăк хĕрсене вĕрентнĕ.

Кунсем иртнĕ, эрнесем. Уйăх хыççăн уйăх...

Епле пулсан та, ĕçе лайăх вĕренес ĕмĕтпе килнĕ Ольтикасси хĕрĕсем çав ĕмĕте çине тăрсах пурнă-

ҫа кӗртсе пынӑ. Вӗсем опытлӑ работницӑсем мӗнле ӗҫленине тимлӗн сӑнанӑ, вӗсен кашни кӑтартуне, канашне астуса юлма тӑрӑшнӑ, хӑйсем ӗҫлемелли станоксене тӑрӑшса вӗренсе пынӑ.

Мотальщицӑсен ӗҫӗ ткачихӑсен ӗҫӗнчен ҫӑмӑлтарах, темелле. Лиза Иванова комбината пырса кӗрсен пӗр-икӗ уйӑхранах хӑй тӗллӗн, 17 йӗкепе ӗҫлеме тытӑннӑ. Валя Ершовӑпа Клава Васильевӑн пир тӗртекен цехра норма тӑрӑх ултӑ уйӑх вӗренмелле пулнӑ, анчах вӗсем те срокран икӗ уйӑх малтан хӑйсем тӗллӗн, никам пулӑшмасӑр ӗҫлеме пуҫланӑ. Малтанхи вӑхӑтра вӗсем 6-шар станокпа ӗҫленӗ, пӗр ҫур ҫултан 12-шер станокпа ӗҫлеме кусна, тепӗр ҫулталӑкран вара 24-шар станокпа ӗҫлеме пуҫланӑ. Лиза Иванова ҫав вӑхӑтра 25 йӗкепе ӗҫлеме тытӑннӑ...

Ольтикассинчи виҫӗ ҫамрӑк хӗр хӑйсен ялӗнчи шкулта вунӑ класс пӗтерсе комбината пырса кӗнӗренпе икӗ ҫул та ҫитмен — вӗсем лайӑх квалификациллӗ, производствӑра малта пыракан ӑста работницӑсем пулса тӑнӑ. Сменӑри нормӑна вӗсем пӗрмаях 130—140 процент тултаракан пулнӑ. Малтанхи вӑхӑтра ҫитменлӗхсем пулкаланӑ ӗнтӗ (унсӑр пулмастех!), анчах каярахпа, ҫине тӑрсах вӗреннипе, ҫитменлӗхсем пулма пӑрахнӑ. Хӗрсем чи лайӑх продукци туса кӑларнӑ, комбинатра вӗсем ҫинчен ырӑ ят сарӑлнӑ; вӗсен ӗҫӗсем епле ӑнса пыни ҫинчен хаҫатсенче те ҫырма пуҫланӑ. Ҫакӑ вара вӗсене тата лайӑхрах ӗҫлеме хавхалантарнӑ.

...Чӑн малтан эпе ҫак Ольтикасси хӗрӗсемпе

пĕлтĕр çулла, вĕсем ĕçленĕ çĕрте, цехра паллашрам. Унта вĕсемпе калаçма май килмерĕ. Қанмалли кун вара энир хулари паркра тĕл пултăмăр. Хĕрсем таçта уява кайма хатĕрленнĕ пекех тумланнăччĕ — хитре платьесемпе, капăр пурçăн тутăрсемпеччĕ. Çавăн чух каласа пачĕç те вĕсем мана хăйсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен. Лайăх пурăнатпăр, çителĕклĕ ĕçлесе илетпĕр, килтисене те пулăшсах тăратпăр, пушă вăхăтсенче кинона, театрсене çӳретпĕр, кĕнекесем вулатпăр, малашне тата лайăхрах ĕçлеме шутлатпăр, терĕç вĕсем.

Қăçал, нумаях пулмасть, вĕсенчен иккĕшинпе — Клава Васильевăпа тата Валя Ершовăпа каллех тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ.

— Мĕнле пурăнатăр, хĕрсем? Ĕçсем еплерех пыраççĕ?—тесе ыйтсан, вĕсем мана тулли кăмăлпа:

— Питĕ лайăх, — терĕç.



## *ЁМЁТ ТУЛАТЬ...*

Çамрăксемшĕн —
пур çулсем те уçă...
*(Юрăран)*

...Куна пире Марфа Афанасьева, комбинатăн пир тĕртекен фабрикин пĕрремĕш цехĕнче ĕçлекен çамрăк ткачиха каласа пачĕ. Эпир унăн калавне йĕркипе çырса пытăмăр та хăй мĕнле каласа панă — çавăн пекех пичетлесе кăларатпăр.

* * *

...Эпĕ — Сĕнтĕр районĕсем, Мăн Тутаркас ялĕнче çуралса ÿснĕ. Манăн аттепе анне ялта колхоз тусассăнах халăхпа пĕрле ĕçлеме тытăннă, анчах, çемье пысăк пирки, пирĕн пурнăç ытла вăйлах

пулман. Ачасенчен эпĕ — чăн асли, вăтăрмĕш çулта çуралнă, ман хыççăн тата тăвата шăллăмпа пĕр йăмăк пулнă. Тăрантар-ха çавăн чухлĕ çăвара! Ĕçлекенĕсем аттепе анне кăна пулнă вĕт. Çавăнпа йывăр килнĕ те вĕсене. Чăн та, халь ун пек мар ĕнтĕ, ӳсрĕмĕр, çын пултăмăр, темелле. Эпĕ ака кунта, комбинатра ĕçлетĕп, ман хыççăнхи Николай Совет Çарĕнчи служба срокĕ тухсан Донбасра ĕçлеме юлчĕ, икĕ çул ĕнтĕ унта çĕр кăмрăкĕ кăларать, киле пĕрмаях укçа ярса тăрать; иккĕмĕш шăллăм — Евстафи — колхозра, тăваттăмĕш çул бригадирта çӳрет. Ыттисем пурте шкулта вĕренеççĕ, çулла — вăйĕсем çитнĕ таран ĕнтĕ — колхозра ĕçлеççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, хальхи пурнăç çине ӳпкелешмелли çук пирĕн. Лайăх пурăнатпăр.

Эпĕ мĕнле майпа ткачиха пулни çинчен пĕлес, тетĕр-и? Акă мĕнле пулчĕ вăл.

1947 çулта эпĕ вунулттă тултарса вунçиччĕ çине пусрăм. Хам ун чухне Сĕнтĕрти вăтам шкулăн саккăрмĕш класĕнче вĕренеттĕм. Тăрăшсах вĕренеттĕм, мĕншĕн тесен манăн епле пулсан та ытларах вĕреннĕ çын пулас килетчĕ...

Пирĕн çемьере пурнăç — малтанах каларăм — ытла çăмăлах марччĕ ун чух. Йышлăн пурăннипе тумтирсем те начартарахчĕ, тыткаламалăх укçа та çукрахчĕ. Аттепе анне пире ăна систересшĕнех марччĕ ĕнтĕ, анчах та эпĕ ăна хамах лайăх куранттăм çав, тепĕр чух пире, шкулта вĕренекенсене, хут-кăранташ илсе пама та укçа тупăнмастчĕ те...

Эпĕ çакăн пек ĕмĕтпе пурăнаттăм: темле йывăр

килсен те ватам шкултан вěренсе тухатап, унтан аслă шкулта вěренетěп, е учительница, е агроном пулатăп, ěçлеме тытăнатăп та — аттепе аннене хамран кěçěннисене ӳстерсе çын тума çăмăлтарах пулать. Пěрмай çавăн çинчен шутлаттăм. Анчах манăн пурнăç çулě сасартăк улшăнса кайрě.

Сěнтěрте, хăвăрах пěлетěр ěнтě, пир тěртекен фабрика пур. Унăн машинисене, пěтěм оборудованине вăрçă вăхăтěнче фронт çывăхěнчи тахăш хуларан илсе килсе вырнаçтарнă. Пысăк мар вăл фабрика, анчах чиперех ěçлет. Хальхи вăхăтра унта чӳречесем çине кармалли шторăсем — шăтăклă чаршавсем тěртеççě.

Шкулта вěреннě чух эпир çак фабрикăна темиçе хут та экскурсие кайса курсаттăмăр. Унта пурте тенě пекех таврари ялсенчен пынă хěрсем ěçлетчěç. Вěсем ěçлени çине эпир питě интересленсе, кăштах тěлěнсе те пăхаттăмăр...

Пире, пěчěк хěрачасене, пěррехинче фабрикари мастер Анна Петровна Смирнова кăтартса çӳрерě. Вăл — хамăртан инçетрисем мар, Анаткас-Хачăкри чăваш хěрě; вăрçă вăхăтěнче Шупашкарти пир-авăр фабрикине кайса кěнě те, каç-каç фабрика çумěнчи техникумра вěренсе мастер пулса тăнă иккен. Уп çинчен эпě кайран пěлтěм.

— Ӳсеҫн пирěн пата ěçлеме килěр, ачасем, эпир сире вěрентсе лайăх работницăсем, ăста ткачихасем тăвăпăр, — терě çав Анна Петровна пире ăсатса кăларса янă чух. — Хěрачасемшěн ку — питě лайăх ěç!

Эпир ун чухне улттӑмӗш класра ҫеҫчӗ те-ха, ана хирӗҫ нимех те калама пӗлмерӗмӗр. Тата эпир ун чухне хамӑр ӳссен кам пуласси ҫинчен шухӑшлама та пӗлмен пулӗ-ха.

Анчах ҫакӑн хыҫҫӑн икӗ ҫултан мана чӑнах та ҫак фабрикӑна пырса кӗме тӳр килчӗ. Пӗтӗм ӗҫе анне пуҫласа ячӗ.

— Ачам, — терӗ вӑл мана пӗрре, эпӗ уроксем вӗренсе ларнӑ чух ман патӑма пырса. — Ачам, итле-ха эпӗ каланине...

— Мӗскер, анне?

— Паян эпӗ Сӗнтӗрте пултӑм...

— Мӗн вара?

— Унта фабрикӑна сан пек хӗрачасене илеҫҫӗ, тет. Вӗренме йышӑнаҫҫӗ, тет эппин. Ҫавна илтрӗм те, юриех вӗсен кантурне кӗрсе тухрӑм, сан пирки калаҫса пӑхрӑм... Сывлӑхӗ лайӑх пулсан — илме пултаратпӑр, терӗҫ. Кун пирки аҫупа канашларӑм ӗнтӗ — вӑл та хирӗҫ мар. Мӗн калӑн-ши эсӗ? Килӗшетӗн-и фабрикӑна кайма? Э?

Эпӗ аннене хирӗҫ тӑруках нимӗн те калаймарӑм. Манӑн пит-куҫ пӗҫерсе илчӗ, чӗре хӑвӑрт-хӑвӑрт тапма тытӑнчӗ.

— Шухӑшласа пӑх-ха, — терӗ анне каллех. — Пӗр ҫур ҫултанах ӗҫлеме вӗренсе ҫитме пулать, теҫҫӗ...

— Шкула ҫӳреме пӑрахмалла пулать-и вара? — чӗтрекен сасӑпа ыйтрӑм эпӗ. — Манӑн вӗренсе пӗтерес килет-ҫке, анне...

— Вӑл апла пулӗ-та-ха, ачам... Лере те вӗрен-

теççĕ вĕт-ха, çитменнине тӳрех ĕçлеме пĕлекен çын тăваççĕ. Тата — эс пĕччен мар вĕт, сан пеккисем нумай пулаççĕ унта, пурте шкула çӳрекен хĕрачасем. Заявленисем чылай пухăннă тет ĕнтĕ. Ну, мĕнле?

Эп хурлантăм. Манăн шкултан пăрахса каяс килмерĕ. Анчах ним тума та çук — аттепе аннене итлес пулать... Шухăшласан-шухăшласан хам та çапла шут турăм: фабрикăри работница пулни — мĕнрен начар-ха вăл? Тепĕр тесен, ĕçленĕ чух та вĕренме пулать-çке, ан ӳркен кăна! Тăрăшсан хуть те мĕнле ĕмĕт те тулма пултарать...

Аннепе эпир шăматкун каç калаçрăмăр, тунтикун ирхине вара унпа иксĕмĕр Сĕнтĕре кайса тăхăр сехет тĕлне фабрика кантурне çитсе кĕтĕмĕр.

— Хамăн хĕрачана илсе килтĕм сирĕн пата,— терĕ анне, аллинчи хута пĕр хĕрарăма тăсса парса. — Ĕçлеме вĕрентес, тетпĕр...

Хĕрарăм ман заявленине вуласа тухрĕ те хам çине тăрăххăн пăхса илчĕ. Эпĕ ним чĕнмесĕр тăтăм.

— Тухтăр патне кайса килĕр, сывлăхне тĕрĕслеттерĕр, — терĕ вăл аннене.

Манăн сывлăх чиперех пулнă.

Тепĕр кун ирхине мана ытти темиçе хĕрачапа пĕрле цеха илсе кĕртрĕç. Станоксем шакăртатса кăна тăраççĕ, ним илтĕнмест! Юрать-ха, эпĕ кунта малтан пулса курнă та — ытлашши тĕлĕнмерĕм, анчах пирвайхи хут пырса кĕнисем хăрасах кайрĕç пулмалла...

Çапла пуçланчĕ манăн производствăри пурнăç.

Малтанах мана «уточница» гурĕç. Уточница тесе пир тĕртекен работницăсене çĕрĕсем валеçсе çӳрекене калаççĕ. Ĕçĕ йывăр мар вăл, вăрт-варт-рах çаврăнкаламалла çеç. Пĕр çулталăка яхăн туса пытăм эпĕ çак ĕçе, никам та тиркемерĕ мана. Анчах уточница — пысăк специальность мар-çке вăл... Çавăнпа та эпĕ хам ĕçленĕ хушăрах ткачихăсем станоксемпе мĕнле ĕçленине сăнаса вĕренме тăрăшрăм. Кăшт пушă вăхăт пулсанах пăхса тăратăп, ыйтса пĕлетĕп...

Çапла пĕр вунă уйăх ĕçлесе пурăнсан, пĕрре мана цехри мастер Анна Петровна — хайхи эпир пĕтĕм класĕпе экскурсие килсен пире производствăна пыма йыхăрнă хĕрарăм — хăй патне чĕнсе илчĕ.

— Ну, Марфуша, — терĕ вăл ман çине кăмăллăн пăхса, — çитет пулĕ сана çĕрĕсем валеçсе çӳреме. Чăн-чăн ĕçе вĕренес пулать санăн. Ырантан пуçласа сана тĕртме вĕренекен ученица тесе шутлăпăр. Сана эпĕ хам вĕрентме пуçлатăп. Юрать-и?

— Юрать, Анна Петровна, юрать! Эпĕ хам та ыйтасшăнччĕ кун пирки... Хăюлăх çитмерĕ кăна, — терĕм ăна, çав тери хавасланса кайса.

Виçĕ уйăха яхăн вĕрентсе, станоксемпе ĕçлеме хăнăхтарса пычĕ вăл мана. Малтан эпĕ икĕ станокпа ĕçлерĕм, унтан — тăваттăпа... Икĕ уйăхран норма тултарма пуçларăм. Унтан вара ултă станок пачĕç те:

— Малашне ĕнтĕ ху тĕллĕн ĕçлетĕн! — терĕç.

Станокĕсем унта кунти пеккисем мар, кивĕ йышшисемччĕ, пир-авăрне те сахалтарах тĕртсе кăлараççĕ, норма тăрăх кашни станок пĕр сменăра 24 метр памалла. Анчах, тăрăшарах тата пĕлсе ĕçлесен, унтан чылай ытларах тĕртме пулать. Хам тĕллĕн ĕçлеме тытăнсан пĕрер уйăхран эпĕ нормăна 120—130 процент тултаракан пултăм...

Пĕррехинче ман пата анне пычĕ.

— Кĕрсе курма пулмасть-ши эс ĕçленĕ çĕре? — терĕ вăл, кăштах именнĕ пек пулса. — Мĕнлерех сирĕн унта... Ĕмĕрне те курман та машинăпа тĕртнине...

Эпĕ сменăри мастерпа калаçса пăхрăм. Çапла та çапла, анне пирĕн техникăна кĕрсе курасшăн, терĕм. Цеха кĕртсе кăтартма юрамĕ-ши ăна?

Чармарĕ мастер, пĕр сăмахсăрах ирĕк пачĕ. Вара, хамăн смена пуçланнă май, эпĕ аннене хампа пĕрле цеха илсе кĕтĕм. Кĕçех эпĕ ĕçлеме тытăнтăм... Станоксем кĕрлесе ĕçлени, вĕсем çинчи пир тăрăхĕ хăвăрт вăрăмланса пыни çине анне çав тери тĕлĕнсе пăхса тăчĕ. Вăхăтран вăхăта ассăн сывласа, пуçне пăркаласа илчĕ...

— Миçе аршăн тĕртрĕн ĕнтĕ паян, хĕрĕм? — ыйтрĕ вăл каçхине, эпĕ киле таврăнсан.

— 185 метр, — терĕм эпĕ.

— Пĕччен çавăн чухлĕ тĕртрĕн-и?

— Куртăн-çке ĕçленине...

Анне шухăша кайнă пек пулса ларчĕ.

— Ĕлĕк çавăн чухлĕ пир тĕртме пирĕн мĕн чухлĕ ĕçлемелле пулнă-ши? — терĕ вăл унтан. — Ăна

шутласа та кăларас çук пулĕ... Вăт, самана килсе çитрĕ! Сакăр сехет хушшинче пĕр çын икçĕр метра яхăн тĕртме пултарать. Шутласан тĕлĕнсе хытса каймалла вĕт!

— Ку — нумай мар-ха вăл, анне,—терĕм ӑна.— Пирĕн фабрикăри машинăсем — кивĕ йышши, сахал тĕртсе кăлараççĕ, акă халь Шупашкарта çĕнĕ комбинат тăваççĕ, унти машинăсем вара темиçе хут та ытларах тĕртекен пулаççĕ, тет...

— Пулĕ, тем те пулĕ, — килĕшрĕ анне. — Çынисем халь ытла шутсăр ăсланса кайрĕç. Тем те тăвĕç!

...Пĕр çул иртрĕ çапла, иккĕ çине кайрĕ. Манăн ĕçсем ăнса пычĕç. Хисеп хăми çине кĕртрĕç ман ята, ик-виçĕ хут премисем пачĕç. Эпĕ комсомола кĕтĕм вăл хушăра, пурăна-киле фабрикăри комсомол организаци секретарĕн заместителĕ, унтан секретарĕ пулма суйларĕç. Тăрăшсах ĕçлерĕм, производствăра та ыттисене пример кăтартма тăрăшрăм. 1951 çулта, вырăнти Советсене суйланă чух, мана районри Совет депутачĕ туса хучĕç. Кунта та чылай ĕçлеме тиврĕ. 1952 çулта Коммунистсен партине кĕме шут турăм, рекомендацисем тупрăм, пĕр сăмахсăрах илчĕç.

Пурнăç манăн пур енчен те йĕркеллĕ пулса пычĕ, анчах çапах та кăмăл тулли пулмарĕ. Мĕншĕн ун пек, тетĕр-и? Хам вĕренеймен пирки кӳренеттĕм эпĕ. Манăн вĕренес килетчĕ...

Фабрикăра ĕçлеме хăнăхса çитсен, квалификациллĕ работница шутне кĕрсен, эпĕ унта çĕнĕрен

пырса кĕнĕ ултă хĕрачана вĕрентсе ткачиха турăм. Вĕсенчен пĕри, Анна Орехова, Ҫармăш хĕрĕ, Сĕнтĕрти фабрикăри чи лайăх та пултаруллă ткачиха шутланать, кăçал Мускава, Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен улттăмĕш фестивальне те кайса килчĕ-ха. Хам мĕн пĕлнине ыттисене вĕрентни, вĕсем эпĕ пулăшнипе квалификаци илни питĕ савăнтаратчĕ мана, анчах çав вăхăтрах эпĕ хам çинчен те шухăшлаттăм. Неушлĕ çак станоксемпе ĕçлеме вĕреннипех чарăнса лармалла манăн? Малалла кайма май çук-им вара? Акă Анна Петровна, ман пекех чăваш хĕрĕ, пир-авăр техникумне пĕтернĕçке, мастер пулнă. Эпĕ пултараймастăп-ши вара?

Пĕрре эпĕ çакăн пирки унпа хăйĕнпе калаçрăм.

— Вĕренес килет, Анна Петровна...

— Питĕ аван, — терĕ вăл. — Кун пирки эп сана хам та каласшăнччĕ-ха. Халлĕхе эс çамрăк, вăю та, ăсу та пур санăн... Вĕрен!

— Анчах мĕнле вĕренес-ха? Кунта техникум çук вĕт, Шупашкарта кăна.

— А эсĕ мĕн... Шупашкар тĕлне пĕлместĕн-и? — кăмăллăн кулса илчĕ вăл.

— Тĕлне пĕлетĕп те-ха, мĕнле пурăнас ман унта? Килтен пулăшма пултараймаççĕ мана...

— Пулăшни кирлĕ те мар. Кăнтăрла — ĕçлетĕн, каçхине — вĕренетĕн. Эпĕ çапла вĕрентĕм-çке. Совет Союзĕнче халĕ çĕршер пин çын çавăн пек вĕренет! Каçхи шкулсене мĕншĕн тунă тетĕн эсĕ? Ним те шутласа ан тăр, вĕçтер кăçал! Пултарнă таран хам та пулăшăп сана, уншăн ан пăшăрхан...

Анна Петровна çапла ăс панипе эпĕ çав кунсенчех Шупашкарти пир-авăр техникумĕн каçхи уйрăмне çыру çырса ятăм: çапла та çапла, терĕм, программа ярса парăр...

Ответ виçĕ кунтанах çитрĕ. Кĕме пултаратăн, çак программа тăрăх хатĕрлен, тенĕ. Тытăнтăм вара! Кăнтăрла ĕçлетĕп, киле таврăнсан пахчана е урăх пĕр-пĕр улахрах вырăна кайса ларатăп та — шав кĕнеке вулатăп. Çăвĕпех хатĕрлентĕм. Шкулта эпĕ япăх вĕренмен пулин те — пилĕк çул хушшинче чылаях маннă, çавăнпа та пĕтĕмпех çĕнĕрен аса илмелле пулчĕ — арифметикине те, вырăс чĕлхине те, ытгисене те. Эп вĕренесшĕн çуннине кура, килтисем те кансĕрлемерĕç — вĕрен кăна.

1953 çулхи август вĕçĕнче фабрикăра отпуск илтĕм те Шупашкара килтĕм. Тĕрĕссипех каласан — самаях шиклентĕм... Çăвĕпех тăрăшни кăлăхах пулмĕ-ши манăн, тетĕп. Анчах экзаменра аптрамарăм. Тăваттăран кая отметкăсем пулмарĕç манăн. Илчĕç! Çав тери хĕпĕртерĕм вара!.. Сĕнтĕре таврăнсан чăн малтан Анна Петровнăна шыраса тупса ыталаса илтĕм.

— Тавтапуçах, аппаçăм, мана ыр канашпа пулăшнăшăн!

Иксĕмĕрĕн те куççем шывланчĕç... Хурланнипе мар ĕнтĕ, савăннипе пулчĕ вăл.

Килтисене те хаваслантарчĕ эпĕ вĕренме кĕни. Анне, авалхи йăлапа, сăхха яра пачĕ. Тур пулăштăрах сана, хĕрĕм, тет...

Хайхи, техникума вĕренме кĕнĕ май, мана Сĕнтĕрти фабрикăран Шупашкара, комбината ĕçлеме куçарчĕç. Ун чухне комбинат тин çеç ĕçе кайма пуçланăччĕ-ха. Станокĕсем пирĕн Сĕнтĕрти пек мар, нумай кăткăсрахчĕ, çавăнпа та вĕсемпе ĕçлеме çĕнĕрен вĕренме тиврĕ. Анчах тăрăшсан пурте пулать. Ик-виç уйăхран вăл станоксем питĕ лайăх итлесе ĕçлеме пуçларĕç. Паллах, техникумра вĕренни те пулăшрĕ ĕнтĕ.

Малтан эпир вуникшер станокпа ĕçлеттĕмĕр. Пĕр-ик çул иртсен, çĕршыври ытти пир-авăр промышленность предприятийĕсенчи работницăсен тĕслĕхĕпе, 24-шар станокпа ĕçлеме пуçларăмăр. Унтан 28-па... Нумай станоксемпе ĕçлесси вăл операцисене хăвăрт тума хăнăхнинчен килет. Калăпăр, çип татăлсан, норма тăрăх ăна 21 секунда хушшинче сыпма ĕлкĕрмелле. Эпĕ 15 секунда хушшинче сыпма вĕренсе çитрĕм...

Пĕррехинче ман алла Ташкентри пир-авăр комбинатĕнче кăларакан хаçат лекрĕ. Интересленсех вулама тытăнтăм ăна — мĕнлерех пурăнаççĕ, епле ĕçлеççĕ пирĕн инçетри туссем? Вуланă май, «Эпĕ 32 станокпа ĕçлетĕп» ятлă статья патне çитсе тухрăм. Ăна Ярыгина хушаматлă ткачиха çырнăччĕ. Вăл хăйĕн ĕçри опычĕ çинчен каласа pană. Станоксене кашни икĕ сехетрен тĕплĕн тĕрĕслет иккен вăл, станокран станок патне çирĕп маршрутпа çӳрет, вара пĕри те тĕрĕсленмесĕр юлмасть.

Темиçе хут та вуласа тухрăм çак статьяна. Вăл мана таран шухăша ячĕ. Ик-виçĕ кун шухăшласа

çӳрерӗм. Неушлӗ эпӗ çав Ярыгина пек ӗçлеме пултараймӑп? Пултарассӑнах туйӑнать хама. Юлташсемпе калаçса пӑхрӑм — вӗсем иккӗленерех параççӗ, ытла нумая хапсӑнатӑн, теççӗ. Юлашкинчен çапах та хамӑрӑн цех начальникӗ Валентина Павловна Горятнева патне кайрӑм та хамӑн шухӑша каласа патӑм.

Малтанах вӑл та иккӗленчӗ.

— Вӑтӑр икӗ станок... нумайрах пулмӗ-ши?

— Пулмасть пулӗ, тетӗп...

— Юрӗ эппин, сӑнаса пӑхар.

Темиçе кунтан эпӗ 32 станок çине куçрӑм. Хытӑ пӑлхантӑм, çапах та ӗç ӑнӑçлӑ пулса пычӗ. Мана кура вара ыттисем те 32 станок çине куçма пуçларӗç. Халӗ ӗнтӗ пирӗн цехра ун пеккисем нумай. Плансене те иртгерсе тултараççӗ, пир-авӑр пахалӑхӗ те лайӑх. Хам çинчен каласан, — мухтанать тесе ан шутлӑр,—манӑн брак пачах та пулмасть...

— Вӗренӳ мӗнлерех пырать тата? — ыйтрӑмӑр эпир Марфа Филипповнӑран.

— Чиперех, — терӗ вӑл. — Халь пиллӗкмӗш курсра ӗнтӗ, кӑçал вӗренсе тухатӑп.

— Кам пулатӑн-ха вӗренсе пӗтерсен?

— Е мастер, е инструктор тӑваççӗ пулӗ.

— Ӗмӗтӳ тулать эппин?

— Тулать ӗнтӗ, — кӑмӑллӑн кулса илет Марфа Филипповна.



# Пурин те пӗр тӗл



## *ХУРÇĂ ÇУЛСЕМ ÇИНЧЕ*

Пысăк перемена хыççăн ачасем каллех партăсем хушшине вырнаçса ларнă. Класа пырса кĕнĕ ватăрах учительница, яланхи пекех, ачасене пăхса çаврăннă та:

— Пурте вырăнта-и? — тесе ыйтнă.

Вĕренекенсем, унăн-кунăн пăхса илсе, хăйсем хушшинче пĕр ача çуккине асăрханă.

— Пурте мар, — тенĕ вĕсенчен пĕри, ура çине тăрса.

— Кам çук?

— Назаров Павел.

— Ăçта вăл?

— Пĕлместĕп...

— Чугун çул еннелле чупрĕ вăл паçăр, — сăмах хушнă малти парта çинче ларакан тепĕр ача.

— Ҫаллех пăравус патне кайнă эппин! — аллипе сулнă учительница, кăмăлсăрланса. — Пĕрре-пĕрре поезд айне лекетех пулĕ-ха, мур ачи!

Павел Назаров лайăх вĕреннĕ, анчах шкулти йĕркесене пăхăнас тĕлĕшрен вăл учительница кăмăлне кайман. Переменăсем вăхăтĕнче пăравуссем патĕнче ҫапкаланса ҫӳренĕшĕн ятласа та пăхнă вăл Назарова, анчах лешĕ тӳрленмен...

Халĕ те, Павел Назаров ҫак самантра класа килсе кĕнĕ пулсан, хытах ятланă пулĕччĕ ăна, анчах, ача ҫуккине кура, тек шарламан.

Урок пуҫланнă. Учительница ачасене кĕнекесем кăларттарнă та, пĕрне вулаттарнă, теприне... Ĕнтĕ урок пуҫланнăранпа ҫирĕм минут та ытла иртнĕ. Сасартăк, чӳрече ҫумĕнчи парта ҫинче ларакан хĕрлĕ ҫӳҫлĕ ача тăрук сиксе тăнă та:

— Килет, килет! Авă, чупать! — тесе, аллипе урамалла кăтартнă.

— Кам чупать?

— Павлуш, Назаров...

Чăнах та, чугун ҫул енчен шкул патнелле хура сăкман-пиншакне йӳле янă, арпашса кайнă ҫӳҫ-пуҫлă, сарлака хулпуҫҫиллĕ лутрарах арҫын ача ыткăнса пынă. Питĕ васканă Назаров... Класа та вăл алăка карт! туртса уҫса кĕнĕ, часрах хăйĕн вырăнне ҫитсе ларасшăн пулнă, анчах учительница хăй ҫине сиввĕн пăхнине курнă та пат! чаранса тăнă. Унăн пичĕ-куҫĕ хуп-хура, ҫара хăрăм пулнă.

Пĕр самантлăха класра шăпах пулнă.

— Ăҫта ҫӳрерĕн? — хуллен ыйтнă учительница,

вараланса пĕтнĕ ача çине шăтарас пек пăхса.

Ачи ăна хирĕç нимĕн те чĕнеймен, куçĕсене хăвăрт-хăвăрт мăчлаттарса илнĕ çеç.

— Ăçта çӳрерĕн, тетĕп! Мĕншĕн урокран юлтăн? — тата тепĕр хут ыйтнă учительница, сассине кăштах хăпартса. — Ма чĕнместĕн? Санран ыйтатăп вĕт эпĕ!

Ача каллех нимĕн те калайман, хăранипе унăн хулăм тути хĕррисем чĕтреме тытăннă.

— Чĕлхӳне çăтса ятăн-им? Ну-ка, аллусене кăтарт! — ун патнелле пынă учительница.

Назаров аллисене малалла тăсса кăтартнă. Вĕсем те, пичĕ-куçĕ пекех, хăрăмпа тата мазутпа вараланса пĕтнĕ иккен.

— Мĕне пĕлтерет ку? Ăçта варалантăн? Қаллех поездсем патĕнче сĕртĕнсе çӳренĕ вĕт эсĕ... Асту, Назаров, юлашки хут асăрхаттаратăп: тепре çакăн пек хăтлансан, эп сана класа та кĕртместĕп, шкултан пуçĕпех кăларса яратăп!

Учительница çине тӳррĕн пăхма хăяймасăр, Назаров автан киккирикки пекех хĕрелсе тăнă. Унтан, хаштах сывласа ярса, хуллен кăна каланă:

— Қаçарăр... Тек тумастăп кун пек...

— Миçе хут каçарнă ĕнтĕ эп сана! Яланах: тек кун пек тумастăп, тетĕн те, тепĕр виçĕ кунтан хăвăн сăмахна манса каятăн.

— Тек манмастăп...

Учительница ачана парта хушшине ларма хушнă, унтан, хăй ăшĕнче кулса илсе, татах ыйтнă:

— Çапах та, Павлуш, халь эсӗ урокран мӗншӗн юлтӑн-ха?

— Ёлкӗреймерӗм çав, — тенӗ ӑна хирӗç арçын ача, çӗрелле пӑхса. — Маневровӑй пӑравус çине курма хӑпарсаттӑм та, сисмен те... машинист пӑравуса тапратса ячӗ. Сиксе юлма хӑрарӑм.

— Ӑçта çити илсе кайрӗ вара?

— Инçех мар, станцӑн тепӗр вӗçне çити кӑна... Семафор патне çитсен пӑравус урӑх лини çине куçса каялла çаврӑнса килчӗ...

— Анчах та пӑравусӗ Мускава çитиех кайнӑ пулсан? Мӗн тӑваттӑнччӗ-ха вара, айван?

Куна хирӗç ача хӑюллӑрах ответ панӑ:

— Маневровӑй поезд станцӑран тухмасть...

— Тухманнине ӑçтан пӗлетӗн?

— Кочегар каларӗ, ан хӑра, халех каялла килетпӗр, терӗ.

— Кочегар! Эсӗ ху та кочегар пекех авӑ! Шӑл питне!

Ача хӑрӑмпа вараланнӑ питне çанӑ вӗçӗпе шӑлнӑ та, шап-шурӑ шӑлӗсене кӑтартса çемçен кулса илнӗ:

— Эпӗ кочегара тендер çинчен топка ӑшне кӑмрӑк ывӑтма пулӑшрӑм, çавӑнпа вараланмалла пулчӗ...

— Ну, юрӗ! Тыт кӗнеке! Тепре кун пек тусан — аçуна пӗлтеретӗп акӑ, асту! Кӑтартӗ вӑл сана тендерпа топка...

...Çак сценка 1922 çулхи кӗркунне, Канаш станцинчи пуçламӑш шкулта пулса иртнӗ. Урокран

юлсах пăравуспа ярăнса çӳрекенни — Мăрсаван-кассинчи чухăн Назар ывăлĕ Павăл пулнă.

Ытла та юратнă вăл чугун çул тăрăх кĕрлеттерсе çӳрекен пăравуссене! Ирсерен шкула кайнă чухне те, каçалапа киле таврăннă чух та çăвара карса пăрахсах пăхса тăнă Павлуш вĕсем çине, Мускавалла васкаканнисене те, Хусаналла ыткăнаканнисене те куçран çухаличченех пăхса тăрса ăсатнă. Мĕн тери хăватлă вĕсем!.. Хăйсем пӳрт çӳлĕш, кустăрмисем тем пысăкăш... Çĕр вагон таран туртса, çул тăрăх çил пек вĕçтерсе пыраççĕ!

Малтан, темшĕн, Павăла пăравуссем хăйсем тĕллĕнех çӳренĕ пек туйăннă. Анчах каярахпа вăл, пăравус чӳречи витĕр унта çынсем тăнине курсан, вĕсене çынсем илсе çӳретнине ăнланса илнĕ.

— Вăт, телейлĕ çынсем! — шухăшланă вăл. — Мĕн тери вайлă та хăрушă машинăна итлеттерме пултараççĕ! Пуласчĕ манăн та... çавăн пек! Нимĕн те кирлĕ марччĕ вара мана урăх!

Пурăна-киле, кăштах ӳссе хăюланма пуçласан, вăл станцăра тăракан поездсем патне çывăхарах пыма пуçланă. Пăс кăларса, чĕрĕ чунлă япала пек хашкакан «тимĕр утсем» çине нумайччен пăхса тăнă, кустăрмисене тытса пăхнă, кашнинчех вараланнă, уншăн учительница ăна пĕрре кăна мар ятланă, анчах та Павлуш хăйĕнне пăрахман...

— Мĕншĕн эсĕ çав лапăрчăк пăравуссенчен хăпма та пĕлместĕн? — тесе ыйтсан, Павлуш пĕррехинче учительницăна татăклăн, мăн çын пекех каласа хунă:

— Ӳлӗм, ҫитӗнсе ҫитсен, эпӗ пурӗпӗр машинист пулатӑп!

— Ӳссен такам та пулма пултаратӑн, ачи ухмах мар эсӗ, анчах халӗ тӑрӑшарах вӗренес пулать санӑн, вӗренмесӗр машинист та, никам та пулаймастӑн, — ӗнентернӗ ӑна кӑмӑллӑ учительница.

Тӑватӑ ҫул ытараймасӑр сӑнаса пурӑннӑ пӗчӗк Павлуш пӑравуссене, тӑватӑ хӗл хушши, кашни кун тенӗ пекех, чугун ҫул ҫине ҫӳренӗ. Ӳссен машинист пулас ӗмӗт унӑн чӗринче ҫирӗпленнӗҫемӗн ҫирӗпленсе пынӑ. Анчах унччен нумай пурӑнмалла пулнӑ-ха...

Канашра ун чух пуҫламӑш шкул кӑна пулнӑ, ҫавӑнпа та тӑваттӑмӗш класран вӗренсе тухсан Павлуш чугун ҫултан аякра ларакан пӗр ялти шкула кайса кӗнӗ. Анчах пӗр ҫул вӗреннӗ хыҫҫӑн, килте питӗ чухӑн пурӑннипе, шкула ҫӳреме пӑрахмалла пулса тухнӑ.

— Ҫӑкӑрне кашни кунах ҫиетпӗр, ҫи-пуҫӗ те кирлӗ... Вӑю пур санӑн, пӗр-пӗр ӗҫ тупас пулать пулӗ, ывӑлӑм, ним тума та ҫук, — тенӗ ӑна ашшӗ.

— Ӑҫта каяс-ха?

— Шыраса пӑхас пулать.

— Чугун ҫул ҫине хавасланса каймалла та эпӗ...

— А мӗн тума пултарӑн ӗнтӗ эс унта?

— Ҫавӑ ҫав...

Кӑштах вӑхӑт иртсен, Павӑл чӑнах та чугун ҫул ҫинче ӗҫлеме пуҫланӑ. Унта вӑл... ҫул ҫинчи юра хырнӑ.

Паллах, ку пӗрмай ӗҫлемелли штатлӑ ӗҫ пулман. Юр ҫӑвать — ӗҫ пулать, юр ҫук пулсан — ӗҫ те ҫук. Ҫулла вара пачах та ӗҫ пулмасть. Мӗнле пулсан та, хӑй юратнӑ ҫӗрте ӗҫлеме ӗмӗтленсе, Павлуш ҫине тӑрсах хӑйне валли штатра тӑмалли ӗҫ шыранӑ.

Юлашкинчен ҫавӑн пек ӗҫ тупӑннӑ-тупӑннах. Ӑна водолива илнӗ. Анчах мӗн-ха вӑл водолив? Пӑравус водокачка патне пырса тӑрать те — ӑна шланг тӑрӑх шыв ярса памалла. Пӑравуссем ҫук чухне тунсӑхласа лар вара...

Ҫук, вӗри чӗреллӗ, пысӑк ӗмӗтлӗ ҫамрӑк йӗкӗте кун пек пули-пулми «специальность» ниепле те ҫырлахтарма пултараймӑн. Вӑл чӑн-чӑн ӗҫе вӗренесшӗн ҫуннӑ.

Ҫапла ӗмӗтленсе пурӑннӑ вӑхӑтра, пӗррехинче, Павлуш Канаш станцинче кочегарсем хатӗрлекен курс уҫӑласси ҫинчен пӗлнӗ. Ҫунатлансах кайнӑ вӑл:

— Темле пулсан та, ҫав курса кӗретӗпех!

Тепӗр куннех унта камсене илни ҫинчен кайса пӗлнӗ. Анчах та савӑнмаллиех пулман уншӑн. Курса вунсакӑр ҫула ҫитнисене ҫеҫ илнӗ. Павӑл вунулттӑра кӑна пулнӑ. Мӗн тӑвас ӗнтӗ?

Темиҫе кун хушши хуйхӑрса, ним тума пӗлмесӗр, пуҫне усса ҫӳренӗ ҫамрӑк йӗкӗт. Вӑл мӗн тери кӳреннине килтисем те аванах курнӑ. Пуринчен ытла ӑна амӑшӗ хӗрхеннӗ. Пӗр ирхине, ывӑлӗ станцине ӗҫе тухса кайсан, вӑл ҫӑпата хуҫса лара-

кан упăшки патне пынă та, ун çине хурлăхлăн пăхса, хуллен кăна калаçма тытăннă.

— Итле-ха, Назар, пĕтет вĕт пирĕн Павăл... Апат та çимест, çĕрле те çывăрмасть, начарлансах кайрĕ ĕнтĕ вĕренме кĕрейменшĕн хуйхăрса!

— Мĕн тăвам-ха эпĕ? Вунулттăра çеç те ачи...— тенĕ ашшĕ.

— Председатель патне кайса калаçса пăхмăнши? Тен, пĕр-ик çулне хушса çырса парĕç?..

Упăшки арăмĕпе килĕшнĕ. Халĕ тĕрĕссинех калама пулать: Павăл ашшĕ председатель патне хăйĕн юлашки укçипе пĕр пулштух илсе чиксе кайнă та ывăлĕ тавраннă çĕре справка хатĕрлесе килнĕ: Павел Назарович Назаров — 18 çул тултарнă каччă...

Ана çакă çеç кирлĕ пулнă. Тепĕр куннех заявлени çырса кайса панă, вара Павăла пĕр сăмахсăрах вĕренме илнĕ. Кăнтăрла Павăл малтанхи пекех ĕçленĕ, каç-каç курса вĕренме çӳренĕ. Унăн тантăшĕсем ытларах улахсем тăрăх чупнă, тепĕр чух Павăла та чĕннĕ хăйсемпе пĕрле пыма, анчах ку аллипе сулнă кăна:

— Вăхăт çук манăн улахсенче ташлама...

Вăл калама та çук тимлесе вĕреннĕ, пурне те хăвăртрах пĕлсе çитме тăрăшнă: пăравусăн мĕнлемĕнле пайсем пур, вĕсем мĕнле ĕçлеççĕ, сигнализаци, техникăлла эксплуатаци йĕркисем мĕнле, пăравуссене илсе çӳремелли правилăсене епле тĕрĕс тытса пымалла...

Çавăн пек тăрăшса вĕреннипе 1930 çул пуçла-

мăшĕнче Павел Назаров кочегар ятне илет те икĕ çул хушши пăравус çинче ĕçлет. Çав çулсенче вăл комсомола кĕрет, вăл лайăх ĕçленине, пăравус çинчи йĕркесене питĕ ăста пĕлсе çитнине кура, ăна машинист помощникĕ тăваççĕ. Унтан тата икĕ çул ĕçлет.

Анчах ку та çырлахтарайман ăна, чăн-чăн машинист пулас шухăша вăл пĕр самантлăха та пăрахман, ялан çав ĕмĕтпе пурăннă.

Машиниста вĕренме каяс пулсан, слесарь пулса ĕçленĕ стаж кирлĕ-мĕн. Çавăнпа та Назаров 1934 çулта пăравус çинчен анса пĕр çулталăк хушши слесарь пулса ĕçлет, унтан тата икĕ çулталăк каллех машинист помощникĕнче çӳрет. 1938 çулта вара Муром хулине кайса, пĕр çулталăк хушши машинистсен курсĕнче вĕренет.

Экзамена вăл питĕ лайăх тытнă.

— Шанчăклă машинист пулать! — тенĕ ун çинчен экзамен йышăнакан комисси членĕсем.

Вĕсем йăнăшман...

1938 çулхи июль уйăхĕнче Павел Назарова хăйне пăравус шанса панă та, çавăнтан варах вăл йывăр составсем илсе çӳрет. Питĕ çирĕп тытать вăл реверса! Вунтăхăр çул чуптарать ĕнтĕ хăватлă пăравуссене хурçă çулсем тăрăх, çав хушăра унăн пĕр авари те пулман, пĕр кăлтăк та, пĕр çитменлĕх те!

Хусан урлă — Свердловск, Омск, Томск, Кузнецк таран çӳретнĕ Назаров хăйĕн пăравусне. Часах ударник ятне тивĕçлĕ пулнă, преми хыççăн

преми пама тытăннă ăна, приказсенче çырса тав тунă. Станцисенче унăн пăравусне аякранах палласа илнĕ, мĕншĕн тесен вăл яланах йĕркеллĕ, таса, тирпейлĕ пулнă.

Павел Назаровăн ача чухнехи ĕмĕчĕ пĕтĕмпех тулнă, уншăн вăл пĕтĕм чĕререн савăнса тата тăрăшарах, чунне парса ĕçленĕ...

* * *

Чугун çул çинче ĕçлекен лайăх машинистсене яланах уйрăммăн шута илсе тăраççĕ. Питех те ответлă ĕçсем килсе тухсан вара, çав ĕçсене тума вĕсене хушаççĕ.

...Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланни çинчен радиопа пĕлтерсен виçĕ сехетренех Павел Назаровичпа Канаш станцинчи тепĕр паллă машиниста кирлĕ документсем тыттарнă та М. хулине янă. Кунта вĕсене запасра тăракан вĕр-çĕнĕ пăравуссем парса фронт çывăхĕнчи хулана кайма хушнă.

Фашистсен самолечĕсем пирĕн чикĕ таврашĕнчи чугун çулсем тăрăх юн çăварлă çăхансем пек ярăнса çӳренĕ, станцисемпе çулсем çине бомбăсем вĕçĕмсĕр тăкнă, ишĕлтернĕ, çунтарнă.

Анчах халĕ вĕсенчен хăраса тăма юраман. Фронта ытларан та ытларах çар, техника, боеприпассем, апат-çимĕç кирлĕ пулнă, çав вăхăтрах фронт çывăхĕнчи районсенчен мирлĕ халăха — хĕрарăмсене, ачасене, ваттисене — турттарса тухма тӳр килнĕ. Вуншар хут та пулнă Павел Назарович хăрушла бомбежкăсем айĕнче, анчах унăн ĕçĕсем яланах ăнăçлă вĕçленнĕ: урса кайнă фашистсен лет-

чикĕсем пĕрре те лектереймен вăл илсе пыракан пăравуса.

— Телей пулнă пулмалла çав манăн, — кăмăллăн кулса аса илет халĕ Павел Назарович çав хăрушă рейссем çинчен.

Пĕррехинче, пушă составпа В. станцине пырса кĕрсе темиçе сехет тăрсан, вăл çак çула нимĕçсем малтан та, кайран та татса илни çинчен, тин ĕнтĕ ниçталла та кайма çукки çинчен илтнĕ. Станцире тăракан составсем çине фашистсем сывлăшран бомбăсем тăкса иртсе кайнă, унтан инçетрен мăн йышши тупăсемпе пеме тытăннă. Нумай составсем арканнă, çуннă. Ĕнтĕ ку тамăкран сыввăн тухассăн та туйăнман. Пăравуссен бригадисем чылайăшĕ, хăйсен машинисене пăрахса хăварса, тĕрлĕ çĕрелле тарса пĕтнĕ. Назаровăн та çавăн пек тăвасси кăна юлнă, анчах та унăн хăйĕн юратнă пăравусне тем тусан та пăрахасси килмен.

— Чимĕр-ха, — тенĕ вăл çĕрле пулсан, хăйĕн помощникĕпе кочегарне, — эсир кунтах тăрăр, топкăна ан сӳнтерĕр, эпĕ унталла-кунталла пăхса çӳрем. Тен, кунтан сиксе тухма май пулĕ?..

Чылай çӳренĕ вăл çулсем тăрăх. Унтан, пĕр стрелочника тĕл пулса, унпа пăравуса станцирен кăларса ярасси çинчен калаçнă. Анчах стрелочник ăна итлесшĕн те пулман.

— Мана никам та нимĕн те хушман, — тенĕ вăл. — Кам пĕлет, тен лере çулне ним юлми арkатса тăкнă? Сана кăларса яр та, кайран ответ тытса лар вара... Çук, ан та калаç, ямастăп!

— Ответне эсĕ мар, эпĕ хам тытатăп! — кăшкăрса пăрахнă ун çине тарăхса кайнă Назаров. — Кунта та пурĕпĕр: е хамăра вĕлереççĕ, е пăравуса аркатаççĕ. Анчах та, тен, эпĕ пĕр тапрансан чиперех тухса кайăп?

— Риск вĕт ку! — ĕнентерме тăрăшнă стрелочник. — Хăрушă!

— Хальхи вăхăтра унсăр май килмест! Хăраса тăрсан тата япăхрах пулма пултарать!

— Ну, асту эппин, хăвăнне ху пĕл...

Çав вăхăтра фашистсем каллех артналёт пуçланă. Пĕр çур сехет хушши Назаровпа стрелочник канав тĕпĕнче лăпчăнса выртнă, пуçĕсене те çĕклеймен, унтан вара, тăшман артиллерийĕ кăштах лăплансан, Назаров сиксе тăнă та часрах хăйĕн пăравусĕ патнелле чупнă. Вăл пынă çĕре пăравус çинче помощник те, кочегар та пулман. Пирвайхи снарядсем ӳксе çурăлма тытăнсанах вĕсем таçта тарса çухалнă. Назаров чылайччен кăшкăрса чĕннĕ вĕсене, анчах лешсем пурĕпĕр тупăнман, çĕр тĕпне путнă, тейĕн. Станцирен тухсах тарнă пулмалла вĕсем.

Ĕнтĕ тул та çутăлма пуçланă. Тек кĕтсе тăма юраман. Çутăлсанах фашист çăханĕсем çĕнĕрен вĕçсе килсе каллех бомбăсем тăкма пултарнă.

— Пĕчченех каятăп... — шут тунă Назаров.

Çавăнтах топкăна хытăрах чĕртсе кăмрăк чыхса тултарнă, пăравуса вырăнтан хускатнă... Темиçе минутран вăл сĕм вăрман витĕр тăсăлса выртакан çул тăрăх хĕвелтухăçнелле ыткăннă. Нимĕçсем

чугун çул çине каллех йывăр тупăсенчен пеме тытăннă, снарядсем, унта та, кунта та ӳксе, хăрушла кĕрслетсе çурăлнă, анчах линие тивеймен. Пăравус малтан мала вĕçтерсе пынă... Хĕвел тухма пуçланă вăхăтра, пĕр пĕчĕк разъездран иртсен, пĕлĕтре пĕр ушкăн «юнкерссем» ярăнса пыни курăннă. Вĕсем ĕнтĕ каллех В. станцине çĕмĕрме кайнă, анчах Назаровшăн вĕсем халь тин хăрушă пулман...

...1941 çулхи хура кĕркунне Павел Назаровича каллех Хусан чугун çулĕ çине куçарнă. Вăрçă вăхăтĕнче ку çул тăрăх çар, боеприпассем, танксем, орудисем, фронта валли мĕн кирлĕ — çавсем пурте вĕçĕ-хĕррисĕр, кунĕн-çĕрĕн ăсанса тăнă. Пур йышши грузсем те çав тери васкавлă, пĕр минут та тытса тăма юраманскерсем пулнă. Вĕсене фронт кĕтнĕ. Вĕсем çĕнтерӳ валли кирлĕ пулнă.

— Çăмăл марччĕ çав ĕçлеме, — аса илет халь Павел Назарович. — Шутлăр-ха эсир: кăмрак пулманпа пĕрех, ялан вутăпа ĕçленĕ, вăл та чĕрĕччĕ, паян каснă та — ыран топкăна чикнĕ... Манăн помощнике те, кочегара та вăрçа илсе кайрĕç. Пĕрле ĕçлеме хăнăхнă вăйпитти арçынсем вырăнне мана икĕ хĕрарăм пачĕç те, вĕсене манăн ĕçленĕ вăхăтрах вĕрентсе пымалла пулчĕ. Юрать-ха вĕсем ĕçченскерсем, питĕ тăрăшаканскерсем пулчĕç те, ĕçлеме часах хăнăхрĕç. Тĕрĕссипех калас пулать, арçынсенчен кая мар ĕçлерĕç вĕсем... Çул çинче ун чух машинистсем çитместчĕç, вăрçă вăхăтĕнче вĕсем те сахал мар

пĕтрĕç вĕт-ха... Çавăнпа та — ним хушмасăрах калатăп — час та часах эпир 60—70 сехет хушши пăравус çинчен анман. Çапах та аптраман, парăнман. Уйăхран уйăхах хамăрăн техникăлла измерительсене ирттерсе тултарса пынă, пирĕн пăравус та яланах йĕркеллĕ пулнă, чăвашла каласан — нихçан та «чăхăмламан». Талăкра пирĕн пăравус пилĕкçĕр километртан кая мар чупмалла пулнă, эпир вăл задание тăтăшах тултарса пынă, часчасах ирттернĕ те... Пĕр сăмахпа каласан, фронта пулăшма хамăрăн мĕн вăй çитнĕ таран тăрăшнă эпир...

Совет влаçĕ, комсомолпа парти пăхса çитĕнтернĕ çын, хĕрӳ чĕреллĕ совет патриочĕ урăхла тума пултарайман та ĕнтĕ. Партие Павел Назарович вăрçăчченех, 1940 çулта кĕнĕ, унччен сакăр çул хушши комсомолра тăнă. Вăл çамрăкранпах обществăлла ĕçе активлă хутшăннă, комсомол хушнă хуть те мĕнле ĕçе те тăрăшса туса пынă. Çавăн пирки ăна комсомолец чухнех райсовет депутатне суйланă...

1946 çулта, унтан 1951 çулта, умлăн-хыçлăн икĕ хут, халăх хăйĕн шанчăклăран та шанчăклă ывăлне Совет влаçĕн чи аслă органне — СССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйланă. Хăйне çавăн пек пысăк чыс туса шаннине Павел Назарович яланах тӳрре кăларса пынă, халăхăн чăн тарçи пулнă.

Пирĕн совет пурнăçĕнче йĕрки çапла: кам чунтан тăрăшса, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлет, кам хăйĕн ĕçĕнче ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăвать, халăх ăна яланах

хисеплет, тав тăвать, премисем, наградăсем парать тата лайăххрах ĕçлеме хавхалантарать. Павел Назаров — савăн пек чыспа хисепе тивĕçлĕ çынсенчен пĕри.

Машинист ятне илсе хăй тĕллĕн ĕçлеме тытăнсан малтанхи çулталăк хушшинчех Павел Назарович ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунă, çавăншăн ăна 1939 çултах Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Хисеп грамотине панă. Хусан чугун çулĕн Управленийĕ те ăна пĕрре кăна мар Хисеп грамотисем, «Отличный паровозник», «Почетному железнодорожнику» текен хисеп паллисем панă. Каярахпа Совет правительстви ăна чи пысăк наградăсем — Ленин орденĕпе Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕсем парса наградăланă.

Аслă машинист П. Н. Назаров — пĕтĕм Хусан чугун çулĕ çинче паллă çын пулса тăрать. Вăл йывăр составсем илсе çӳрессине, пăравуссен ĕç тухăçлăхне хăпартассине пуçарса яракансенчен пĕри пулнă. Ку ĕнтĕ çав тери паха та кирлĕ ĕç! Йывăр составсем илсе çӳретни грузсене ытларах тата кирлĕ çĕре хăвăртрах çитерме май парать, халăх укçине нумай перекетлет, халăх хуçалăхне пысăк усă кӳрет.

Ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăвать Павел Назарович хăйĕн ĕçĕнче.

Мĕнрен килеççĕ-ха çав ӳсĕмсем?

Чăн малтан, паллах, вăл хăйĕн ĕçне питĕ лайăх, тĕплĕ пĕлсе туса пынинчен. Унăн ĕçри опычĕ пысăк. Ку пĕрре. Иккĕмĕшĕ — вăл хăйĕн пăравусне

яланах пур енчен те йĕркеллĕ, таса, тирпейлĕ тытни. Ахальрен мар ҫунăн пăравусне темиҫе хут та «СССР-ти чугун ҫулсем ҫинчи чи лайăх пăравус» ятне панă. Рейса тухса кайма Назаров питĕ тĕплĕ, нимĕнле кăлтăксем те пулмалла мар хатĕрленет, ҫул ҫинче пăравуса ăста илсе ҫӳретнипе вăл яланах кăмрăк сахал мар перекетлет.

Ку тĕлĕшрен пĕр интереслĕ тĕслĕх илсе кăтартма пулать. 1953 ҫул пуҫламăшĕнче Канашри пăравус деповĕнче машинистсем топливо ытлашши нумай ҫунтарни палăрнă. Ку пурне те пăшăрхантарнă, ҫак ыйтăва ятарласа партбюро ларăвĕнче сӳтсе явнă. Ҫав ларура аслă машинист П. Н. Назаров топливăна перекетлес тĕлĕшпе пăравус бригадисем хушшинче ăмăрту пуҫласа яма сĕннĕ.

— Мĕнле перекетлеме май пуррине ĕҫре хам кăтартса паратăп, — тенĕ вăл. Унтан, топливăна ытлашши ҫунтаракан хăшпĕр машинистсене хăйĕн пăравусĕ ҫине лартса тăватă рейс тунă та, кĕске вăхăтрах 5.366 килограмм кăмрăк перекетленĕ. Унччен малтан, виҫĕ ҫул хушшинче, вăл 688 тонна кăмрăк—85.249 тенкĕлĕх перекетленĕ пулнă.

Малта пыракан машинистăн опытне пĕтĕҫтерсе ăна ытти машинистсемпе бригадăсем хушшинче сарас шутпа, депора ятарласа техникăлла конференци туса ирттернĕ, ҫак конференци пурне те пысăк усă панă. Ҫавăн хыҫҫăн нумайăшĕ топливăна перекетлеме тытăннă.

П. Н. Назаровăн ĕҫри ӳсĕмĕсемпе, унăн пуян опычĕпе чугун ҫул ҫинче ĕҫлекенсене тĕплĕн пал-

лаштарас шутпа Канашра ӗҫлекен инженер-путеец П. Т. Тимофеев нумаях пулмасть «Старший машинист П. Н. Назаров» ятлӑ кӗнеке ҫырса кӑларнӑ. Статья мар, кӗнеке! Ҫав кӗнекере автор уйрӑмах П. Н. Назаров хӑй лайӑх ӗҫлесе пынӑ хушӑрах ҫамрӑксене ӳсме пулӑшнине палӑртать. Акӑ мӗн ҫырать вӑл:

«— Хӑйӗн нумай ҫулсем хушшинче пухӑннӑ опытне Назаров хапӑл тусах ҫамрӑк паровозниксене парать. Вӑл хӑйӗн помощникӗсемпе кочегарсене тӑрӑшсах ӳстерет, лешсем вара ҫав ӗҫсенче нумай вӑхӑт тытӑнса тӑмаҫҫӗ. Сӑмахран, акӑ, унӑн помощникӗсем пулнӑ Н. Г. Печикин, С. И. Черников, К. Н. Егоров хальхи вӑхӑтра урӑх пӑравуссем ҫинче машинистсем пулса ӗҫлеҫҫӗ те йывӑр составлӑ поездсем илсе ҫӳретес енпе хӑйсен учителӗпе ӑнӑҫлах ӑмӑртаҫҫӗ. Кочегарсем пулнӑ М. Н. Николаев, С. А. Николаев, М. А. Афанасьев, К. П. Нарадкин та машинистсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Машинист помощникӗ пулнӑ Н. Б. Бакулин хальхи вӑхӑтра инструктор-теплотехник пулса ӗҫлет. Машинист помощникӗ И. Е. Ефремов — чугун ҫул ҫинчи локомотив пайӗн инженерӗ...

«1949 ҫулта, ҫул отделенийӗ (сӑмах Хусан чугун ҫулӗн Канашри отделенийӗ ҫинчен пырать.—Л. А.) совет инженерӗ Лебедянский конструкцийӗпе тунӑ ҫӗнӗ хӑватлӑ локомотивсемпе усӑ курма тытӑнсан, чӑн малтан килнӗ пӑравуса Назаров аллине панӑ. Вӑл ҫак кӑткӑс, ҫав тери механизациленӗ

агрегата хăвăрт вĕренсе çитнĕ те, питĕ пысăк çитĕнӳсем тума тытăннă. Унăн пăравусĕ çинче, вăл сăнаса тăнипе, çĕнĕ машинăпа ĕçлеме депори ытти машинистсем вĕреннĕ. Малтанхи вăхăтра Назаров пăравусĕ çĕнĕ техникăна вĕренмелли хăйне майлă шкул пулса тăнă...»

Хăйĕн ĕçĕпе чапа тухнă машинист П. Н. Назаров Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX съезчĕн делегачĕ пулнă.

Çак историлле съездран таврăнсан, Павел Назарович хăйсен деповĕнче ĕçлекенсен коллективĕнче съезд ĕçĕсем çинчен, улттăмĕш пилĕкçуллăхра Совет çĕршывĕнчи халăх хуçалăхĕ мĕн тери хăватлăн аталанасси, çав аталанура чугун çул транспорчĕ мĕнешкел паллă вырăн йышăнасси, пирĕн чугун çулсем техника енĕпе татах та пуянланасси çинчен тĕплĕн те хĕрӳллĕн каласа панă, хăйĕн юлташĕсене коммунизмла строительствăн аслă планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме чĕннĕ.

Канашри паровозниксем, парти съезчĕн решенийĕсене чунтан ырласа, социализмла пысăк обязательствăсем йышăннă, вĕсене чыслăн пурнăçласа пыма сăмах панă. Хальхи вăхăтра Канашри депо — Хусан чугун çулĕ çинчи малта пыракан предприятисенчен пĕри пулса тăрать. Социализмла ăмăртура кунти паровозниксем яланах малти вырăнсене тухаççĕ. Уйрăмах депори коммунистсем ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Улттăмĕш пилĕк

çуллăх планне срокчен тултарассишĕн пĕтĕм вăйран тăрăшса, ырми-канми ĕçлеççĕ.

Çав ăмăртура чи малта пыракансенчен пĕри — Мăрсаванкасси чăвашĕ, ырми-канми ĕçчен аслă машинист Павел Назарович Назаров.



## АРКТИКА ЫЙТАТЬ

Цех начальникӗ сӗтел ҫинчи шурӑ хут таткине тепре вуласа тухрӗ. Унта ҫапла ҫырса хунӑ: «Пӑрахутсем Арктикӑна кайма хатӗрленеҫҫӗ, регуляторсем хӑвӑртрах ярса парӑр. Арктикснаб Царев».

Ҫак телеграмма Юрий Иванович Оржебовскине нумай шухӑшлаттарчӗ... Ку таранччен ӑҫта кӑна ӑсатман пулӗ хӑйӗн продукцине Юрий Иванович ертсе пыракан цех! Мускаври, Донбасри предприятисене, халӑх демократи ҫӗршывӗсене питех те кӑткӑс аппаратсем туса панӑ. Темиҫе эрне каялла атом вӑйӗпе ӗҫлекен ледокол валли те чылай приборсем тунӑ. Нумай пулмасть Индири металлурги комбиначӗ валли аппаратсем ӑсатнӑччӗ, ун хыҫҫӑн цех кулленхи ӗҫсене туса пыма тытӑннӑччӗ.

Халĕ, ава, каллех тепĕр телеграмма çитсе выртрĕ: Арктикăна каякан экспедици валли Шупашкарти электроаппаратура завочĕн приборсем туса памалла... Çитменнине тата «хăвăртрах ярса парăр», тенĕ. Пултарăпăр-ши?

Юрий Иванович çапла шухăшласа ларнă вăхăтра пӳлĕме тăп-тăп кĕлеткеллĕ, хурарах сăн-питлĕ хĕр пырса кĕчĕ. Темшĕн-çке, вăл пăлханнă пек курăнать. Цех начальникĕ ăна тахçантанпах пĕлет: вăл — цехри кăмрăк регуляторсем тăвакан участок мастерĕ Лидия Монахова. Малтан, пĕр-икĕ çул каялла, вăл слесарь-сборщица пулса ĕçлетчĕ. Нормăна вăл яланах ирттерсе тултарнă, производствăна лайăхрах йĕркелеме сĕнӳсем те нумай тăратнă. Ытти работницăсен ĕçĕсене те пĕрмай асăрхаса тăнă. Пĕр-пĕр юлташăн ĕçĕнче кăлтăк е çитменлĕх пулнине асăрхасан, Лидия ăна çийĕнчех пулăшма тăрăшнă. Ахальтен мар цехри çынсем ăна хисепленĕ. Юрий Иванович çакна сăнакаласа пурăннă та — участока ертсе пыма хушнă. «Ку хĕр çынсемпе ĕçлеме пултарать, производствăна та лайăх пĕлет», тенĕ вăл ун чухне Лидия пирки. Ăна шанни йăнăш пулман...

Халĕ çак çамрăк мастер цех начальникне хăйĕн участокĕнчи ĕçсем çинчен каласа пама пуçларĕ. Хатĕрлев цехĕсем сборщиксене кирлĕ детальсем вăхăтра тăратман иккен. Инструментсем пирки те хĕсĕкрех. Цех начальникĕ унăн сăмахне тимлĕн итлерĕ, хăйĕн блокночĕ çине темскер çырса пычĕ.

— Юрĕ эппин, Лидия Ивановна, — терĕ унтан

начальник. — Çитменнине çитерӗпӗр, кирлине тупăпăр. Ан пăшăрхан.

— Хăвăртрах ӗçлес килет-çке, Юрий Иванович! Мӗн кирлисем пурте ал айӗнче пулсан, эпир нумай лайăхрах ӗçлемелле те çав...

Вăл тата темскер каласшăнччӗ, анчах шарламарӗ.

— Анланатăп, Лидия Ивановна, — терӗ инженер. — Малашне пурте йӗркеллӗ пулӗ... Анчах халӗ манăн санпа урăх ӗç пирки калаçса илмелле. Вула-ха çакна. — Вăл хăй умӗнче выртакан телеграммăна илсе мастера тăсса пачӗ. — Халех тума тытăнмалла. Срок — икӗ кун. Унсăрăн Арктика çыннисем умӗнче аван мар пулать. Епле пулсан та, хăвăртрах туса парасчӗ!

...Лидия Монахова ертсе пыракан участокра ӗçлекенсем çавăн йышши регуляторсене унччен те чылай тунă. Сборщицăсем хăйсен ӗçне çăмăллăнах тума вӗренсе çитнӗ. Детальсене йӗркеллӗ, вăхăтра парса тăманни çеç кӳрентерет тепӗр чух.

Аллинчи телеграммăна çавăркаласа, Лидия шухăша кайрӗ. Вăл паянхи кун хăйне унччен малтан панă заказпа татăласшăнччӗ. Анчах та, тепӗр тесен, пурӗпӗр мар-и? Кирек мӗнле ӗç те плана тултарса пынă шута кӗрет вӗт. Çитменнине — Арктика ыйтать... Кам пӗлет, тен, эпир çак заказа хăвăртрах туса памасан, унти тӗпчев ӗçӗсем чарăнса ларма пултараççӗ?..

— Паянах тытăнатпăр, Юрий Иванович,—терӗ çамрăк мастер. Унтан вăл тӳрех цеха тухрӗ. Кун-

та, йёркипе лартса кайнă сĕтелсем хушшинче, шап-шурă халатсем тăхăннă хĕрарăмсем лараççĕ. Кашнин умĕнчех тĕрлĕ детальсем. Пĕрисем, алăри отверткисене хăвăрт вылятса, пĕчĕк коробкасем çине шурупсем хытарса лартаççĕ, теприсем — хатĕр релесемпе ытти аппаратсене хут ещĕксем ăшне вырнаçтараççĕ. Конвейер тăрăх пысăках мар аппаратсем пĕр работница патĕнчен теприн патне майĕпе куçса пыраççĕ. Кашни çын кунта уйрăм операци тăвать, çавăнпа та конвейер çумĕнче ларакан хĕрсем хăйсен ĕçне питĕ лайăх вĕренсе çитнĕ.

Мастер Лидия Монахова хăйĕнпе пĕрле ĕçлекенсене çĕнĕ заказ çинчен пĕлтерчĕ.

— Хăвăрт тумалла ăна, икĕ кун хушшинче...

— Апла пулсан, халех тытăнас, Лидия Ивановна! — терĕ конвейер пуçламăшĕнче ларакан пĕр работница.

Унăн хура куçĕсем çиçсе илчĕç. Тӳрех курăнать: правур хĕр. Ĕçленĕ чух аппарат деталĕсене васкаса, вăр-вар тыткалать те хăй тумалли операцие туса та хурать. Унтан каллех тепĕр аппаратне пухма тытăнать. Ку çын нихçан та ывăнмасть пулĕ, тетĕн хăвăн ăшăнта, вăл ĕçленине пăхса тăрсан. Ана, Лидия Монахова ятлă сборщицăна, пурте ырлаççĕ кунта. Халĕ те вăл çак çĕнĕ заказ пирки пуринчен малтан татăклă сăмах каларĕ. Ытти работницăсем вăл каланипе килĕшеççĕ, пурте унпа танлашма тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен вăл конвейер пуçламăшĕнче ларать. Ёлкĕрсе пыр кăна

ун хыççăн! Ёлкĕреймесен — кая юлатăн, конвейер тăрăх пыракан аппарат вăхăтра пулмасть...

Пĕр çемьери çынсем пек килĕштерсе ĕçлеççĕ кунта хĕрсем. Пĕр-икĕ çул каялла Лидия Ивановна мастер хăй те вĕсемпе пĕрле ларса ĕçленĕ, приборсем пухнă. Хăшĕ те пулин лайăххрах ĕçлĕме пуçласан, ыттисем унран çавăнтах пример илсе ĕçлеме тытăннă. Çавăнпа та вĕсен ĕçĕсем ăнса пынă, плансемпе нормăсене вĕсем ирттерсе тултарнă.

...Акă, халĕ те участок ĕçе тытăнчĕ. Юрий Иванович — цех начальникĕ — тăрăшнипе, цеха мĕн кирлине пĕтĕмпех илсе пынă. Пурте хатĕр, ĕçле кăна! Мастер кашни работница патне пырса пăхма тăрăшать. Производствăра çавăн пек-çке-ха: чип-чиперех, йĕркеллех ĕçлетĕн, тăрăшатăн, анчах çав хушăрах, кĕтмен çĕртенех пĕр-пĕр кăлтăк сиксе тухать те, пĕтĕм ĕç пасăлса каяссăн туйăнать. Ун пек-кун пекки ан пултăр тесе, мастер пĕрмай сăнать, тĕрĕслет, кирлĕ пулсан — пулăшать.

Аслă мастер Николай Медяков та кунтах. Вăл та производствăн пур участокĕсемпе те интересленет, заказсене мĕнле туса пынине пĕрмай тĕрĕслесе тăрать. Пĕр-пĕр деталь çитмесен, ăна тӳрех тупса пама тăрăшать. Кирек мĕнле пулсан та, мĕн кирлине тупатех. Çак сăпайлă, лăпкă чăваш çыннине цехра пурте хисеплеççĕ. Тем тĕрлĕ ыйтусене те татса пама тивет унăн...

— Ну, ĕçсем мĕнлерех пыраççĕ? — тесе ыйтрĕ вăл, участокра Лидия Монаховăна тĕл пулсан.

— Заказа çурри таран турăмăр ĕнтĕ, — терĕ мастер. — Тем пулсан та, ыран туса çитеретпĕр. Юрий Ивановича сăмах патăм...

— Кун пек ĕçлесен, паян каçченех ĕлкĕрме пултаратăр эсир, — кĕтмен çĕртен сăмах хушрĕ цех начальникĕ. Тахăш вăхăтра пырса тăнă вăл — ăна никам та сисмен.

Юрий Ивановича та çак çĕнĕ заказ канăç паман çав. Паян вăл отпуска тухса каяс тенĕччĕ. Курорта сывалма кайма панă путевки те аллăрах пулнă унăн. Тепри пулсан, ăна-кăна пăхмасăрах тухса кайнă пулĕччĕ. Анчах, çак васкавлă заказа тунă чух кăлтăксем пуласран шикленсе, вăл ĕçре хăй вырăнне юлмалли Николай Григорьевич Медяков патне пычĕ.

— Лайăхрах сăнасчĕ, тусăм, — терĕ вăл ăна, — питĕ те ответлă заказ вĕт-ха. Ку таранччен хамăрăн продукцишĕн усал сăмах илтмен эпир, халĕ те намăс курас марччĕ...

— Ан пăшăрханăр, Юрий Иванович, — терĕ ăна хирĕç аслă мастер, — пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулĕ! Шанма пултаратăр.

...Арктика заказне тума тытăннă малтанхи кунах кăмрăк регуляторсене çурри ытла туса çитернĕ. Смена вĕçленес умĕн шăп çур сехет çитиччен стена çинчи хĕрлĕ лампочкăсем ялкăшса илчĕç. Çак сигнал вăл сменăри графика çирĕп тытса пынине пĕлтерет.

Тăваттăмĕш цех, вăл шутра регуляторсем пухакан Лидия Монахова мастер участокĕ те, талăкри

графикпа ӗҫлет. Кунта смена вӗҫленес умӗн ҫеҫ мар, кашни сехет иртсенех электролампочкӑсем ҫутӑла-ҫутӑла илеҫҫӗ. Ун пек чух пурин те кӑмӑлӗ тулать: ӗҫ тӗп-тӗрӗс, сехет графикӗпе пырать вӗт!

Лидия Ивановна участокӗнче ҫав кун сехет графикне кӑтартакан лампочкисем пуринчен те малтан ҫутӑлмаллаччӗ, анчах халлӗхе участоксене ҫав ялкӑшакан «ҫӑлтӑрсене» лартса парайман-ха. Кӗҫех вӗсем пулӗҫ, участок лайӑх ӗҫленине палӑртса пӗрмай ҫуталӗҫ, мӗншӗн тесен участокра план тӑрӑх пӗр сменӑра 60 регулятор пухмалла, анчах кунта час-часах 70 регулятор таран пухса кӑлараҫҫӗ. Начар ӗҫленине пӗлтерет-им вӑл?!

Чӑннипех те хастар рабочисемпе работницӑсем ӗҫлеҫҫӗ ку цехра. С. Павлов, Т. Яковлева, А. Белоусова, Т. Мурзина тата ыттисем те, урӑхла каласан — пӗтӗм коллективри ҫынсенчен 86 проценчӗ ҫулталӑкри нормӑна ҫур ҫул хушшинчех тултарнӑ.

— Хӑш рабочи лайӑхрах ӗҫлени ҫинчен калама та хӗн, — тет цех начальникӗ. — Пирӗн коллектив августӑн 7-мӗшӗнчех сакӑр уйӑхри плана тултарчӗ. Цеха СССР Электротехника промышленность министерствипе пирӗн профсоюзӑн Центральнӑй комитечӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ. Нумаях пулмасть пирӗн цех коллективне заводри Хисеп кӗнеки ҫине кӗртнӗ.

...Кӑмрӑк регуляторсем хатӗрлесси вӗҫленсе пырать. Ӗнер тӑрӑшни питӗ пулӑшрӗ. Тепӗр кунне хӑшпӗр узелсене туса ҫитересси кӑна юлчӗ.

Хăвăрт ĕçлет участок. Мастерпа пĕрле Николай Григорьевич та хатĕр продукцие тĕрĕслет. А. Лесинăпа Н. Скотникова калибровщицăсем те кунтах. Вĕсем кашни регулятор мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе пăхаççĕ. Акă сĕтел хушшинче ларакан сборщицăсем юлашки детальсене çирĕплетеççĕ. Иккĕмĕш кунхи смена вĕçленес умĕн, августăн 21-мĕшĕнче, кăткăс аппаратсене пĕтĕмпех хатĕрлесе çитерчĕç.

Лидия Ивановна хаваслă... Сборщицăсем те юлашки детальсене вырнаçтарса лартнă хыççăн пĕр-пĕринпе шакăлтатса калаçма тытăнчĕç. Хĕпĕртеме сăлтавĕ те пулнă çав вĕсен... Цех тата тепĕр пысăк çĕнтерӳ тунă!

Арктикăна каякансем валли хатĕрленĕ регуляторсене ещĕксем ăшне вырнаçтарнă хыççăн Николай Григорьевич цех начальникĕн пӳлĕмне çăмăллăн утса кĕчĕ. Унта вăл сĕтел çинче выртакан телеграммăна илчĕ те ун çине хĕрлĕ кăранташпа кĕскен кăна çырса хучĕ:

«Заказ хатĕр».



## *АКУЧАРИ САДСЕМ*

...Тахçан авал — ăна никам та астумасть — Покшаш шывĕ хĕрринче Акучай ятлă чăваш пурăннă, унăн виçĕ ывăл пулнă, тет: Сăпай, Иштерек тата Томлай. Ывăлĕсем ÿссе çитсен, Акучай вĕсене пĕрин хыççăн теприне тĕрлĕ çĕрелле уйăрса кăларнă. Акучай ывăлĕсем куçса ларнă вырăнсенче пурăна-киле ялсем пулса тăнă — Сăпай, Иштерек тата Томлай. Каярахпа пĕр Томлайран виççĕ пулнă — Тури, Анатри тата Çĕнни. Çавăн пек каласа парать халăх хушшинчи халап. Çавăнпа та ĕнтĕ хальхи вăхăтра «Ĕç ялавĕ» колхоза кĕрекен çак ялсене пурне те «Акуча» теççĕ. «Ăçтисем пулатăр?» тесе ыйтсан, ку тăрăхри çынсем хуть те

хăçан та: «Акучасем», теççĕ. Тĕплĕрех пĕлес тесен, вĕсенчен тепĕр хут ыйтма тивет: «Хăш Акучи?» Вара сире: «Сăпайĕ» е «Томлайĕ», теççĕ.

Çак Акуча тăрăхĕнчи ялсен, хальхи пек каласан «Ĕç ялавĕ» колхоз, çĕрĕсене урлă та пирлĕ çырмаçатрасем çурса пĕтернĕ. Çур çухрăм каятăн — çырма, тата тепĕр çухрăм утатăн — каллех çырма, унтан татах, татах...

Ĕлĕк çав çырмасенче вăрман кашласа ларнă, теççĕ. Пӳрт-çурт никĕсне хывмалли юманĕ те пулнă унта, хуппине сĕвсе пĕрне тума юрăхлă хурамасем те, шур лаç тумалли çăки те, хурăнĕ те, ывăçласа мăйăр татмалли шĕшки те, тем те. Анчах çав вăрмансене тахçанах касса пĕтернĕ, халĕ 45—50 çула çитнĕ çынсем вĕсене астумаççĕ те. Çак тип çырмасенче ĕлĕк вăрман пулнине халĕ унтакунта пăч-пач упранса юлнă, асат çапса хуçнă пек кукăр-макăр лутра юмансемпе хăрăк-марăк хурăнсем çеç аса илтереççĕ...

Çап-çара çырмасенчи питĕ нумай çĕр никама нимĕнле усă памасăр сая кайса выртнă. Утă туса илме май пулман унта — çыранĕсем ытла чăнкă, сăрт çамкисенче çуркунне шăтакан курăк пирвайхи шăрăх кунсем пуçлансанах ĕнсе, хăрса ларнă. Çул хыççăн çул, вуншар çулсем иртнĕ, çак ялсенчи «Пăру варĕсемпе» «Киремет сăрчĕсем» çавçавах ниме юрăхсăр çĕрсем пулса выртнă. Вĕсемпе мĕнле те пулин усă курасси çинчен шухăшлакан та, калаçакан та пулман.

Колхозсем организацилесе вĕсене вăйлатса

ӗҫыма тытӑннӑ хыҫҫӑн тин ялсенчи хӑшпӗр активистсем ҫав ҫырма-ҫатрасенче садсем тӑвасси ҫинчен сӑмах хускатма пуҫланӑ. Ку вӑл ҫакӑнтан та килнӗ пулӗ: Акуча тӑрӑхӗнче хресченсем тахҫантанпах садсем ӗрчетсе пурӑннӑ, кашни килте тенӗ пекех улмуҫҫисем, чие, слива, хӑмла ҫырли ӳстернӗ, вӗсенчен кашни хӑй пӗлнӗ пек тупӑш илнӗ, ҫавӑнпа та кунта сад пирки калаҫу ҫӑмӑллӑнах пуҫланма пултарнӑ.

— Эпир халӗ пӗрлешӳллӗ, обществӑлла хуҫалӑхпа пурӑнма пуҫларӑмӑр пулсан, пирӗн пӗрлешӳллӗ садсем те пулма тивӗҫ, — тенӗ сад ӗҫне юрататакан активистсем. — Лайӑх садсем лартса ӳстерсен, ҫуллен пысӑк тупӑш илме пулать. Йӗри-тавралла ҫаврӑнса пӑхӑр-ха эсир, мӗн чухлӗ ҫӗр сая кайса выртать пирӗн!..

Анчах та — тӗрӗссипех калас пулать — нумайӑшӗ ҫакӑн пек сӗнӳсене хирӗҫ тӑнӑ, вӗсене йышӑнма мар — итлесшӗн те пулман. Курӑк та ӳсмен хытанка сӑртсем ҫинче тутлӑ ҫимӗҫ паракан улмуҫҫисем, тӗрлӗрен ҫырла йывӑҫҫисем тымар ярса ҫитӗнессине ӗненмен ҫав ҫынсем. Хӑшӗсем тата, хӑйсен килӗсенчи хуҫалӑхӗсен интересӗсемпе ҫеҫ пурӑнаканнисем, юриех хирӗҫ тӑнӑ.

Михаил Васильевич Башмаков, ҫак тӑрӑхра обществӑлла садсем лартса ӗрчетес ӗҫе пуҫарса янӑ хастарлӑ ҫынсенчен пӗри (ун ҫинчен сӑмах каярахпа пулӗ-ха), пире кула-кулах ҫапла каласа кӑтартрӗ:

— Колхозниксен пӗр пухӑвӗнче эпир обще-

ствăлла сад лартма тытăнасси çинчен сăмах хускатсан, чăн-чăн ахăр самана пуçланса кайрĕ вĕт! Пур енчен те кăшкăрма, çухрашма тапратрĕç — ним ăнланма та çук! «Кирлĕ мар!..» «Ухмахланатăр эсир!» — теççĕ. Хальхи пекех астăватăп, çав карма çăварсенчен пĕри президиум патне сиксе пычĕ те, хăйне хăлхисенчен туртса, çăварĕнчен кăпăк сирпĕтсе кăшкăрма тапратрĕ: «Çав кирпĕч пек хытса ларакан тăм çинче пĕр улмуççи те пулин ӳссен — ман хăлхасене шăшисем кăшласа яччĕр!» тет. Теприсем хыçалтан кăшкăраççĕ: «Ахалех тăкак тăватпăр! Кам ответ тытĕ уншăн? Нимĕнле сад та кирлĕ мар! Камăн улма çиес килет, вăл хăйĕн пахчинчех ӳстерме пултарать!..» Виççĕмĕшĕсем унтан та хытăрах çухăраççĕ: «Ахаль те выкăнĕсем сахал, чăх кăларма та вырăн çук, а эсир юлашки çырмасене тытса илесшĕн-и халăхран?! Пулаймĕ эсир шухăшланă пек, памастпăр!..» Çапах та, сасăласан, пирĕн майлисем темиçе çын ытларах пулнипе, пилĕк гектар çинче сад лартма йышăнтăмăр çавăн чух...

Ку вăл вăрçăччен чылай малтан, Иштерек ялĕнче пулнă.

Тепĕр ялти — Вускассинчи сад никĕсне хывакансем те пире çавăн майлах каласа пачĕç. Кунта та нумайăшĕ обществăлла сад тăвассине хирĕç пулнă, сад валли аран-аран пĕр типĕ сăртра пĕчĕк кăна вырăн уйăрса памалла тутарнă.

Çавăн пек хирĕçе-хирĕçех, юнашар вырнаçнă икĕ колхозра садсем тума тытăннă. Унтан-кунтан

йывăç тупкаласа пулас садсем тавра картасем тытнă, улмуççисем, тĕрлĕ çырла йывăççисем лартнă. Вĕсем ĕнтĕ чиперех ӳсме пуçланă. Анчах садсем ĕрчетессине хирĕç пынă çынсем лăпланман... Вĕсем ирсĕр ĕçсем тăвасси умĕнче те чарăнса тăман: садсем тавра тытнă картасене юриех çĕмĕре-çĕмĕре выльăхсем кĕртсе янă, çамрăк йывăççене çитерсе, хуçтарса пĕтерме тăрăшнă. Ирĕксĕрех вара садсем патне хурал тăратма тӳр килнĕ.

Пĕр çул иртнĕ çапла, иккĕ те иртнĕ. Садсем хитре ӳснĕ. Анчах вăрçă пуçлансанах садоводсем фронта тухса кайнă та, тек вара садсене никам та пăхман. Çитменнине тата, 1941 çулхи тӳсме çук сивĕ хĕлле çамрăк улмуççисем шăнса кайнă. Садсем пуçĕпех пĕтсе ларнă.

Çĕнтерӳ хыççăн садоводсем киле таврăннă, анчах вĕсен сачĕсем вырăнне пушă вырăнсем кăна пулнă, вăрçăччен тăрăшса тунă ĕçсен йĕрĕ те юлман. Пĕтĕмпех çĕнĕрен пуçламалла пулнă, анчах садсене юратакан хастар чĕреллĕ çынсене ку хăратса пăрахман.

— Садсем пулаççех пирĕн! Лайăх садсем пулаççĕ! — тенĕ те М. Башмаковпа С. Кожевников, хăйсем вăрçăччен садсем лартнă вырăнсенче ĕçлеме тытăннă.

...Çĕнĕрен лартма çамрăк улмуççисем те, çырла йывăççисем те пулман, вĕсене пĕр-пĕр питомникрен тупса килмелле пулнă. Ун чухнехи колхоз председателĕ сад валли укça тăкаклама килĕшмен,

çавăнпа та Михаил Васильевич Башмаков 1946 çулхи кĕркунне хăйĕн килти пахчинчи пĕчĕкçеç «питомникрен» икçĕр кăк ытла çамрăк улмуççи, 75 кăк слива кăларса илсе, пулас колхозăн садне кайса лартнă. Çав вăхăтрах чылай пысăк çĕр лаптăкĕ çине панулми, чие, хурлăхан тата ытти çырла йывăççисен вăррисене акса питомник тума тытăннă.

Çĕнĕ сад çавăнтан пуçланса кайнă та вара...

М. В. Башмаков, фашистсем патĕнче пленра пулса темĕн тĕрлĕ асап курнă, вилĕм лагерĕнче сывлăхне çухатса килнĕ çын, колхоз садĕнче мĕнле тăрăшса ĕçлени, ку енче нихçан пулман çĕнĕ сортсем ӳстерни çинчен уйрăм кĕнеке çырма пулать, пурăна-киле вăл кĕнекене кам та пулин çырĕ-ха. Эпир кунта ун çинчен кĕскен кăна каласа парăпăр.

Хăйĕн садне çĕнĕрен ӳстерме колхоз, тĕрĕссипе каласан, пĕр тенкĕ те тăкакламан, анчах Башмаков ĕçлеме тытăнсан 2—3 çултанах ял çумĕнчи çап-çара çырмапа хĕрлĕ тăмлă сăрт палламалла мар пулса тăнă: унта çĕршер улмуççисем, чие, слива йывăççисем, тĕрлĕрен тĕрлĕ йышши хурлăханпа хăмла çырли тĕммисем ретĕн-ретĕн ешерсе ӳснĕ, вĕсем хушшинче хĕп-хĕрлĕ çĕр çырли йăранĕсем илемлĕн тăсăлса выртнă...

Мĕн пĕчĕкренпех сад-пахча ĕçне юратса, ăна хăнăхса ӳснĕ Михаил Васильевич (унăн хăйĕн килĕнче те тĕлĕнмелле чаплă сад!), садсем çинчен нумай вуланă, тĕрлĕрен наукăлла учрежденисем-

пе, опытлă станцисемпе çыхăннă çын, хăйĕн пĕтĕм вăйне, пĕлĕвĕсене колхоз садне вăйлатса, сарса, илемлетсе пырас ĕçе панă. Вăл опытсем нумай тунă, пуринчен ытла ăна кăнтăр енче кăна ӳсекен çырла йывăççисене, чăн малтан винограда хамăр енче ӳсекен тăвасси интереслентернĕ. Час та часах опытсем ăнман, кĕтнĕ результатсем пулса тухман, анчах ывăнма пĕлмен садовод уншăн аллисене усман, опытсене çĕнĕрен тунă, сăнанă, шыранă...

— Кăçал пулмарĕ пулсан — килес çул пулать! — тенĕ вăл.

Иштерекри колхоз сачĕ çинчен часах таврара ырă сăмах сарăлнă, кунта кӳршĕри колхозсенчен кăна мар, чылай инçетри ялсенчен те садоводсем пыма пуçланă. Вĕсем колхоз садне курса çӳренĕ, çĕнĕ сортсене мĕнле ӳстернипе паллашнă. М. В. Башмаков хăй патне пыракансене пурне те кăмăллăн йышăнса хăйĕн ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа кăтартнă, канашсем панă, тĕрлĕ çырла йывăççисен вăрлăхĕсене парса янă. Шăп та унăн ĕçĕнчен пример илсе, çывăхри ытти чылай колхозсенче çавăн пекех ним усăсăр хытса выртакан çырма-çатрасенче улма-çырла йывăççисем лартма, садсем тума тытăннă. Анчах ун чухне ку тăрăхри колхозсем пысăк пулман — кашнинчех вăтăршар, хĕрĕхшер хуçалăх çеç пĕрлешсе тăнă, çавăнпа та вĕсен сачĕсем те пĕчĕккĕ пулнă.

...Пин те тăхăрçĕр аллăмĕш çулта Акуча тăрăхĕнчи ултă ял пĕрлешсе пĕр пысăк колхоз тунă. Хуçалăха пĕрлештерсенех çак ултă ялти садсене

пурне те пысăклатасси тата çĕнĕ садсем тăвасси çинчен сăмах хускалнă.

— Пĕр çырма та усăсăр ан выртăр, пур çĕрте те улма-çырла йывăççисем пулччăр, çырмасем хĕррипе — акаци, тополь, хурăн, çăка ӳстĕр. Çитес çывăх çулсенче хамăрăн ялсене «симĕс пиçиххипе» яваласа илес!

Çапла калаçса татăлнă та правленире, вăл шухăшпа пурте килĕшнĕ. Килĕшнĕ те — ĕçе тытăннă.

Пирвайхи хут эпĕ çак пĕрлешсе пысăкланнă колхозраултă çул каялла пултăм. Правленире ларнă чух сăмах колхоз сачĕсем пирки тапранса кайрĕ.

— Пилĕк çултан пирĕн садсем 50 гектар таран йышăнакан пулаççĕ, — терĕ пĕчĕк хура уссиллĕ типшĕмрех çын. — Ак çакăнтан, ял вĕçĕнчен пуçласа, çак тĕле çитиччен...

Вăл стена патне пычĕ те, пӳрнине колхоз çĕрĕсен планĕ тăрăх шутарма тытăнчĕ.

— Ытлашши нумая хапсăнмастăн-и, Башмаков юлташ? — терĕ манпа пĕрлĕ районран пынă юлташ.

— Нумай мар, сахал-ха вăл, — терĕ ăна хирĕç колхоз садовочĕ. — Кайран ак çак çырмасенче те садсем тăвăпăр акă! Тăршшипех!..

— Шухăшĕ аван ĕнтĕ...

Башмаков тĕрĕснех каланă. Пилĕк çултан эпĕ каллех çак колхоза пырса тухрăм та, колхоз садовочĕсем çав хушăра питĕ нумай ĕçленине, хăйсем тăвас тенине пĕтĕмпех тунине хам куçпах куртăм

вара. Малтан Михаил Васильевич мана колхозăн вунă çул малтарахран лартна «кивĕ» садне илсе кĕртрĕ. Ку сада чăннипех те ĕнтĕ колхоз садовочĕн наукăлла-опытлă лабораторийĕ теме пулать. Мĕнле кăна сăнавсем тумасть пулĕ вăл унта! Сăмахран, пĕр улмуççи çинче вунултă тĕслĕ панулми пулать! Улмуççийĕсенчен пĕрисем, пĕлĕтелле кармашнă пек, йăрстах çӳлелле ӳсеççĕ, теприсем капансем пек сарăлса кайнă, виççĕмĕшĕсем тураттисене çĕр çумĕн сапаласа янă... Темĕн тĕрлĕ чие, слива, хурлăхан пур кунта: час пиçеккеннисем, каярахпа пулаканнисем, сахăр пек тутлисем, кăштах йӳçекреххисем, темлисем те!

«Кивĕ» садран тухса урам урлă каçрăмăр та тепĕр сада, çамрăкраххипе, пырса кĕтĕмĕр. Кунта та темĕн тĕрлĕ улма-çырла йывăççисем куртăмăр. Вĕсем хушшипе çĕр çырли йăранĕсем тăсăлса выртаççĕ. Эпир пынă чух унта шап-шур кĕпесем тăхăннă, хитре саппунсем çакнă, сенкер, сарă, кăвак, кĕрен тутăрсем çыхнă хĕрсем (аякран пăхсан — чечексем темелле!) юрла-юрла çырла тататчĕç. Çырлисем пуç пӳрне пысăкăш, хĕп-хĕрлĕ, çăвара хыпсанах ирĕлсе каяççĕ...

— Çырлине хулана ăсатма васкатпăр, — терĕ Михаил Васильевич, — ытла тăрук пиçсе кайрĕç, пăсăлма пултараççĕ... Кашни кун икшер машина яратпар, çапах та ĕлкĕрейместпĕр сутса пĕтерме.

Унтан эпир çырма тăрăх тăварах кайрăмăр та самаях çӳлĕ сăрт çине хăпартăмăр. Çакăнтан вара пирĕн куç умне тĕлĕнмелле илемлĕ, пĕтĕм

кăмăла уçса ярса чуна çĕклентерекен картина курăнса кайрĕ...

Малтанхи икĕ колхозăн — Сăпайпа Иштерекĕн сачĕсем пĕрлешнĕ те, пĕр пысăк сад пулса, кукăрмакăр çырмасем тăрăх тăвалла, уялла хăпарса кайнă, хăшпĕр тĕлте çырмаран тухса сухаламалли çĕре те чылай йышăннă. Сартран пăхсан, тӳп-тӳрĕ йĕрсем тăрăх лартса кайнă çамрăк улмуççисем, чиепе слива, груша йываççисем стройра тăракан салтаксем пек курăнаççĕ, вĕсем хушшинче — хурлăхан, крыжовник тĕммисем. Çырмасен тĕпĕнче, шурлăхлă вырăнта, шупка-симĕс çулçăллă хăвасемпе çӳçесем ӳсеççĕ (колхозра вăл та кирлĕ, терĕ Башмаков), вĕсенчен кăшт çӳлерехре — хăмла çырли лаптăкĕсем. Çак пĕтĕм ырлăхпа пуянлăх тавра — сада хӳтĕлемелли сарлака «чĕрĕ хӳме» тăсăлать: пĕр рет шĕвĕр çулçăллă вĕрене, пĕр рет хурăн, унтан çăка, акаци...

Пилĕк çул каялла кунта нимĕн те, пĕр йывăç та çукчĕ!

Пĕр виçĕ сехет çӳрерĕмĕр эпир сад тăрăх, колхозри мичуринецсен ĕçĕсем анса пынăшăн савăнтăмăр. Чăн та, ку сачĕ çамрăк-ха халь, тин çеç çимĕç пама тытăнать, анчах тепĕр улт-çичĕ çултан колхоза вăл мĕн чухлĕ тупăш паракан пулать! Çĕршер те çĕршер тонна панулми, груша, чие, слива, хурлăхан тата ытти çырла йăтăнса тухать акă кунтан!..

Колхозри аслă садовод Михаил Васильевич Башмаков хăй тăрăшса йĕркелесе пыракан çак

сад халĕ 30 гектар ытла йышăнать. Малашне вăл татах сарăлмалла-ха, — çĕнĕрен лартмалли çамрăк йывăçсем яланах хатĕр, çĕр гектар çине лартма та çитмелле вĕсем, колхозăн хăйĕн питомниксем пур вĕт-ха. Çав питомниксенчен колхоз çамрăк улма-çырла йывăççисене кӳршĕри колхозсене те, уйрăм çынсене те хуть те мĕн чухлĕ парса ярать. Пĕр 1955 çулта кăна колхоз вĕсене сутса 10.000 тенкĕ ытла тупăш илнĕ, анчах питомниксене тума пĕр пус та тăкакламан...

Ку садсăр пуçне, колхозăн тата виçĕ сад пур — Вускассинче, Тури тата Анатри Томлайсенче вĕсем. Чăн та, кунти садсем пысăк мар, вĕсем 4—5-шер гектар çеç йышăнаççĕ, анчах ӳлĕмрен вĕсем те сарăлма пултараççĕ, ăна валли çырма-çатрасем нумай-ха кунта. Хуть те мĕн чухлĕ йывăç ларт!

...Каçхине, колхоз председателĕн ĕç пӳлĕмĕнче ларнă чух, эпир хăшпĕр цифрăсемпе интереслентĕмĕр. Михаил Васильевич Башмаков та унтахчĕ. Эпир калаçма пуçласанах вăл шалавар кĕсйинчен хура хуплашкаллă пĕчĕк тетрадь кăларчĕ. Çав тетрадьре унăн садсем пирки хуть те мĕнле сведени те пур иккен.

— Сирĕн садсем пĕтĕмпе миçе гектар йышăнаççĕ? — ыйтрăмăр эпир чăн малтан.

— Хальхи вăхăтра — хĕрĕх гектара яхăн. Килес çул хĕрĕх пилĕк гектартан кая мар пулать, — терĕ садовод, тетрадь страницисене уçкаласа. — Ку — тĕп-тĕрĕс.

— Сирĕн садсенче миçе улмуççи, миçе чие,

слива, груша йывăççи, миçе тĕмĕ хурлăхан, крыжовник тата ыттисем ӳснине каласа пама пултараймастăр-и?

— Улмуççисем пирĕн 8 пине яхăн. Çирĕм сорт. Чие йывăççисем — 6 пин,ултă сорт. Ку — тĕптĕрĕс. Анчах хăмла çырли, хурлăхан, крыжовник мĕн чухлине, уйрăмах тата çĕр çырли мĕнле çĕр лаптăкĕ йышăннине тĕрĕссипе каласа параймастăп вара... — Садовод кăмăллăн кулса илчĕ — Шутламан, хисеплемен эпир вĕсене. Хăвăрах куртăр — нумай вĕсем. Питĕ нумай... Пурте хамăрăн. Мĕн тума шутлас? Çитменнине, вĕсем çулсеренех хутшăнса пыраççĕ...

Малалла эпир колхоз хăйĕн сачĕсенчен мĕн чухлĕ тупăш илни çинчен ыйтрăмăр. Çавăнтах колхоз бухгалтерĕ Степан Кудряшов тепĕр пӳлĕме кайса хăйĕн хулăм кĕнекине çĕклесе пычĕ те ăна уçма тытăнчĕ.

— Сире мĕнле... кашни çул мĕн чухлĕ илсе пыни кирлĕ-и?

— Шăп çавă.

— Тархасшăн, çырăр: 1952 çулта садсенчен эпир 36.761 тенкĕ илнĕ, 1953 çулта — 40.516 тенкĕ, 1954-мĕшĕнче — 41.361 тенкĕ. 1955 çулта тупăш тăруках икĕ хута яхăн ӳсрĕ — 74 пин те 585 тенкĕ илтĕмĕр, 1956-мĕшĕнче — 82 пин, кăçал 100 пине çитет, тесе шутлатпăр...

— Шутлатпăр кăна мар, шансах тăратпăр, — хушса хучĕ садовод.

— Питӗ аван ӗнтӗ ку, мӗн каламалли пур, — терӗмӗр эпир, — тӑрӑшса ӗҫлени — куҫ умӗнчех...

— Анчах пирӗн патра кашниех ӗҫлеймест ҫав, — терӗ садовод малалла. — Садовод пулмашкӑн вӑл ӗҫе пӗтӗм чун-чӗререн юратас пулать, кашни йывӑҫшӑн, кашни тӗмӗшӗн пӑшӑрханас пулать, унсӑрӑн нимӗн те тухмасть. Тӑрӑшни кирлӗ... Акӑ, хӑвӑрах шухӑшласа пӑхӑр-ха эсир: сада хӳтӗлемелли «чӗрӗ хӳме» тума кӑна эпир 12 пин йывӑҫ лартса ӳстертӗмӗр!

— Ара, ку вӑл — вӑрман вӗт...

— Вӑрман теме те юрать пулӗ. Улма-ҫырла йывӑҫҫисене хӑйсене пӑхса пурӑнасси тата? Тӗрлӗ хурт-кӑпшанкӑсемпе кӗрешесси? Мӗн чухлӗ ӗҫлемелле унта! Теприсем пире: эсир ҫырла ҫисе пурӑннипех ӗҫкунӗсем илетӗр, текелеҫҫӗ. Тӗрӗс мар вӑл. Ҫавӑн пек палкакансенчен хӑшӗсем пирӗн пата пырса куркаларӗҫ, анчах пӗрер-икшер эрне ӗҫлерӗҫ те — каялла кайрӗҫ. Йывӑр, кӑмӑла каймасть, мӗн тӑвас тетӗн! Анчах ыттисем, сад ӗҫне юратнисем, улт-ҫичшер ҫул ӗҫлеҫҫӗ ӗнтӗ, ҫапах та пӑрахса кайма шутламаҫҫӗ...

Садовод хӑйӗнпе пӗрле нумайранпа ӗҫлекен хӗрарӑмсемпе хӗрсен ячӗсене асӑнать. Раиса Жирнова, Анна Калинина, Анна Андреева, Иринӑпа Мария Яшковӑсем, Валентина Любимова тата ыттисем садоводӑн шанчӑклӑ помощникӗсем пулса тӑнӑ иккен. Ҫак ятсем ҫумне колхоз председателӗ Ҫӗн Томлайри садовод Палкин, унӑн хӗрӗ Татьяна ячӗсене хушса хурать.

— Вёсем сад ёçне питё лайăх хăнăхса çитрёç, хăйсем ыйтас пулсан та, урăх ёçе куçармастпăр халь вёсене...

— Çырасах тетёр пулсан, çакна та ан манăр-ха эсир, — терё унтан председатель. — Юлашки çулсенче пирён колхозниксем хăйсен килёсенче улмаçырла йывăççисем нумай лартса ÿстерме тытăнчёç. Кашниех хăй валли пёчёк сад тума тăрăшать. Лартмалли йывăçёсене илме таçта кайса çÿреме кирлё мар — колхоз питомникёсенчен вёсене хуть те мён чухлё илсе кай, йÿнех паратпăр хамăр çынсене... Тепёр темиçе çултан ака пирён ялсем талккишпех чечекленекен садсем пулаççё, ёненёр мана! Ун пирки эпё ним чухлё те иккёленместёп...

— Питё ырă, çав тери лайăх ёмёт ку, — терёмёр эпир.

— Пирён ёмётсем яланах пурнăçа кёрсе пыраççё, — терё председатель, — мёншён тесен пурте хамăртан килет, хамăр тăрăшнинчен.

Мён калăн ёнтё çакна хирёç? Тёрёс каларё вăл. Пурнăçа тулăх та илемлё тăвасси, чăнах та хамăртан килет çав.



*АВТОБУС «ЧН-79-80»*

Кăçал çулла эпĕ хулари садра хам паллана пĕр шофера тĕл пултăм. Вăл илемлĕн ешерекен йывăççем айĕнчи тенкел çинче хаçат вуласа ларатчĕ. Мана курсан хаçатне хутлатса чĕркуççи çине хучĕ. Эпир пĕр-пĕрине сывлăх сунса алă патăмăр.

— Мĕн çĕнни пур паян хаçатра? — ыт-ахальтен тенĕ пек ыйтрăм эпĕ, ун çумне ларса.

— Каллех вăрçса çырнă, — терĕ шофер кăмăлсăр сасăпа. — Шалт аптрамалла.

— Кама вăрçаççĕ?

— Кама пултăр? Пире, шоферсене! «Лихачсем» вĕт эпир, «калымщиксем», «леваксем»... Тепĕр те-

сен, питĕ кӳренмелле ку! Пĕри айăпа кĕрет, те, пурте айăплă пек пулса тухать.

— Ун пекки пулкалать çав вал...

— Шутласа пăх-ха эсĕ: республикăри çулсем тăрăх халĕ темиçе пин машина чупать, вĕсенчен кашни çинчех водитель ларать, тепĕр чух пĕр машинăпа иккĕн те ĕçлеççĕ. Неушлĕ вара вĕсем хушшинче лайăх çынсем çук? Кала-ха...

— Лайăххисем — ытларах пулĕ, тесе шутлатăп эпĕ.

— Чăн та, пирĕн хушăра çул çӳремелли йĕркесене пăсакансем, тепĕр чух хĕрĕнкĕ пуçпах руль тытакансем те тĕл пулаççĕ, анчах уншăн пурте айăплă мар-çке! — çаплах кӳренсе калаçрĕ шофер.

Эпĕ унăн аллинчи хаçата илтĕм. Хыçалти страницăра, вĕтĕ-вĕтĕ саспаллисемпе, «Шофер-лихач» ятлă кĕске кăна заметка пичетленнĕ иккен. Унта пĕр колхоз шоферĕ, питĕ хытă пынипе, урам хушшинче колхозăн темиçе хурне таптаса кайни çинчен çырнă. Кун пекки унăн пĕрре кăна мар пулнă, тет, мĕншĕн тесен вăл час-часах ўрă пулмасть, тет...

— Кунта пĕр çынна çеç тиркенĕ вĕт, пурне те мар, — терĕм эпĕ, хаçата каялла парса.

— Çавăн йышшисем çĕртеççĕ те ĕнтĕ пирĕн ята, — аллипе сулса илчĕ шофер. — Çав тарăхтарать! Сăмахран мана хамах илес... Вунпилĕк çул ытла çӳретĕп эпĕ машинăпа, анчах та манăн нихçан та нимĕн те пулман, эсĕ ăна ху пĕлетĕн. Тем тесен те, шоферсем хушшинче лайăх ĕçлекенсем

нумай, анчах вĕсем çинчен нихçан та çырмастар эсир!

...Çак калаçава эпĕ нумаях пулмасть пассажирсене илсе çӳрекен автохуçалăх кантурĕнче ларнă чух аса илтĕм.

— Сирĕн примерлă ĕçлекен водительсем çинчен пĕлес килет эппин? Тархасшăн, каласа пама пултаратпăр, нумай вĕсем пирĕн, — терĕç мана автохуçалăх начальникĕпе аслă инженерĕ пĕр харăсах.

Сĕтел çине шоферсен пысăк списокĕ тухса выртрĕ. Начальник ăна йĕркипе вулама пуçларĕ.

— Мана пĕр-икĕ çын пулсан та çитет, — терĕм эпĕ.

— Иккĕ мар—çирĕм иккĕ те тупатпăр. Лайăххисенчен чи лайăххисем пур пирĕн... Акă, сăмахран, 79—80 номерлĕ автобус çинче ĕçлекен Иван Степанович Николаевпа Виктор Александрович Славновские илер. Ылтăн çынсем, темелле! 1954 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласах вĕсем çак машина çинче ĕçлеççĕ, вĕсен машини унтанпа хула урамĕсем тăрăх 180 пин километр чупнă ĕнтĕ, 1 миллион та 500 пин пассажир таран турттарнă... Анчах çав хушăра вĕсен ĕçĕнче пĕр кăлтăк та, пĕр çитменлĕх те пулман, плансене пур енчен те ирттерсе тултараççĕ, бензин, шина, запаслă пайсем нумай перекетлеççĕ, çавăншăн эпир вĕсене пĕрмай приказ çине çырса тав тăватпăр, темиçе хут та премисем, хаклă парнесем панă. Халĕ акă Иван Степанович Николаева парти хула комитечĕ хулари Хисеп хăми çине кĕртмелле турĕ.

— Манăн вĕсемпе хăйсемпе курса калаçасчĕ,— терĕм эпĕ. — Ăçта-ши вĕсем?

— Николаев халĕ лини çинче, паян виççĕмĕш маршрутпа чупать, — терĕ начальник, шоферсен кулленхи ĕçĕсене çырса пыракан журнал çине пăхса илсе. — 14 сехет те 55 минутра вĕсем улшăнаççĕ, автобуса Николаевран Славновский йышăнать. Çавăн чух автовокзал тĕлĕнче курма пултаратăр вĕсене.

— Шăп 14 та 55-ре, тетĕр-и?

— Тĕп-тĕрĕс. Графикрен вĕсем пĕр минут та тухмаççĕ. Мала та каймаççĕ, кая та юлмаççĕ. Йĕрки çапла.

...Автовокзала эпĕ пĕр çур сехет малтарахран пытăм. Кунта пурнăç вĕресе кăна тăрать. Пĕр автобус хыççăн тепри пырса чарăнать, репродукторти сасă пассажирсене пĕрмай пĕлтерет:

— Çав номерлĕ автобус икĕ минутран Канаша тухса каять... Çав номерлĕ автобус Муркаша каять... Етĕрнене каять... Сĕнтĕре каять...

Вокзалтан билет илсе тухнă çынсем хăйсене кирлĕ автобуссене тупса вырнаçса лараççĕ. Çав вăхăтрах теприсем çăмăл таксисене кĕтеççĕ. Рейсран таврăннă таксисем пĕр минут та тытăнса тăмаççĕ — çынсем кĕрсе ларсанах тапранса каяççĕ. Эпĕ, Шупашкарта нумайранпа пурăнакан çын, тĕрлĕ йышши автомашинăсем унталла та кунталла кумнине пăхса тăрса, ĕлĕкхине аса илетĕп... Пĕр çирĕм пилĕк çул каялла Шупашкарта автобуссем, таксисем кăна мар, ытти хуласенчи пек извозчик-

сем те çукчĕ вĕт-ха! Мĕн тери улшăнчĕ пирĕн хула пурнăçĕ, унăн сăн-сăпачĕ!

Автохуçалăх начальникĕ каланă пекех, кăнтăрла иртсен шап 2 сехет те 55 минутра вокзал умне 79—80 номерлĕ ЗИЛ-155 автобус пырса чарăнчĕ. Кĕçех кабинăран хурарах сăнлă, тĕреклĕ, сарлака хулпуççиллĕ çын тухрĕ, çав вăхăтрах ун патне çавăн пекех патвар, çӳлĕ, сарă сăнлă çын пырса тăчĕ. Вĕсем алă тытрĕç.

— Ну, мĕнле? — тесе ыйтрĕ сарри.

— Йĕркеллĕ, — терĕ кабинăран тухни.

— Эп кайрăм эппин.

— Вĕçтер.

Шоферсем ĕçре пĕр-пĕрне улшăннă чух машина капотне уçса мотора пăхаканччĕ, кустăрмисене тĕрĕслекенччĕ, анчах кусен вăл-ку нимĕн те пулмарĕ. Пĕри анчĕ, тепри ларчĕ те — пĕтĕм ĕçĕ те çав кăна пулчĕ.

— Мĕнле питĕ час улшăнтăр вара эсир? — тесе ыйтрăм эп кайран, Иван Степанович Николаевпа паллашсан.

— Мĕншĕн тесен эпир пĕр-пĕрине харпăр хăйне шаннă пекех шанатпăр.Ултă çул пĕрле ĕçленĕ çынна епле шанмастăн-ха? Ку — иккĕмĕш машина ĕнтĕ пирĕн, малтанхине 1951 çулта йышăнса 1954 çулхи кĕркуннеччен çӳренĕччĕ, кайран, лешин срокĕ тухсан, пире çакна, 79—80 пачĕç. Питĕ килĕштерсе ĕçлетпĕр...

...Иван Степанович—Шупашкар районĕнчи Ани-

кесво ялёнчи хресчен çемйинче çуралса ӳснёскер— çамрăкранпах ёçре пиçнё çын. Вунултта çитсенех вăл кёрешсе ёçлеме пуçланă, грузчик та, возчик та пулнă, унтан, 1937 çулта, ăна пёр суту-илӳ организацийё шоферсен курсне ярса вёрентнё. Курсран таврăнсан мён вăрçачченех çав организацинче ёçленё. Ялан ырă ятлă пулнă вăл, ăна тав тунă, премисем панă. Вăрçă пуçлансан виççёмёш кунёнчех фронта тухса кайнă. Кунта та ăна тӳрех машина çине лартнă. Вăл, ытти шоферсемпе пёрле, малти позицисене боеприпассем, апат-çимёç турттарнă, каялла таврăннă чух аманнисене илсе килнё. Вуншар, çёршер хут тӳсме çук хăрушă бомбежкăсем айёнче пулнă (фашист çăханёсем пирён автоколоннăсем хыççăн мёнле ыткăнса çӳренине эпир пурте лайăх астăватпăр), кёркунне-çуркунне фронтри çулсем çинче кустăрмисем курăнми пылчăк ăшне кёрсе ларнă машинăсене турттса кăларнă, çапах та ялан малалла кайнă, фронта мён кирлисене вăхăтра çитерме тăрăшнă... Николаев питё ăста, çав тери тăрăшса ёçлекен шофер пулнине кура, икё çултан ăна автобатра взвод командирё тунă. Вара вăл вунçичё машинăшăн ответлă пулнă.

— Кивелнё машинăсем час-часах çёмёрлетчёç, вёсене юсама запаслă пайсем çукчё, çавăнпа та эпир трофейлă машинăсен пайёсемпе усă курма вёрентёмёр, — каласа парать Иван Степанович.— Эпир, тăшмана çёнтерсе пырса, Молдави урлă Румыние, унтан Венгрие, Австрие çитсе тухрă-

мар, пирĕн машинăсем пур çĕрте те шанчăклă пулчĕç...

Фронтра командирсем хушнисене яланах лайăх туса пынăшăн, паттăр пулнăшăн Иван Степановича малтан «За боевые заслуги» медальпе, унтан Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă. Фронтрах, 1944 çулта, хастарлă шофера, хĕрӳллĕ патриота Коммунистсен партине илнĕ. Çĕнтерӳ хыççăн киле таврăнсан темиçе кунтанах вăл хăй вăрçăччен ĕçленĕ организацине пырса каллех руль тытнă.

Автохуçалăха Николаев 1951 çулта куçнă та Славновскипе пĕрле ĕçлеме пуçланă. Питĕ лайăх, шанчăклă юлташ пулнă уншăн çак çын. Вăл та, Николаев пекех, фронтра пулнă, Тăван çĕршывшăн çапăçнă. Ĕçре вĕсем часах туслашнă, вара ик-виçĕ уйăхранах шоферсем хушшинче чи ырă ятлисем пулса тăнă. Пухусенче, канашлусенче ĕçри çитменлĕхсем çинчен, вĕсене пĕтерсе пырасси çинчен калаçмалла пулсан, Николаевпа Славновскинчен пример илме сĕннĕ.

Çул хыççăн çул иртнĕ, вĕсем яланах йĕркеллĕ, лайăх ĕçлесе пынă...

Пире питĕ интереслĕ цифрăсемпе паллаштарчĕç. Николаевпа Славновский халь çӳрекен 79—80 автобуспа ĕçлеме тытăннăранпа — 1954 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕччен—180 пин километр чупса 4.041 литр бензин перекетленĕ, вĕсен автобусĕ яланах юсавлă пулнипе ăна пысăк ремонт туман, çав майпа 10.200 тенкĕ государство укçи перекетленнĕ, ма-

шинана кирлĕ пек, йĕркеллĕ, техникалла правилисене пăхăнса илсе çӳретнипе 6 автопокрышка упраннă — вĕсен хакĕ 4.550 тенкĕ. Анчах çав вăхăтрах çак тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен икĕ шофер пассажирсем турттармалли тата укçа пухмалли плансене 135 процент таран тултарса пынă.

Питĕ те лайăх пример ку ыттисемшĕн!

Çавăнпа пана та ĕнтĕ вĕсене Хисеп грамотисем, премисем, хаклă парнесем. Кăçал та акă Иван Степанович Николаева — радиоприемник, Виктор Александрович Славновские — «Победа» сехет парнеленĕ. Тивĕçлĕ пулнă эппин вĕсем çак парнесене!

...Иван Степанович ĕçрен пушаннă май эпир унпа чылайччен калаçса лартăмăр. Вăл хăйĕн пурнăçĕ çинчен кăна мар, вĕсен, Славновскипе иккĕшĕн ĕçĕсем мĕнле майпа ăнса пыни çинчен те каласа пачĕ.

— Машинăна пур чухне лайăх пăхса усрама, ăна тивĕçлипе çӳретме тăрăшатпăр эпир, — терĕ вăл. — Ирхине, маршрутпа тухса каяс умĕн, пур енчен те тĕрĕслетпĕр — кайран чăрмав ан пултăр, каçхине гаража таврăнсан та пĕтĕмпех тĕрĕслесе пăхатпăр — кун каça пăсăлман-и мĕн те пулин? Кăлтăк палăрсан—каçхинех тӳрлетсе хăваратпăр, унсăрăн ирхине чăрмав пулма пултарать. Çӳрессе — тикĕс, машинăна кăрт-карт турткаламасăр çӳретпĕр...

— Алла руль тытни миçе çул çитрĕ ĕнтĕ сирĕн? — ыйтрăм эпĕ юлашкинчен.

— Чылай ĕнтĕ, çирĕм пĕр çул.

— Çирĕм пĕр çул хушшинче вара сирĕн пĕр авари те, нимĕн те пулман-и?

— Пулман. Малашне те пулмĕ, йĕркеллех ĕçлесе пырăп, тесе шутлатăп-ха, — терĕ Иван Степанович.



## ÇĔР ТЕ ÇИТМЕЛ РОЛЬ

...Чаршав юлашки хут ерипен хупăннă та, спектакль пĕтнĕ. Залри пĕтĕм халăх ура çине тăрса питĕ хытă алă çупнă, чаршав каллех уçăлнă, артистсем, пĕр-пĕрине аллисенчен тытса, куракансене пуç тайнă, унтан чаршав татах—юлашки хут—хупăннă. Çынсем залран тухса тумланнă та килĕсене кайнă, театр пушанса юлнă.

Халăх саланса пĕтсен театрти ватăрах уборщица зала урай шăлма пырса кĕнĕ. Пăхать — пушă залра, каярахри ретре, пĕр-пĕччен арçын ача кусĕсемпе сцена еннелле пăхса, ним хускалмасăр

лара парать. Хĕрарăм ун патне пырать те лăпкăн кăна:

— Эс мĕн кĕтсе ларатăн кунта, ачам? — тесе ыйтать.

— Урăх пулмасть-им? — вăртах ун патнелле çаврăнать çак ача.

— Мĕн — пулмасть-и?

— Спектакль!

— Ара, спектакль пĕтрĕ вĕт, ачам. Курмастăн-им, театрта пĕр çын та юлмарĕ, пурте киле кайса пĕтрĕç... Эсĕ те киле кай, аçупа аннӳ çухатрĕç пулĕ-ха сана.

Ача тĕлĕннĕ пек пулать, хĕрарăм çине ăна ĕненмен пекрех пăхать, унтан залра чăнах та никам та юлманнине курать те вăшт кăна сиксе тăрать.

— Пурпĕрех артист пулатăп эпĕ, кинеми! — тет те вăл сасартăк, аллинчи мулахайне пуç çине пусса лартса, алăк патнелле патлаттарса утса каять...

— «Артист!..» — ун хыçĕнчен пăхса кулса юлать хĕрарăм.

Çакă вăл — Борис Алексеев, Шупашкар районĕнчи Паçпак ялĕнчи пуçламăш шкулта вĕренекен чăваш ачи пулнă. Унăн ашшĕ паян темле ĕçпе хулана килесси çинчен пĕлсен, вăл ăна ирхине ирех йăлăнма тытăннă:

— Мана та илсе кай-ха, атте! Манăн театр курас килет. Хама пурте «артист», теççĕ, анчах хам эпĕ пĕрре те чăн-чăн театр курман-ха...

Ашшĕ ăна илсе каясшăн пулман, мĕн сĕтĕрĕнсе

çӳремелле пустуй, тенĕ, анчах ывăлĕ хурланнине, унăн куçĕсем шывланнине курнă та — хĕрхеннĕ, Шупашкара çитсен вара театра кайса курма аллă пус укçа та панă...

Вăл каç сцена çинче вырăссен чаплă писателĕ Н. В. Гоголь çырнă «Вий» калав тăрăх йĕркеленĕ спектакль вылянă. Ялтан килнĕ ачана темле асамлă тĕнчене лекнĕ пекех туйăннă, вăл хăй ăçта ларнине те манса кайнă. Ытла та тĕлĕнмелле-çке!

Борис çав тери шухă, çивĕч, пурне те пĕлесшĕн çунакан ача пулнă, пĕр виççĕмĕш класа çитсенех драмкружокра выляма пуçланă, ташлама, юрлама юратнă, шкулти пĕр вечер та унсăр иртмен, çавăнпа та юлташĕсем, шӳтлесе, ăна «артист» тесе чĕннĕ. 1926 çулта—вунпиллĕкрискер—вăл Шупашкарти иккĕмĕш сыпăклă шкула вĕренме килсе кĕнĕ, кунта та тӳрех драмкружока çыраннă, анчах... выляма тӳр килмен унăн, ма тесессĕн драмкружок вырăсла пьесăсем çеç лартнă, Борисăн вырăсла тухсах кайман. Анчах вăл кружока пурпĕрех çӳренĕ, юлташĕсене суфлер пулса пулăшнă.

Пĕр хĕл кăна пурăннă Борис хулара. Амăшĕ йывăр чирленĕ пирки вăл вĕренме пăрахса яла таврăнать те, ашшĕ ăна чăпта çапакансен артельне вырнаçтарать. Ир пуçласа каçчен йĕп туртать вăл, кун каçа çав тери ывăнса çитет, анчах ĕç хыççăн киле таврăнса апат çикелесенех шкула тухса чупать — репетицине! Кружокра вăл—асли, ертсе пыраканни, «режиссер!» Алла мĕнле интереслĕрех пьеса лекет, «Сунталпа» «Капкăнра» мĕнле çĕнĕ

пьесăсем тухаççĕ — çавсене пурне те лартса кă-тартма тăрăшать Борис. Хăй, паллах ĕнтĕ, яланах теп рольсене, «геройсене» вылять, анчах пуринчен ытларах ăна кулăшла рольсем кăмăла каяççĕ. Ун пек рольсем лексен вара Борис çынсен варĕсем хытса ларичченех култарать...

— «Йĕп ачи» пулнипе нумаях мала каяймăн, сып пулаймăн, ывăлăм, — тенĕ ăна ашшĕ çава тухсан,— санăн, епле пулсан та, пĕр-пĕр ĕçе вĕрен-текен шкула кайса кĕрес пулать.

— Ăçта каяс-ха, атте?

— Авă, Шемшерте сĕтел-пукан тума вĕрентекен шкул пур. Кĕр çавăнта, столяр пулатăн хуть...

— Юрать, атте, илсе кай, — тӳрех килĕшнĕ Борис.

Профтехшкула вăл çăмăллăнах вырнаçнă, ла-йăх вĕренсе пынă, çав вăхăтрах кунта та пĕр вĕ-çĕм драмкружок лартакан спектакльсенче вылянă. Спектакльсене шкул ачисĕм Шемшерте çеç мар, юнашар ялсене те час-часах кайса кăтартнă. Пур çĕрте те çамрăк «артистсене» ăшшăн йышăннă, анчах пуринчен ытла Борис Алексеева ырланă:

— Кунтан чăнах та артист пулать пулĕ!

— Ытла та ловкă вылять шельма ачи...

Шкулти хăшпĕр учительсем спектакльсем хыç-çăн пĕрре кана мар калана:

— Санăн, Борис, столяр пуласси çинчен мар, артист пуласси çинчен ытларах ĕмĕтленмелле пуле.

— Ун пирки хам та шутлатăп та, тем тумал-

ла-ҫке? Ҫаван йышши шкул уҫӑлас пулсан, пӗр сӑмахсӑрах кайӑттӑм та, ҫук-ҫке ун пек шкул?

Шемшерте икӗ ҫул вӗреннӗ хыҫҫӑн Борис сасартӑк ҫав тери савӑнмалли хыпар илтнӗ: Шупашкарта, Чӑвашсен Тӗп театрӗ ҫумӗнче, артистсем хатӗрлекен студи уҫӑлать иккен! Ҫитрӗ хайхи ӗмӗт!.. Нумай шухӑшласа тӑмасӑрах, Борис Шупашкара кайса заявлени парать те, экзамена питӗ лайӑх тытса, ҫав студие кӗрет.

Ку 1929 ҫулта пулнӑ.

Сисӗнмесӗрех виҫӗ ҫул иртсе каять. Кӑнтӑрла ҫамрӑксем артист ӑсталӑхне вӗренеҫҫӗ, каҫ-каҫ театрта массӑллӑ сценӑсенче выляҫҫӗ, сценӑна хӑнӑхаҫҫӗ... 1932 ҫулта вара хӑй пекех ялсенчен пынӑ пултаруллӑ ҫамрӑксемпе пӗрле драма артисчӗ пулса тӑрать. Чӑн-чӑн артист. Ҫавӑнтанпа унӑн пурнӑҫӗ ялӑнлӑхах, ӗмӗрлӗхех театрпа ҫыхӑнать.

...Борис Алексеев чӑваш театрӗн сцени ҫине профессилле актер пек пӗрремӗш хут тухса пысӑк роль вылянӑранпа ҫирӗм пилӗк ҫул иртрӗ. Ҫав чӗрӗк ӗмӗр хушшинче вӑл ҫӗр те утмӑл виҫӗ пьесӑра 170 роль ытла вылянӑ. Калама ҫӑмӑл. Анчах та артистшӑн ку питӗ нумай. Кашни ҫӗнӗ роле вылянӑ чухне малтанхисенчен пачах расна, ҫӗнӗ сӑнар пулмалла-ҫке, урӑх йышши характер кӑтартмалла. Кашнинчех ҫӗнӗ сӑн-сӑпат, урӑхла йӑласем тупмалла, — иртнинче вылянине тепӗр хут кӑтартма юрамасть. Унсӑрӑн артист пӗтет. Ҫакна питӗ лайӑх ӑнланса, Борис Алексеев каш-

нинчех ҫӗнӗ, пӗр-пӗринчен пуҫӗпех уйрӑм, пӗр-пӗринпе ниепле те хутӑштарма ҫук сӑнарсем туса кӑтартать те ӗнтӗ.

Чи пахи — унӑн пултарулӑхӗ нумай енлӗ пулни. Паян вӑл пӗр-пӗр комедире кулӑшла роль выляса куракансене чӗререн савӑнтарать, ыран — драмӑри тарӑн психологилле сӑнара кӑтартать, тепӗр кунне вара трагедире ҫавӑн пекех ӑста вылять.

«Япӑх рольсем ҫук, япӑх актерсем кӑна пур», тенӗ вырӑссен тӗнчипе паллӑ режиссерӗ К. С. Станиславский. Куна вӑл хӑшпӗр артистсем «эффектлӑ» та пысӑк рольсем кӑна вылясшӑн пулнине тиркесе каланӑ. Пирӗн Борис Алексеев рольсене суйласа тӑмасть. Хуть те мӗнле роль парсан та, вӑл нумайлӑха асра юлакан сӑнарсем тӑвать.

Чӑвашсен театр искусствин историне ҫыракансем Борис Алексеевӑн пултарулӑхне пур енчен те тӗпчӗҫ-ха, ӑна пӗтӗмпех уҫса парӗҫ. Пӗчӗк очеркра кӑтартса пама ҫук ӑна. Эпир вӑл выляна хӑшпӗр рольсене ҫеҫ аса илӗпӗр.

Тӳррипех калас пулать: пирӗн театр лартнӑ паллӑрах спектакльсене аса илме пуҫласан, куҫ умне тӳрех Борис Алексеев вылянисем тухса тӑраҫҫӗ, — вӗсене ӗнер кӑна курнӑ, тейӗн.

Акӑ, вӑрҫӑченхи спектакльсене илер. Кам астумасть пулӗ «Кушарти» пуянсем улталаса пурӑннӑ, анчах кайран хӑйӗн этем тивӗҫлӗхне ӑнланса илнӗ Мурсая? «Сатурпа Илемри» Асамат ятлӑ кӗске ӑслӑ поэта? Максим Горькин «Тӗпӗнче» драминчи чарусӑр Алешкӑна, «Судра» комедири

Ухтерккене, «Айтарти» Мăнкĕрĕве, «Борис Годуноври» таркăн манах Мисаила, «Пограничниксем» пьесăри хастарлă çамрăк салтак Сорокина, «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» инсценировкăри Павка Корчагина, «Хаярлăхпа юратури» тискер гофмаршал фон-Кальпа, «Хĕн-хур айĕнче» драмăри ватă Тевенеше? Вĕсене пурне те Алексеев вылянă...

Вăрçă хыççăн вылянисене аса илер тата. Мĕн тери лайăх кăтартрĕ Борис Алексеев Н. В. Гоголĕн «Ревизорĕнчи» пуш параппан çапакан Хлестакова, А. Н. Островскин «Вăрман» комединчи мĕскĕн артист Аркашка Счастливцева, «Бальзаминов авланни» комединчи тамсай Бальзаминова... Кусем пурте — комедилле рольсем. Анчах пирĕн артист çав вăхăтрах пачах урăх йышши рольсене те пысăк ăсталăхпа вылярĕ. «Сатурпа Илемре» вăл чăваш ялĕнчи çĕрме пуян ывăлĕ пулнă шурă офицер Шакмак, «Пурнăçа юратса» драмăри гестапо начальникĕ Бэм, «Бронепоезд 14—69» пьесăри шуррисен капитанĕ Незеласов ролĕсене выляса, Алексеев ĕçхалăх тăшманĕсен сăнарĕсене, вĕсен çынçиенле чунĕсене çав тери ĕнентерӳллĕ кăтартса пачĕ.

Анчах унăн творчествинчи чи пысăк ӳсĕм—1947 çулта вăл пирĕн генилле çулпуç Владимир Ильич Ленин рольне выляни пулнă.

Театр Н. Погодинăн «Пăшаллă çын» пьесине лартма йышăнса В. И. Ленин рольне Борис Алексеева парсан, вăл çак ытла та пысăк, калама çук ответлă ĕçе тума икĕ çул хатĕрленнĕ. Вăл Ленин

çинчен Максим Горький, Н. К. Крупская, Клара Цеткин тата ыттисем аса илсе çырнисене темиçе-шер хут вуланă, Мускава кайса, Ленин рольне вылянă паллă артистсемпе тĕл пулса калаçнă, Ленин музейĕнче нумай çӳренĕ, Ленина кăтартакан кинохроникăсене пăхнă, Ленин сăмахĕсене çырса илнĕ грампластинкăсене итленĕ, темиçе çĕр фотоӳкерчĕк пăхса тухнă. Нумай ĕçлемелле пулнă артистăн!..

Çавăн пек тăрăшса ĕçлени чăнах та сая кайман вара. Владимир Ильич рольне Алексеев ăнăçлă вылянă, аслă çулпуç сăнарне тĕрĕс те ĕнентерӳллĕ кăтартса панă, унăн ĕçне Мускаври паллă артистсем те ырланă, куракансем те ăшшăн, тулли кăмăлпа йышăннă. Артист пултарулăхĕ çĕнтернĕ.

Ун хыççăн та нумай ответлă рольсем вылянă вăл. Вĕсенчен пĕри—В. Ржанован «Энтип» драминчи тĕп герой—Энтип ролĕ пулнă. Тĕттĕм чăваш ялĕнче пуранакан вăтам хресчен Совет влаçне ăнланса, ун майлă çавранса, юлашкинчен колхоза кĕрсе çĕнĕ пурнăçшăн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешме тытăннине Борис Алексеев пит те витĕмлĕ кăтартса пачĕ. Çак спектакль ăнăçлă пулни, куракансем ăна ик-виçĕ çул хушши юратса пăхни пуринчен ытла Алексеев лайăх выляниnчен килнĕ.

Пĕр икĕ çул каялла тата Алексеев С. Эльгерĕн «1918 çул» пьесинче хамăрăн чаплă земляк, граждан вăрçи геройĕ Василий Иванович Чапаев сăнарне пирĕн сцена çинче пĕрремĕш хут кăтартса пачĕ.

Çавнашкал ĕнтĕ, кĕскен каласан, Борис Алексеевăн сцена çинчи пултарулăхĕ. Нумай ĕçленĕ вăл. хастарлă ĕçленĕ, çирĕм пилĕк çул хушшинче 2 500 хут ытла сцена çине тухса выляна, кашни спектакле, вăтамран, 150 çын çеç пына тесе шутласан та, унăн вăййине 375 пин çын ытла курнă. Çавăнпа юрататъ те ăна халăх, çавăнпа ăна 1940 çултах РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕн ятне, 1943 çулта Чăваш АССР халăх артисчĕн ятне панă. Тивĕçлĕ пулнă вăл çав хисеплĕ ятсене!

Коммунист Борис Алексеев — лайăх артист кăна мар, вăл обществăлла ĕçсене активлăн хутшăнакан çын, хамăрăн Тăван çĕршывăн хĕрӳллĕ патриочĕ. 1939 çулта, Финляндипе Совет Союзĕ хушшинче вăрçă пуçлансан, вăл хулари çар комиссариатне заявлени парса, хăй ирĕкĕпе фронта тухса кайнă. Каçхине театрта «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» спектакльте Павка Корчагин рольне вылянă, ирхине çар эшелонĕнче пулнă, темиçе кунтан фронта çитсе, тăшмансене хирĕç Павка Корчагин пекех хĕрӳллĕн çапăçнă...

Шупашкарти ĕççыннисем виçĕ хутчен ăна хула Совечĕн депутатне суйларĕç. Суйлавçăсем хăйне шаннине вăл халĕ те тивĕçлипе туса пырать. Культурăпа искусство ыйтăвĕсене сӳтсе явнă чух та аякра тăмасть вăл, паха сĕнӳсем паратъ, пухусенче тухса калать, статьясем çырать. Унăн пĕтĕм ĕмĕчĕ — хамăрăн тăван искусствăна çӳлтен-çӳле çĕклесе малалла аталантарассишĕн ĕçлесси.

— Мана Совет влаçĕ çын турĕ, — тет Борис

Алексеевич. — Октябрьти аслă революци пулман пулсан, эпĕ хут пĕлмен чăптаçăран ытла никам та пулаймастăм ĕнтĕ. Халĕ эпĕ тăван халăхăн театрĕнче ĕçлекен артист, искусство çынни. Çавăнпа та эпĕ хамăн пĕтĕм вăя, пултарулăха Совет влаçне, партие, халăха пама тăрăшатăп. Манан коммунизм тăвакан паянхи паттăр совет çыннисен сăнарĕсене ытларах кăтартса парас килет. Вăл сăнарсем çынсен кăмăлĕсене çĕклентерччĕр, малашнехи тата ырăрах пурнăçшăн, пур халăхсен телейĕшĕн кĕрешме чĕнччĕр!

...Борис Алексеев халĕ — вăйпитти çын, унăн пултарулăхĕ ӳссех пырать, çавăнпа та вăл хăйĕн ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртессе эпир çирĕп шанатпăр, ăна хăйĕн пархатарлă ĕçĕнче ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тума сунатпăр.



## *УЧАСТОКРА ЙĔРКЕЛЛĔ...*

> Моя милиция —
> Меня бережет.
>
> *В. МАЯКОВСКИЙ.*

...Поселокра ăна кашниех паллать—ватти те, çамрăкки те, арçынĕ те, хĕрарăмĕ те. Шкул ачисем пулса, вĕсем те ăна тĕл пулсан саламласа иртсе каяççĕ, мĕншĕн тесен вăл кунта вунă çул ытла пурăнать те ĕнтĕ, çав хушăра кашни килтех, кашни хваттертех пĕрре кăна мар пулнă. Пĕрисем ăна хайсем чĕннĕ — кирлĕ пулнă, теприсем патне хăех, йыхăрмасăрах кайса пăхнă — мĕнлерех пурăнаççĕ-ха çынсем?

Кун каҫа ӑна таҫта та курма пулать: хӑй ӗҫлекен учреждениере, поселок Советӗнче, магазинсенче, сӗт-ҫу, пахча ҫимӗҫ сутакан павильонра; рабочисем пурӑнакан бараксенче те час-часах пулать вӑл, каҫхине клуба та кӗрсе тухать. Сӗм ҫӗрле, пархатарлӑ ӗҫ кунӗ хыҫҫӑн пӗтӗм халӑх канлӗ ыйхӑпа ҫывӑрнӑ чух та ҫак ҫӳлӗ, тӗреклӗ ҫын поселок урамӗсем тӑрӑх ҫутса иртет.

Вӑл — милицин аслӑ лейтенанчӗ, ҫак участокри уполномоченнӑй Гурий Яковлевич Кульков. Унӑн ӗҫӗ — поселокри йӗркелӗхе ҫирӗп тытса пырасси, пурнӑҫ йӗркине пӑсма пикенекенсене чарасси. Ҫавӑнпа пур ҫӗрте те пулать вӑл, пурне те сӑнать, курать, тӗрӗслет, сӗмсӗр ҫынсем хӑйсене тыткалама пӗлмеҫҫӗ пулсан, пирӗн совет пурнӑҫӗн йӗркисене пӑсаҫҫӗ, иртӗнеҫҫӗ пулсан—вӗсене йӗркене кӗртет, кирлех пулсан—закон тӑрӑх айӑпламалла тума та пултарать. Ку — унӑн тивӗҫӗ.

...Ирхине вӑл хӑйӗн учрежденине (пӗтӗмпе те пӗр пӗчӗк пӳлӗм кӑна, унта вал пӗчченех) пырать те чӑн малтан пысӑкрах ҫуртсен управляющийӗсемпе, комендантсемпе, урам комитечӗсемпе, поселок Совечӗпе ҫыхӑнать.

— Салам! Мӗнле унта, сирӗн таврара, пӗтӗмпех йӗркеллӗ-и? Вӑл-ку нимӗн те пулман-и? Пулман, тетӗр? Пит аван эппин. Сывӑ пулӑр.

Участокра кӗҫӗр нимӗнле йӗркесӗрлӗх те пулман пулсан, уполномоченнӑй ытти ӗҫсене тытӑнать. Унӑн хӑйӗн планӗ пур: паян, калӑпӑр, ҫав урама

тӗрӗслемелле — бригадмилецсем унта темле ниҫта ӗҫлемен, пропискӑсӑр пурӑнакан ҫынсем пурри ҫинчен систерчӗҫ; ҫула май юнашар урамри барака кӗрсе тухмалла — унта килхушшинче ним йӗрки те ҫукчӗ, ҫӳп-ҫап, турпас, тем те пӗр, ӑнсӑртран пирус тӗпӗ пӑрахсанах тивсе илме пултарать. Тасатма хушнӑччӗ—тасатнӑ-ши-ха? Қаҫхине ЖКО-ра (жилищно-коммунальнӑй отделта эппин) ҫурт-сен коменданчӗсемпе, управляющисемпе калаҫу irттермелле — харампырсемпе кӗрешесси ҫинчен калакан Указа ӑнлантарса памалла, хатӗрленес пулать...

Анчах сасартӑк ҫак пӗтӗм план арканса каять. Тулти алӑк шӑлт та шалт уҫӑлса хупӑнать те, пӳлӗме пӗр хӗрарӑм кӗрсе тӑрать. Пӑхсах паллӑ — унӑн темле ырӑ мар ӗҫ пулнӑ, куҫӗсем ялкӑшаҫҫӗ, тутисем чӗтреҫҫӗ.

— Кульков юлташ, мана ҫаратнӑ! — тет те вӑл, тӳрех макӑрса ярать. — Юлашки укҫана... пальто илес тесе пухсаттӑм...

— Епле ҫаратнӑ? Ӑҫтан, хӑҫан? Лар-ха эсӗ, инке, йӗркипе каласа пар. Макӑрма чарӑн, эс макӑрнӑшӑн вӑрӑ санӑн укҫуна пурӗпӗр тавӑрса парас ҫук,—лӑплантарать ӑна участокри уполномоченнӑй, хӗрарӑм каланисене ҫырса пыма хатӗрленсе.

Ӗҫӗ ҫапла пулнӑ иккен. Ҫак Н. хушаматлӑ хӗрарӑм кӗҫӗр ҫӗрлехи сменӑра ӗҫленӗ. Қаҫхине, ӗҫе каяс умӗн, вӑл пурӑнакан барак коридорӗ тӑрӑх темле палламан ҫын сулланса ҫӳренӗ, нихҫан илт-

мен хушаматлă çынна ыйтнă. Н. «ун пеккине пĕлместĕп», тенĕ те, çав çын умĕнчех пӳлĕм алăкне питĕрсе ĕçе тухса кайнă. Ирхине тавранать — алăк уça, арчари япаласене кăларса ывăтса пĕтернĕ, 500 тенкĕ укçа — çук.

— Тупма пулăшăр тархасшăн! Çавах тунă ăна! — йĕрет хĕрарăм.

«Тупма пулăшăр...» Калама çăмăл! Анчах мĕнле тупмалла? Çыннине лайăххăн палласа юлман, йĕрлеме май килмест — коридор тăрăх унтанпа çĕр çын та утнă ĕнтĕ. Тата, кам пĕлет, тен вăрлаканни — леш çын мар, урăххи? Тен, кӳршĕсемех «майлаштарнă»? Ун пекки те пулать тепĕр чух.

Аслă лейтенант шухăша каять. Вăрра тытмаллах, ăна тытмасан вăл татах сатăр тума пултарать. Мĕнрен пуçлас-ха? Паллă ĕнтĕ, халех çак хĕрарăм пурăнакан барака каймалла. Унти çынсемпе калаçмалла. Мĕн курнă вĕсем, мĕн илтнĕ. Çав енче пурăнакан бригадмилецсемпе тĕл пулас пулать, вĕсем кама та пулин асăрхаман-и ĕнер?

Темиçе минутран Кульков «преступлени тунă. вырăна» çитет. Шар курнă хĕрарăм пӳлĕмĕн алăкĕнчи çăрине çĕмĕрмен, уççи юраттарса уçнă. Япаласене тĕкĕнмен, — эппин вăрра «таса укçа» çеç кирлĕ пулнă, кĕпе-йĕмсем сутса апаланасшăн пулман вăл.

Баракри çынсем нимех те калайман. Кульков çывăхри бригадмилецсемпе калаçнă. Вĕсем те нимĕн те пĕлмен. Ĕнтĕ, преступник йĕрĕ çине ӳкес шанчăк çухалма пуçланă, темелле. Хăçан та пул-

сан пурепёрех лекет те-ха вăл, анчах халь тепле пытанчĕ пулмалла.

Пĕр бригадмилецпа каласса тăнă вăхăтра Кульков ăна кăшт çеç чавсинчен тĕртсе илет те, хăйсен тĕлĕпе иртсе пыракан хĕрарăм çине кăтартать:

— Пăх-ха, ирех магазинран эрех илсе килет. Курмастăн-им, саппунĕпе хуплана...

— Мĕн вара? — ăнлансах çитеймест бригадмилец.

— Ĕçкĕ пулман-и ĕнер ун патĕнче? Пĕл-ха кайса.

Участокри уполномоченнăй çак хусах хĕрарăм час-часах çынсене «хваттере яни» çинчен лайăх пĕлнĕ. Ун патĕнче ӳсĕрсем çапăçни те пĕрре кăна мар пулнă. Кĕçĕр те кам та пулин хăнара пулманши? Çĕрле ĕçнĕ те — халь мухмăр...

Тĕп-тĕрĕс шутлана Кульков. Темиçе минутранах бригадмилец ăна çав хĕрарăм патĕнче иртнĕ каç ĕçкĕ пулни çинчен пĕлтерет. Вĕсем вара тӳрех унта каяççĕ те урайĕнче темле çын çывăрса выртнине кураççĕ. Вăратаççĕ. Леш хăраса ӳкет... Вăл нумаях пулмасть тĕрмерен тухнă, ниçта ĕçлемен Б. пулнă. Кульков çине тăрса тĕпчеме тытăнсан, вăл кĕçĕр укçа вăрланине тунайман.

...Тепринче участокри уполномоченнăй патне Ф. гражданин пырса, иртнĕ каçхине столовăйра такамсем унăн аллинчи «Победа» сехете хывса илни çинчен пĕлтернĕ. Хăй... нимĕн те астумасть иккен вăл. Вăрăсем ăна малтан «ку пирĕн тус» тесе

урама илсе тухнӑ; сехетне хывса илсен ҫиелтен хӗнесе хӑварнӑ.

Мӗнле тупмалла ӗнтӗ ҫав «туссене»?

Кульков столовая кайса унта ӗҫлекенсене тӗпчеме тытанать. Кампа пулнӑ ҫак Ф., хӑш вӑхӑтра, кампа пӗрле тухса кайнӑ? Тӗпӗ-йӗрӗпе астӑвакан сем пулман. Ҫаҫхине столовӑя ҫын нумай кӗрсе тухать те, ӑҫтан-ха пурне астуса юлан? Гардеробра ӗҫлекен хӗрача ҫеҫ кӑшт тӗллеттернӗ:

— Ф. виҫӗ ҫынпа ларчӗ, вӗсене хӑналарӗ. Виҫҫӗшинчен пӗрине кӑшт паллатӑп, вӑл кунти ҫынах, кӑшт уксаклать, ӑна эпӗ час та часах ҫӗвӗ ҫӗлекен мастерской таврашӗнче куратӑп, анчах ӑҫта ӗҫленине пӗлместӗп...

Пӗртен-пӗр паллӑ: пӗри кӑшт уксаклать. Анчах сахал-и уксаклакан ҫын? Туп-ха вӗсем хушшинче айӑплине!

Кульков ҫапах та ҫирӗп шут тӑвать: пур уксаксене тӗрӗслесе пӗтерес ҫук, анчах ҫав часчасах ҫӗвӗ мастерскойӗ таврашӗнче пулаканнине тупмаллах. Бригадмилецсем урлӑ пӗлет: мастерскойӗнче чӑнах та пӗр уксак ҫын пур. Унтан, ним тӑхтаса тӑмасӑрах, ӑна хӑй патне чӗнтерет те, ун ҫумӗнче вӑрланӑ сехете тупать. Пытарма та, кӑларса ывӑтма та ӗлкӗреймен иккен лешӗ вӑрланӑ япалана.

— Халӑхпа ҫыхӑнса ӗҫлемесен, пире пулӑшакансем пулмасан, эпир нимех те тума пултараймӑттӑмӑр, — тет Гурий Яковлевич. — Ҫавӑнпа та эпӗ яланах хамӑрӑн активпа тачӑ ҫыхӑну тытатӑп.

Милицие хăйсен ирĕкĕпе пулăшакансем — бригадмилецсем — вăтăр çын ытла ман тавра. Унсăр пуçне, бригадăра тăман комсомолецсем те лайăх пулăшаççĕ. Комсомол комитечĕ пуçарнипе, кашни каç тенĕ пекех комсомолецсен патрулĕсем çӳреççĕ, вĕсем урамсенче, паркра, клубра пулаççĕ. Ну, йĕркелĕхе çирĕп тытса пыма çуртсен управляющийĕсемпе комендантсем те тăтăшах пулăшаççĕ Ун пек кун пеккисене асăрхасан, тӳрех пĕлтереççĕ, вара ĕçе пĕрле тытăнатпăр...

Актив хăйне мĕнле пулăшни çинчен каланă май участокри уполномоченнăй тĕслĕхсем илсе кăтартать.

— Акă, март уйăхĕнче, пĕр ирхине ирех бригадмилец Леонид Краснов поселокри пушар деповĕ çумĕнчи сарай маччи çинче темле çын пуррине асăрханă та ман пата чупса килчĕ. Ман патра шăпах çынсем пурччĕ. Эс кай, сăнаса тăр, эп халех пыратăп, терĕм çакна. Анчах Краснов каялла пынине курсанах, çав палламан çын сарай çинчен сиксе анса урăх урамалла тарма тытăннă. Эпĕ крыльца çине тухнăччĕ кăна — Краснов мана чĕнсе кăшкăрнине илтрĕм. Пăхатăп — вăрман еннелле кăвак тумлă çын чупать, ун хыççăн — манăн бригадмилец ыткăнса пырать. Манран чылай инçеччĕ ĕнтĕ вĕсем — пĕр икçĕр метр та пулĕ. Эпĕ те чупрăм çаксем хыççăн. Неушлĕ тартатпăр ку çынна? — тесе пăшăрханатăп. Унччен те пулмарĕ — бригадмилец хуса çитрĕ çав таркăна, пĕррех чышса ӳкерчĕ те утланса ларчĕ...

Паллă вăрă пулнă лешĕ, ăна тахçанах шыранă. Ун çумĕнче эпир утмăла яхăн тĕрлĕ çăра уççисем тупрăмăр. Пирĕн пата вăл магазин çаратас шутпа килнĕ пулнă. Бригадмилец сыхлăхне пула, пĕр ирсĕртен тасалтăмăр вара...

Участокри уполномоченнăйăн ĕç питĕ нумай. Обществăри йĕркесене пăсакансемпе те кĕрешмелле, паспорт режимне пăхăнманнисене те йĕркене кĕртмелле, çул çинче кирлĕ пек тĕрĕс çӳремен шоферсене те асăрхаттармалла, виçине пĕлмесĕр ĕçсе ӳсĕрлекенсене те урамра йăвалантарма юрамасть, тата ытти те, тем те пĕр.

— Тепĕр чух çав тери кĕтмен япаласем сиксе тухаççĕ,—тет Гурий Яковлевич.—Акă, нумаях та пулмасть, урампа пыратăп. Мана хирĕç пысăк автобус кĕрлеттерсе килет. Пăхатăп — автобус çулĕ çине таçтан пĕр виç-тăват çулхи ача чупса тухрĕ те варрине çитсен лап! ӳкрĕ. Автобус малтанхи пекех хăвăрт килет... Шоферĕ малта мĕн пуррине те курмасть, темскер. Ачана таптассăнах туйăнса кайрĕ. Алла тăрат та — тап-сик машинăна хирĕç. Чарăнчĕ. Эпĕ кăшкăрса макăракан ачана çул çинчен йăтса тухрăм та: аннӳ ăçта? тесе ыйтатăп. Каламасть, тата хытăрах çухăрать кăна. Çынсем пухăнма пуçларĕç. Кам ачи? Пĕлмеççĕ. Автобус чарăннă тĕле илсе пырсан тин пĕр хĕрарăм палласа илчĕ — çавсен, терĕ. Йăтса кайса патăм вара ачана, мĕн тăвассу пур. Паллах, амăшне хытă асăрхаттарса хăвартăм ачине пăхма пĕлменшĕн...

Тĕрлĕ йĕркесĕрлĕхсем, иртĕнекенсем, пурнăç

йёркине пӑсакансем сахалланса, пӗтсе пыччӑр, тесе, уполномоченнӑйӑн хӑйӗн участокӗнче пуранакансем хушшинче нумай ӗҫлемелле, калаҫусем ирттермелле, законсене ӑнлантарса памалла. Аслӑ лейтенант Кульков ҫав ӗҫсене тивӗҫлипе туса пырать. Паллах, пӗччен мар. Активпа, поселок Совечӗн депутачӗсемпе, комсомолецсемпе пӗрле еҫлет вӑл. Куллен, ҫине тӑрса ӗҫлет. Ҫавӑнпа унӑн пурте йӗркеллӗ. Тепӗр чухне преступленисем пулсан та, вӗсене тӑвакансем часах лекеҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсемпе кӗрешме халӑх хӑй пулӑшса пырать. Преступниксем валли ҫул ҫук кунта! Ҫавӑнпа та ӗнтӗ ҫак участок йӗркелӗх тӗлӗшӗнчен хулари чи лайӑх участок пулса тӑрать, ҫавӑнпах кунта ӗҫлекен аслӑ лейтенант Гурий Яковлевич Кулькова «За отличную службу» медальпе наградӑламалла тунӑ.

Участокри йӗркелӗхшӗн чунтан тӑрӑшса, хӑйӗн ӗҫне тӗплӗ туса пынӑшӑн ана Чапаевски поселокра пурӑнакан халӑх та хисеплет, яланах ырӑпа асӑнать. Ку вара — нимрен те хакли.

## ТУПМАЛЛИ

### Шупашкарта, Атăл хĕрринче


Михаил Степанов, строитель . . . . . . 15
Ольтикасси хĕрĕсем . . . . . . . . 44
Ёмĕт тулать... . . . . . . . . . . 57


### Пурин те пĕр тĕл


Хурçă çулсем çинче . . . . . . . . 71
Арктика ыйтать (Н. Герасимов çырнă) . . 90
Акучари садсем . . . . . . . . . 98
Автобус «ЧН-79-80» . . . . . . . . 112
Çĕр те çитмĕл роль . . . . . . . . 121
Участокра йĕркеллĕ... . . . . . . . 131



*АГАКОВ*
*Леонид Яковлевич*
**Энтузиасты**
Очерки
На чувашском языке
Чувашгосиздат—1958
Оформление *А. Иконникова.*

Редактор *П. Денисов* Худ. редактор *Л. Маевская*
Тех. редактор *А. Краснов* Корректор *Ю. Миронова*

НТ 00123. Сдано в набор 1.XI-1957 г. Подписано к печати 17.1-1958 г. Формат $70 \times 92^1/_{32}$. Объем 5,11 п. л. Уч.-изд. лис. 3,80. Тир. 5 000 экз. Цена 2 руб. 20 коп. Заказ № 3250.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР, г. Чебоксары, Володарского 5, Дом печати.

Цена 2 руб. 20 коп.